Ы
4-36427

Николай ЫДАРАЙ

# АЛФАВИТ-АСĂМА ВИТ

ВĂТАМ ШКУЛСЕМ ВАЛЛИ

альная библиотека ЧР
036427

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КЁНЕКЕ АВТОРĔ —
Васильев Николай Васильевич



Литература псевдонимĕ —
Николай Ыдарай

К К 81
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

Николай ЫДАРАЙ

# АЛФАВИТ— АСĂМА ВИТ

Вăтам шкулта
вĕренекенсем валли

кр
ПРОВЕРЕНО 20

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1998

К 81 Чув - 920

УДК 894.344
ББК 84 Чув 7-5
Ы 99

Ч-36427

ПРОВЕРЕНО
2004

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

**Ыдарай Н.В.**

Ы 99 Алфавит — асӑма вит. Ӑславсемпе вӑййӑсем, калавсемпе сӑвӑсем, тупкавсемпе юмахсем. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1998. — 159с.

Кӗнекене пуҫламӑш тата аслӑрах классенче вӗренекен шкул ачисем валли хатӗрленӗ. Унпа ачасен ашшӗ-амӑшӗсем те, воспитательсемпе учительсем те хӑйсен кулленхи ӗҫӗнче усӑ курма пултараҫҫӗ.

УДК 894.344
ББК 84 Чув 7-5

Ы $\frac{4803710202-35}{М\ 136\ (03-98)}$ 33-98

ISBN 5-7670-1028-5

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1998

## АЛФАВИТ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Аа | Ӑӑ | Бб | Вв | Гг | Дд | Ее | Ёё |
| Ĕĕ | Жж | Зз | Ии | Йй | Кк | Лл | Мм |
| Нн | Оо | Пп | Рр | Сс | Çç | Тт | Уу |
| Ӳӳ | Фф | Хх | Цц | Чч | Шш | Щщ | |
| Ъъ | Ыы | Ьь | Ээ | Юю | Яя | | |

## АЛФАВИТ ВУЛАССИ

**А—аа*** **Ӑ—ӑӑ** **Б—бӑ** **В—вӑ** **Г—гӑ** **Д—дӑ** **Е—йэ** **Ё—ё(йо)** **Ĕ—ĕĕ** **Ж—жӑ** **З—зӑ** **И—ии** **Й—йӑ** **К—кӑ** **Л—лӑ** **М—мӑ** **Н—нӑ** **О—оо** **П—пӑ** **Р—рӑ** **С—сӑ** **Ç—çӑ** **Т—тӑ** **У—уу** **Ӳ—ӳӳ** **Ф—фӑ** **Х—хӑ** **Ц—цӑ** **Ч—чӑ** **Ш—шӑ** **Щ—щӑ** **Ъ**—хытӑлӑх палли **Ы—ы** **Ь**—çемçелĕх палли **Э—ээ** **Ю—йу** **Я—йа**

* аа — а сасӑ паллине пусӑмласа, тӑсарах вуламалла.

## АЛФАВИТ ВЫРНАҪӐВӖ

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| А—1 | Ӑ—2 | Б—3 | В—4 | Г—5 | Д—6 |
| Е—7 | Ё—8 | Ӗ—9 | Ж—10 | З—11 | |
| И—12 | Й—13 | К—14 | Л—15 | | |
| М—16 | Н—17 | О—18 | П—19 | | |
| Р—20 | С—21 | Ҫ—22 | Т—23 | | |
| У—24 | Ӳ—25 | Ф—26 | Х—27 | | |
| Ц—28 | Ч—29 | Ш—30 | Щ—31 | | |
| Ъ—32 | Ы—33 | Ь—34 | Э—35 | | |
| Ю—36 | Я—37 | | | | |

## АЛФАВИТ ҪЫРАССИ

*Аа Ӑӑ Бб Вв Гг*
*Дд Ее Ӗӗ Жж Зз*
*Ии Йй Кк Лл Мм*
*Нн Оо Пп Рр Сс*
*Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ Фф*
*Хх Цц Чч Шш Щщ*
*ъ Ыы ь Ээ Юю Яя*

## ВЫРĂС АЛФАВИЧĔ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Аа | Бб | Вв | Гг | Дд | Ее | Ёё |
| Жж | Зз | Ии | Йй | Кк | Лл | Мм |
| Нн | Оо | Пп | Рр | Сс | Тт | Уу |
| Фф | Хх | Цц | Чч | Шш | Щщ | |
| Ъъ | Ыы | Ьь | Ээ | Юю | Яя | |

## ВЫРĂС АЛФАВИТНЕ ВУЛАССИ

| | | | |
|---|---|---|---|
| А—а | Б—бэ | В—вэ | Г—гэ |
| Д—дэ | Е—йэ | Ё—йо | Ж—жэ |
| З—зэ | И—ии | Й—и краткое | |
| К—ка | Л—эль | М—эм | Н—эн |
| О—о | П—пэ | Р—эр | С—эс |
| Т—тэ | У—у | Ф—эф | Х—ха |
| Ц—цэ | Ч—чэ | Ш—ша | Щ—ща |
| Ъ—твердый знак | | Ы—ы | |
| Ь—мягкий знак | | Э—ээ | Ю—йу |
| Я—йа | | | |



**Алфавитри** пĕрремĕш сасă палли — **А.**

Ăна чăваш çырулăхне И. Я. Яковлев 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: аа.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

**А** — çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *аван, акăш, алса, ама, ана, анне, атте, ача, ашак...*

сăмах варринче: *бак, валак, калак, касă, каçă, лав, мамăк, лар, лаша...*

сăмах вĕçĕнче: *ака, ăса, калта, лаша, мунча, пахча, сăмала, çырла...*

**Шӳтлевсем**:

Ав-ав-ав, вĕрмĕшет анчăк çури.
Ан-ан-ан, Ануш, пăрăн ман умран.
Ай-ай-ай, айăп ан ту, Микулай.
Ах-ах-ах, ахлатса выртать Уках.

**Ытарлăхсем:**

1. «А» сас палли çумне икс хушсан мĕн пулать? *(Ахлату пулать. А + х = ах.)*
2. Ачасене а калама кам вĕрентет? *(Врачсем вĕрентеççĕ. Шӳт.)*
3. Ашлă выльăхсем мĕн ятлă? *(Ашак, лаша. Вĕсенче «аш» сăмах пур.)*

**Ятарлăхсем:**

Аваллăхсăр паянлăх çук, паянлăхсăр пуласлăх çук.
Авалхи сăмах — авăрлă çăмах.
Авăнакан хулă хуçăлмасть, авăнманни хуçăлать.

# АЛФАВИТ — АСĂМА ВИТ — I

Вăйă — шутлав

Алфавит вăййине выляма лайăх пултăр тесен çак страницăри ӳкерчĕке пысăклатса стена çумне çакмалла. Вылякансен указка тытса алфавит йĕркипе ӳкерчĕк çинчи сасă паллисене кăтартса тухмалла. Кам маларах çак ĕçе вĕçлет — çав çĕнтерет. Кам маларах ĕлкĕрнине сехетпе тĕрĕслесен те юрать.

Алфавит вăййине ансатлăхран пуçламалла, аслăрах ачасемпе вылянă чухне çак вăййа кăткăслатса пымалла.

Ачасем, атьăр алфавит вăййине вылятпăр!




— Алфавит экранĕ çинче мĕнсем çук?

— Çемçелĕх паллипе хытăлăх паллине экран çине кĕртмен, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсем тĕллĕн уйрăм сасса пĕлтермеççĕ, ытти сасăсен çемçелĕхне е хытăлăхне çеç палăртаççĕ.

— Тата мĕнсем çук? Калăр-ха.

*(Кивĕ алфавитри çемçе сасă паллисем: ль, нь, ть, чь çук.)*

# АЛФАВИТ — II

Вăйă

**Асăрхав:** вăййăра вĕр çĕнĕ сăмах тума, кивĕ сăмахпа усă курма тата урăх чĕлхери сăмахпа та кирлĕ пек усă курма юрать.

1. А - - - - А — Александр Кăлкан çырнă драмăри хĕрçын сăнарĕ.
2. Ă - - - - Ă — Авалхи асамлăхсене пĕлекен çын.
3. Б - - - - Б — Африкăра ӳсекен капмар йывăç.
4. В - - - - В — Пĕтеслĕхе пĕлтерекен сăмах.
5. Г - - - - Г — Георгий ятăн эрменле варианчĕ.
6. Д - - - - Д — Отчетлă пухура каламалли сăмах.
7. Е - - - - Е — Ем-ешĕл тĕслĕ ӳсевлĕх, вырăсла — зелень.
8. Ё - - - - Ё — Вырăслатса каланă хушма сăмах.
9. Ĕ - - - - Ĕ — Ачасене сĕт ĕçтермелли япала.
10. Ж - - - - Ж — Жанрсен режиссерĕ.
11. З - - - - З — Хуçалăх пуçлăхĕ.
12. И - - - - И — Хĕрача хитрелĕхне палăртакан ят.
13. Й - - - - Й — Йăлтăртатса тăнине пĕлтерекен сăмах.
14. К - - - - К — Пуçа тăхăнма хатĕрленĕ япала.
15. Л - - - - Л — Пĕчĕкленме хушакан сăмах.
16. М - - - - М — Вырăсларан чăвашланса кĕнĕ арçын ячĕ.
17. Н - - - - Н — Авалхи грек мифологинчи тинĕс патши.
18. О - - - - О — Якут халăхĕн паттăрла эпосĕ.
19. П - - - - П — «Паллатăп» сăмахăн кĕске форми.
20. Р - - - - Р — А. С. Пушкин çырнă юмахла поэмăри сăнар.
21. С - - - - С — Африкăри питĕ пысăк вĕçмен кайăк.
22. Ç - - - - Ç — П. Н. Кузьминăн литература псевдонимĕ.
23. Т - - - - Т — Кăнтăр енче пурăнакан мăн кăткă.
24. У - - - - У — Вăтам Азири авалхи патшалăх.
25. Ӳ - - - - Ӳ — Ĕçлес килмен туйăма парăнни.
26. Ф - - - - Ф — А. С. Пушкин поэминчи паттăрсенчен пĕри.
27. Х - - - - Х — Ĕмĕр симĕс вăрман лаптăкĕ.
28. Ц - - - - Ц — Ц-па çырнă сăмах çаврăмĕ.
29. Ч - - - - Ч — Тормоз сăмахăн чăвашла куçăмĕ.
30. Ш - - - - Ш — Муркашпа Шупашкар енчи ялсем.
31. Щ - - - - Щ — Щ-па тунă сăмах çаврăмĕ.
32. Ы - - - - Ы — Ыхраллă вырăн (Щамалы тĕслĕхĕпе тунă).
33. Э - - - - Э — Аваллăхран упранса юлнă хĕрçын ячĕ.
34. Ю - - - - Ю — Юрăсенче хушса юрламалли чĕвĕ сăмахĕ.
35. Я - - - - Я — Николай Ыдарай çырнă юмах ячĕ.

**Тупсăмĕ:**

1. Анисса 2.Ăрăмçă. 3. Баобаб. 4. Вĕçлев. 5. Геворг. 6. Доклад. 7. Ешĕлхе. 8. Ёжиньё. 9. Ёмкĕчĕ. 10. Жанреж. 11. Завхоз. 12. Илемпи. 13. Йăлкай. 14. Калпак. 15. Лутрал. 16. Макçăм. 17. Нептун. 18. «Олонхо». 19. Паллап. 20. Ратмир. 21. Страус. 22. Çăлкуç. 23. Термит. 24. Урарту. 25. Ўркенў. 26. Фарлаф. 27. Хырлăх. 28. Цеппец. 29. Чаркăч. 30. Шарпаш. 31. Щиттищ. 32. Ыхралы. 33. Эрминэ. 34. Юлаалю. 35. Ярхаля.

## АННЕ ТАТА ÇĔРШЫВ

Анне пĕрре çеç çĕр çинче,
Пĕр-ик сăмах чуна выртмалăх:
Анне — ыр чун, анне — ынатлăх
Теес килет ман ун çинчен.

Анне пире пăхса ўстернĕ,
Вăл панă пурнăç ăшшине,
Ыр тĕслĕхпе чуна витернĕ,
Ăс-хал пилленĕ ĕмĕрне.

Анне тесе тата калатпăр
Кун курнă сумлă Çĕршыва.
Вăл çеç парса тăрать хăват,
Анне пекех ăна саватпăр.

Çак ик сăмах пĕр пек янравлă,
Çак ик сăмах пĕр ярăмра,
Çак ик сăмах ялан мухтавлă,
Çак ик сăмах ялан асра.

Анне тесен умра куратпăр
Тăван Çĕршывăн илемне,
Çĕршыв тесен чунпа туятпăр
Тăван Аннемăр ытамне.

## АТТЕ-АННЕ

Аксиома

Анне те пĕрре пулать,
Атте те пĕрре пулать.
Аттепе анне пире
Пурăнма хушать пĕрле.

## АЛФАВИТ — III

Вăйă

1. - - - А - - - Вырăс писателĕ, «Аленький цветочек» авторĕ.
2. - - - Ă - - - Иван Мучи çырнă юмахри хĕрçын сăнарĕ.
3. - - - Б - - - Чăвашри малтанхи çыравçăсенчен пĕри.
4. - - - В - - - Чăваш культурин патриархĕ, çутта кăлараканĕ.
5. - - - Г - - - Кузьма Турханăн чăн хушамачĕ.
6. - - - Д - - - Чăваш поэчĕ.
7. - - - Е - - - Вырăс совет писателĕ.
8. - - - Ё - - - Вырăссен паллă киноартистки.
9. - - - Ĕ - - - И.Д.Кузнецов критик псевдонимĕ.
10. - - - Ж - - - Чăвашсен паллă журналисчĕ.
11. - - - З - - - ОРТ тележурналисчĕ, зоолог.
12. - - - И - - - Грузинсен паллă писателĕ, поэт.
13. - - - Й - - - Америкăри паллă писатель-романист.
14. - - - К - - - Чăваш поэтесси.
15. - - - Л - - - Акăлчан писателĕ, «Магули» авторĕ.
16. - - - М - - - Пушкăртсен паллă писателĕ.
17. - - - Н - - - Чăвашсен паллă прозаикĕ.
18. - - - О - - - Дон казакĕсен паллă писателĕ.
19. - - - П - - - Митта Петĕрĕ çырнă повеçри арçын сăнарĕ.
20. - - - Р - - - Васнецов ӳкернĕ виçĕ паттăртан пĕри.
21. - - - С - - - Тĕнчипе паллă вырăс писателĕ.
22. - - - Ç - - - Тăван мар анне.
23. - - - Т - - - Чăваш сăвăçи.
24. - - - У - - - Чăваш поэчĕ, философ.
25. - - - Ӳ - - - Арпалăхăн тепĕр тĕрлĕ ячĕ.
26. - - - Ф - - - Украина писателĕ.
27. - - - Х - - - XIX-мĕш ĕмĕрти вырăс писателĕ, поэчĕ.
28. - - - Ц - - - И. С. Тургенев çинчен çырнă повесть авторĕ.
29. - - - Ч - - - Паллă совет киноартисчĕ.
30. - - - Ш - - - Владимир Ухлин чăн хушамачĕ.
31. - - - Щ - - - Вырăс поэчĕ.
32. - - - Ы - - - Чăвашсемпе туслă тутар писателĕ.
33. - - - Э - - - США писателĕ.
34. - - - Ю - - - Чăвашсен паллă критикĕ.
35. - - - Я - - - Вырăссен тĕнчипе паллă юрăçи.

**Тупсăмĕ:**

1. Аксаков. 2. Таварпи. 3. Трубина. 4. Яковлев. 5. Сергеев. 6. Сандров. 7. Ангелов. 8. Зелёная. 9. Тимĕрçĕ. 10. Вражкин. 11. Дроздов. 12. Табидзе. 13. Драйзер. 14. Волкова. 15. Киплинг. 16. Нигмати. 17. Алендей. 18. Шолохов. 19. Крепков. 20. Добрыня. 21. Толстой. 22. Амаçури. 23. Петтоки. 24. Исмуков. 25. Арпӳкли. 26. Дрофань. 27. Апухтин. 28. Гаецкий. 29. Крючков. 30. Плешков. 31. Плещеев. 32. Латыпов. 33. Хоуэллс. 34. Канюков. 35. Шаляпин.

## АЛĂК

Акă алăк,
Унăн ячĕ — çут çанталăк:
Çав алăкран кĕрен —
Тем те илтен,
Тем те куран,
Тем те пĕлен —
Илтме,
Курма,
Пĕлме çех
Ан ӳркен!
Ан ӳркен!
Ан ӳркен!

## АЛĂК ТĂВАТЬ...

Ăслай

Алăк тăвать алăкçă,
Ăсан тытать ăсанçă,
Вăрман касать вăрманçă,
Кайăк тытать кайăкçă,
Калак тăвать калакçă,
Кашăк тăвать кашăкçă...
Калăр-халĕ, ачасем,
Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем?

**Ыйту явапĕ:** Ĕç тăваççĕ.

## АЛĂК УÇМА

Алăк уçма ал кирлĕ,
Алăк хупма хал кирлĕ.
Ачапчана каç-ирлĕ
Аталанма мĕн кирлĕ?

**Ыйту явапĕ:** Вăхăт кирлĕ.

## АНТОНИМ

Антоним — пĕлтерĕш енĕпе хире-хирĕç сăмах е сăмахсен йышĕ. Вырăсла-чăвашла сăмахсем те пĕлтерĕшне кура антоним пулма пултараççĕ. Сăмахран: ответ — ыйту.

## АНТОНИМ

Вăйă

Алфавит йĕркипе антоним сăмахĕсене мăшăрăн-мăшăрăн çырса тухмалла. Кам маларах ĕлкĕрет — çав вăййăра çĕнтерет. Тĕслĕх вырăнне илсе кăтартнă мăшăр сăмахсем:

Арçын — хĕрçын
Ăшă — сивĕ
Бруто — нетто
Васкав — тăхтав
Герой — мĕскĕн
Дебет — кредит
Епрев — чĕмсĕр
Ёршик — чĕптĕк
Ĕнер — ыран
Журнал — хаçат
Запас — çуклăх
Имшер — самăр
Йăвă — сайра
Йывăр — çăмăл
Кантăр — пуса
Лайăх — начар
Мăнтăр — ырхан
Нумай — сахал
Ответ — ыйту
Пылак — йӳçĕ
Ретлĕ — ретсĕр
Сăпай — сĕмсĕр
Çемçе — хытă
Тӳпем — айлăм
Ултав — чăнлăх
Ӳркев — ĕçлев
Фронт — тыл
Хурлăх — ырлăх
Центр — хĕрри
Чалăш — тӳрĕ
Шăрăх — сулхăн
Щетка — киçтĕк
Эртел — хăрах
Юлташ — тăшман
Яшлăх — ватлăх

## АПĂРША

Шӳт

Ака çитсен Апăрша
Кайма тухнă Акташа.
Кайнă майăн Акташа
Çитсе лекнĕ Пакăша.

Вырма кунĕ Апăрша
Кайма тухнă Вăрмара.
Кайнă майăн Вăрмара
Пырса çитнĕ Вăрнара.

Калăм çитсен Апăрша
Кайма тухнă Канаша.
Кайнă майăн Канаша
Пырса тухнă Муркаша.

Утçи кунĕ Апăрша
Кайма тухнă Урпаша.
Кайнă майăн Урпаша
Пырса тухнă Юрпаша.

Явраç кунĕ Апăрша
Кайма тухнă Явăша.
Кайнă майăн Явăша
Пырса тухнă Ямаша.

Апăршана кураççĕ —
Куçран пăхса кулаççĕ:
Кулас килсен эс те кул —
Апăрша анчах ан пул!

## АПШУР

Шӳт

Апшур ача апшурах,
Апшурланать çапларах:
Ăсран тухса ăсла ĕçет,
Вĕтеленсе вĕтӳ çиет,
Йăваланса йăва çиет,
Пашка-пашка пăтă çиет,
Пĕркеленсе пĕлĕм çиет,
Саркаланса салма çиет,
Хашка-хашка яшка çиет,
Юрла-юрла юрма çиет,
Чармасан —
татах та çиет!

## АРÇУК

Шӳт

Айванрах ача Арçук
Пирĕн ялта пурччĕ:
Çитĕнсессĕн виçĕ çул
Хулара вăл пулчĕ.

Арçук килчĕ хуларан
(Эп ун чух унтаччĕ),

Кĕчĕ те вăл алăкран
Латсăр хăлаçланчĕ.

Алă пачĕ кулăшла —
Хăй пачах кулмарĕ,
Вырăслапа хутăшла
Калаçма пуçларĕ.

— Анне-мамка, сывă-и?
Где мой атте-паппă?
Давно было курманни —
Ну, давайте лаппă!

Малалла та çавăн пек
Мухтанса пуплерĕ,
Мăка вĕçлĕ чĕлхипе
Амăшне хистерĕ:

— Шапка-çĕлĕк çумĕнче
Йĕп-иголка пурччĕ —
Народ-халăх сисиччен
Тÿме лартса парччĕ.

Ун пăтравлă чĕлхинчен
Пĕтĕм халăх кулчĕ.
Нĕрсĕр кулăш ял çинче
Асăнмалăх юлчĕ.

## АСАМАТ

Асамат кĕперĕ
Асăма килейрĕ.
Асамат вăл авăк —
Куçпа пăхма савăк.

Асамат вăл карăм —
Нумай тĕслĕ ярăм.

Кăвак, кĕрен, сарă —
Пит илемлĕ сарăм.

Кĕрен, сарă, симĕс —
Сăррисем пĕр тикĕс.
Сарă, хăмăр, хĕрлĕ —
Кашни тĕс хăй тĕрлĕ.

Мĕн пур тĕссем çиччĕ —
Сăвăласа çитĕ!

## АСАННЕ

Шӳт



Ах, асанне, асанне,
Аса ил-ха иртнине,
Аса ил-ха пӗрех май —
А-сем ӑҫта пит нумай?

Ачасем, асанне вырӑнне ҫак ыйту ҫине кам маларах хуравлама пултарать?

Ыйту хуравӗ: «А» сасӑ паллисем «алӑк» сӑмахра пит нумай. А + лӑк = Алӑк.

## АХӐРНИ

Ыйту

Арӑслан та ахӑрать,
Арҫури те ахӑрать,
Аҫтаха та ахӑрать —
Ахӑрнинчен кам хӑрать?

**Ыйту тупсӑмӗ:**
Кам шиклӗ — ҫав хӑрать.

2. Заказ № К-1853.

## АННЕ МАНА

Ача чухне анне мана:
— Ансат ҫинчен ман терĕ,
Ансат кĕтсе ларакана
Асаплăх хуплать терĕ.

Ача чухне анне мана:
— Канлĕх ҫинчен ман терĕ,
Канлĕх кĕтсе ларакана
Кансĕрлĕх хуплать терĕ.

Ача чухне анне мана:
— Малтан мала ут терĕ,
Малтан мала утакана
Мал ĕмĕт туртать терĕ.

Ача чухне анне мана:
— Туспа тус пек пул терĕ,
Туспа тус пек пурнакана
Туслăх пулăшать терĕ.

## АТТЕ МАНА

Аванлăх

Атте мана пăхăр укҫа
Памастăп терĕ,
Пăхăр укҫа пăхăнтарма
Пултарать терĕ.

Атте мана кĕмĕл укҫа
Памастăп терĕ,
Кĕмĕл укҫа кĕвĕҫтерме
Кĕрĕшет терĕ.

Атте мана ылтăн укҫа
Памастăп терĕ,
Ылтăн укҫа ылхан тĕпне
Ывăтать терĕ.

Атте мана ырă туйăм
Пиллетĕп терĕ,
Ырă туйăм ылтăнран та
Хаклăрах терĕ.

## АÇТАХА

Авал тенĕ кунсенче,
Асран тухнă çулсенче
Пулнă теççĕ Аçтаха...
Аçтахасем ăçта халь?

**Ыйту явапĕ:** Асамлăх çĕршывĕнче, тепĕр тĕрлĕ каласан — юмахра.

## АШАК

Ашак айван теççĕ те —
Айван мар вăл пĕрре те,
Пĕрре такăннă çĕрте
Такăнмасть вăл ĕмĕрте!

## АШАК АШШĔ

Ыйтусем

Авалçă ыйтать — Ашак ашшĕ кам пулнă?
*(Чурăс ашак.)*
Ашак какайĕ тесе мĕнле каламалла?
*(Ашак ашĕ.)*
Ашак мĕн тума хушать?
*(Аш акма хушать: Аш + ак = Ашак.)*
Ашак ячĕ мĕн çинчен калать?
*(Аш пурри çинчен калать: Аш + ак = Ашак.)*
Ашак умĕнче мĕн пур?
*(Ашак сăмахра «аш» сыпăк пур. Аш + ак = Ашак.)*
Ашак хăçан алăк çумĕнче пулать?
*(Иккĕмĕш «а» сас паллин тăррине лартсан.)*
Ашак хăçан ял ячĕ пулать?
*(Ятне кутăнла вуласан: Ашак — Каша.*
*Каша — Тутарстанри чăваш ялĕ.)*
Ашак ял ячĕ пултăр тесен мĕн тумалла?
*(Сылтăмран сулахаялла вуламалла.)*

## АШАКПА АШАК

Шӳт

Ашакран ыйтать Ашак:
— Кам çӳллĕрех Ашакран?
Ашака калать Ашак:
— Çĕклемелли кран!

4-36427
Национальная библиотека Чувашской Республики

2. Заказ № К-1453.



**Алфавитри** иккĕмĕш сасă палли — Ă.

Ăна çĕнĕ çырулăха 1873 çулта кĕртнĕ. 1871—1872 çулсенче Ă сасă палли вырăнне хытăлăх паллипе (ъ) усă курнă.

Вăл çапла вуланать: ăă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Ă** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *ăса, ăслă, ăвăс, ăман, ăсан, ăшă, ăшалу, ăшталану...*

сăмах варринче: *вăрман, кăмпа, тăван, хăлат, шăналăк, шăпăрлан, шăтăк, чăртăк, явлăк...*

сăмах вĕçĕнче: *вулă, пулă, сулă, çапă, çупкă, карланкă, курланкă, хуралçă, шаланкă, шăркалчă, шăчă...*

**Шӳтлевсем:**

Ăр-ăр-ăр, ăрлатма пĕлмест вăкăр.
Ăс-ăс-ăс, ăвăс çинче пĕр сăвăс.
Ăç-ăç-ăç, ăçта-ши хура пăрăç?
Ăш-ăш-ăш, ăшăтать чуна кулăш.

**Ытарлăхсем:**

1. Ăвă мĕнпе ытарлă? *(Арабла та, чăвашла та пĕр пекех вуланать.)*

2. «Ă» камăнне ăнкартсан мĕн пулать? *(Ăман пулать. Ă + ман = Ăман.)*

**Ятарлăхсем:**

Ăспа çĕнме май çуккине пăспа çĕнейместĕн.
Ăсталăх туянма та ăс кирлĕ.
Ăсли хăйне айăплать, ăсчах çынна айăплать.

## ĂРАХМАН

Шӳт

Ăслă-пуçлă Ăрахман
Ăсла ĕçме юратман.
Ăсла ĕçме тытăнсан
Ăш каниччен чарăнман.

Ăслă-пуçлă Ăрахман
Ăсчахланма юратман.
Ăсчахланма тытăнсан
Ăна никам чарайман.

Ăслă-пуçлă Ăрахман
Çĕнĕ кĕпе юратман.
Çĕнĕ кĕпе тăхăнсан
Çĕтĕлмесĕр пăрахман.

Ăслă-пуçлă Ăрахман
Эрлĕ пулма юратман.
Пĕр эрленме тытăнсан
Эрнесĕр те чарăнман.

Ăслă-пуçлă Ăрахман
Ятлаçма пит юратман.
Пĕр ятлаçма тытăнсан
Ят çĕриччен чарăнман.

Ай-яй-яй!
Ай-яй-яй!
Ай-яй-яй!

## ĂСАН

Ăсан ăслă теме çук,
Ăсан ăссăр теме çук.
Ăс пулнăран пусĕнче
Ăсан пур-ха çĕр çинче.

## ĂТĂР

Ыйту

Ăтăр пултăр улттăра —
Ăс кĕрес çук Ăтăра,
Ăтăр çиттĕр вăтăра —
Ăс кĕрес çук Ăтăра.
Мĕншĕн?

**Ыйту хуравĕ:** Ăтăр ăспа мар, инстинктпа пурăнать.

## ĂМАН

Шӳт

Айван пуҫлă Ăмана
Ах мĕн тăвас ман ăна? —
Ҫумăр ҫусан ирхине
Тухса выртать ҫĕр ҫине.

Вилет вĕт, пĕтет вĕт,
Хĕвел ҫинче типет вĕт! —
Айван пуҫлă Ăмана
Мĕн тăвас-ха ман ăна!?.

## ĂРАМАН

Ăраман —
Ăслă ҫынран хăраман,
Ăсчах ҫынна курсанах
Уйрăлма васкать часрах.

## ĂСАН

Шӳт

Пăхăр-халĕ Ăсана —
Ăса тума ăмсанать.
Ăса тăвас вырăнне
Тирпейлесчĕ йăвине.

Пăхăр-халĕ Ăсана —
Пăхăр тупма ăмсанать.
Пăхăр тупас вырăнне
Тăрантасчĕ чĕппине.

## ĂСАНПА ЧĔППИ

Юптару

Чĕппине калать Ăсан:
— Кунсерен, пепкем, ăслан —
Ҫамрăкла ăс пухмасан
Йывăр пулĕ ватăлсан.

# ӐСЛАЙСЕМ

Ӑслайсем — ӑсласа каланӑ сӑмахсем. Вӗсен шутне калашсем те, тенешсем те кӗреҫҫӗ. Калашсем — ӑс парса вӗрентсе каланисем, тенешсем — илемлетсе, хитрелетсе каланисем. Сӑмахран: Автан хакне хуҫи пӗлет. (Калаш.) Автан — авӑк хӳреллӗ тус. (Тенеш.)

Малалла калашсемпе тенешсене хӑвӑр тӗллӗн уйӑрма вӗренӗр.

**А**

Алфавит — асӑма вит.
    Ӑслайсӑр ӑсталӑх ҫук.
Бакра тӑрӑ шыв пултӑр.
    Вӗренмесӗр вӗрен те явайместӑн.
Герб — патшалӑх символӗ.
    Домино — усӑллӑ вӑййӑ.
Ерипен утсах Етӗрнене ҫитетӗн.
    Ёлка — ачасен хӗллехи уявӗ.
Ёҫлеме пӗлни пурне те кирлӗ.
    Журнал усси питех те пысӑк.
Зинукран Зинаида пулать.
    Илем ҫине пӑхасах килет.
Йӗкепе ан выля — йӗк тухать.
    Кӗнеке — пархатарлӑ вӑй.
Лайӑххине пурте ырлаҫҫӗ.
    Малта пыракан маттур пулать.
Ним ҫукран нимӗр тенӗ пек.
    Океан — юхан шывсен мӑн ашшӗ.
Пӗлӳ пулсан пурте пулать.
    Рак чӑвашла хӗскев пулать.
Сӑмах тени сӑнарлӑ пултӑр.
    Ҫурма пӗлӳ — тулли ӑс мар.
Тет хыҫӗнче терт нумай тет.
    Усӑллӑ ӗҫ нихҫан та ҫухалмасть.
Ӳркенни ӳкӗнтерет ӳлӗмрен.
    Фото ҫинчи пек хитре сӑн.
Халӑх ӗҫӗ яланах хисеплӗ.
    Цирк — тӗлӗнкӗҫ керменӗ.
Чӗрӗп чӗппин те чӗри пур.
    Шухӑшласа пӑхни сиенлӗ мар.
Щит — хӳтлӗх символӗ.
    Ырӑ ҫын ӗҫӗ ылтӑнран мала.
Элек этем ятне варалать.
    Юрӑ юрлама кӗвӗллӗ сас кирлӗ.
Ялавҫӑ яланах малта пулать.

**Я**

# Б

**Алфавитри** виççĕмĕш саса палли — **Б**.

Ăна чăваш алфавитне 1933 çулта кĕртнĕ, унпа урăх чĕлхери сăмахсене çырнă чухне кăна уса кураççĕ.

Вăл çапла вуланать: бă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Б** — çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *бал, бант, балкон, баян, балалайка, бидон, булка, бульвар, бульдозер, бутерброд...*

сăмах варринче: *абажур, абрикос, кабинет, кубик, камбала, Чебурашка...*

сăмах вĕçĕнче: *араб, герб, клуб, краб, куб, турксиб, штаб, микроб, масштаб...*

**Шÿтлевсем:**

Ба-ба-ба, балкон çинче труба.
Би-би-би, билет илтĕм тет Эльби.
Бо-бо-бо, Борис валли ку альбом.
Бу-бу-бу, Буфетра пуçланнă бум. *(Шăв-шав.)*

**Ыталăхсем:**

Балда мĕнле тĕлĕнет? *(Ба-а-а! —тесе тĕлĕнет Балда.)*

Барон Брамбеус — камăн псевдонимĕ? *(О. Сенковский писатель псевдонимĕ.)*

Бим тата Бом — камсем вĕсем? *(Бим тата Бом — мăшăрлă клоунсем.)*

**Ятарлăхсем:**

Балда — А.С.Пушкин юмахĕнчи сăнар, Балдай — унăн чăвашла куçăмĕ. *(А. Афанасьев.)*

Эпĕ Балда мар, эпĕ тахçанах Балдай. *Шÿт.*

## БАМБУК

Бамбук ӳсет кунӗпе,
Бамбук ӳсет ҫӗрӗпе.
Бамбук тирӗ — тимӗр пек,
Бамбук ӳчӗ — шăмă пек.

## БОРКИМ

Шӳт

Ман ыйту кăштах ула —
Борким тени мӗн пулать?
Арабла вулас пулсан
Ун ятне ним мар тупан.

**Шӳтле ыйту явапӗ:** борким — микроб.

## БУРАТИНО

Буратино акă вăл,
Буратино ҫакă вăл.
Буратино ăслăскер —
Буквăсемпе туслăскер.

Буратинăпа паллашнă пулсан ҫак ыйтусем ҫине хуравлăр-ха:

1. А.Н.Толстой ачасемшӗн мӗнле произведени ҫырнă?
2. А.Н.Толстой ачасене парнеленӗ пукане мӗн ятлă?
3. А.Н.Толстойран маларах йывăҫ пукане ҫинчен кам мӗн ҫырнă?
4. Алисăпа Базилио — камсем вӗсем?
5. Буратино ашшӗ мӗн ятлă пулнă?
6. Буратино малтан мӗн ятлă пулнă?
7. Буратино мӗнле майпа ҫуралнă?
8. Камсем вӗсем Арлекинпа Мальвина?
9. Карабас-Барабас кам вăл?
10. Тортилло кам вăл?
11. Чи малтанах Буратино кампа паллашнă?
12. Юмах мӗнпе вӗҫленет?

**Ыйтусен отвечӗсем:** 1. Ылтăн уҫкă е Буратино тем те пӗр курса ҫӳрени. 2. Буратино. 3. Итали писателӗ Карло Коллоди. 4. Алисăпа Базилио ултавҫăсем. 5. Карло атте. 6. Буратино малтан Пиноккио ятлă пулнă. 7. Буратино ҫуралман, ăна пуленкерен чутласа тунă. 8. Арлекинпа Мальвина театрта ӗҫлекен пуканесем. 9. Карабас-Барабас пукане театрне тытса тăракан хуҫа. 10. Ватăлса ҫитнӗ Шăмакка — тимӗр шапа. 11. Буратино чи малтан калаҫакан Шăрчăкпа паллашать. 12. «Юмах» тенӗ сăмах Х сасă паллипе вӗҫленет.



**Алфавитри** тăваттăмĕш сасă палли — **В.**

Ăна çĕнĕ çырулăха 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: вă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

**В** — çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *вак, вăл, виçе, вăлта, витре, вут, вутăш, вула, выля, выльăх, выçă...*

сăмах варринче: *авал, аван, автан, кавăн, кавир, кăвар, тăвар, тавах, тавтапуç, тавлашу...*

сăмах вĕçĕнче: *лав, калав, сыхлав, çăхав, хаклав, чухлав, шутлав, юлхав, ялав...*

**Шӳтлевсем:**

Ва-ва-ва, Валя тухрĕ уява.
Ви-ви-ви, вилкăсен те пур кĕвви.
Ву-ву-ву, вулама ансат сăвву.
Вы-вы-вы, Выл хĕрринче ак та выр.

**Ытарлăхсем:**

1. Валак варринче мĕн пур? *(Икĕ тĕрлĕ хурав: 1 — «Валак» сăмах варринче «ала» тени пур. «Валак» сăмах варринче «л» пур.)*
2. Вирьялсем вĕлтĕрене мĕн теççĕ? *(Вĕтрен теççĕ.)*
3. Виçмелли хатĕрте миçе сасă палли? *(Виçĕ сасă палли. Виçĕ Е = виçе.)*

**Ятарлăхсем:**

Ватлăхра «ват» пур, çавăнпа та йӳçĕ вăл.
Вĕренес тĕк вĕренес — вĕлтĕрен пек вĕтелес.
Выл — чăваш çĕршывĕнчи юхан шыв ячĕ.

## ВАЙПУТ*

Йăлхав**

Аслă Атăл çумĕнче,
Кĕçĕн Кĕтне хĕрринче
Пурăннă тет пĕр Вайпут.
Юмахлам-ха тепĕр хут.

(Юмах çĕнĕрен пуçланать, йăлăхса çитиччен тăсăлать.)

## ВĂКĂР

Вăлтав***

Вăкăр тăрать ирхине,
Вăкăр тухать çул çине,
Вăкăр утать тăвалла.
Вăкăр утать ăçталла?

**Вăлтав отвечĕ:** Паллах, малалла утать.

## ВĔРЕНŸ

Шӳт мар

Ăсла-ăсла
вĕренетпĕр вырăсла,
Ĕçле-ĕçле
вĕренетпĕр нимĕçле,
Мăрла-мăрла
вĕренетпĕр хамăрла,
Тарла-тарла
вĕренетпĕр тутарла,
Ташла-ташла
вĕренетпĕр чăвашла,
Уйла-уйла
вĕренетпĕр уйгурла...
Мĕншĕн тар тăкатпăр,
Мĕншĕн тăрмашатпăр?
Ма тесен пулас килет —
Полиглот****.
Вот!

---

* Вайпут — авалхи çар çынни, вырăсла — воевода.
** Йăлхав — йăлăхтаракан хайлав, юмах.
*** Вăлтав — вăлтса каланă е çырнă хайлав.
**** Полиглот — нумай чĕлхе пĕлекен.

## ВĂКĂРПА ЁНЕ

Калаçу

Вăкăр ыйтать Ёнерен:
— Эсĕ мĕскер ёнерен?
Ёне калать Вăкăра:
— Тĕрĕслетĕп кăкăра.

Вăкăртан ыйтать Ёне:
— Вăйханса кĕтен мĕне?
Вăкăр калать Ёнене:
— Кăмăл туртать ĕшнене!

## ВИХТĂР

Ваттине те вĕттине
Вихтăр питĕ култарать.
Вăл култарас енĕпе
Виçĕ норма тултарать.

* * *

Вăхăтлă, виçеллĕ, вырăнлă пул.

* * *

Васкаварлă пулăшни —
Виçĕ хутчен пулăшни.

* * *

Выляма пĕлни те вырăнлă ĕç.

## «В» ПИРКИ

Авалхи çынсем айванлăхна кăтартма ан тăрăш тенĕ. Çак чăнлăха тепĕр чухне чĕлхеçĕсем пĕлмĕш пулаççĕ. Пĕррехинче эпĕ пĕр чĕлхеçĕ патне кĕнеке парнелес кăмăлпа кĕтĕм. — Акă манăн çĕнĕ кĕнеке, эпĕ ăна «Сăпкавсем» тесе ят панăччĕ, анчах та ун пек тумарĕç. — Тĕрĕс тунă, — терĕ вăл, — мĕншĕн тесен в приставка глагол çумне кăна пĕрлешет, япала ячĕпе нихçан та пĕрлешместь.

Тавлашсах кайрăмăр. Кабинетран тухса кайма тиврĕ. Ах! терĕм вара. Вăйпа кама та пулин мĕн те пулин ăнлантарма пулатьши? Çук пулĕ, çын хăй ăнланасшăн мар пулсан — патша та, турă та ним те тăваймĕ. Çак ыйтупа ыйха манса асаплантăм.

Акă мĕн палăрчĕ: «в» сасă палли глаголсемпе кăна мар, япала ячĕсемпе те пĕрлешет. Чăвашсем çывăх çынна та, хамăнлăха пĕлтернĕ чухне те «в» хушса сăмахлаççĕ.

**Тĕслĕхсем:**

| | |
|---|---|
| Акка + в = аккав. | Ретле + в = ретлев. |
| Анна + в = Аннав. | Сăпка + в = сăпкав. |
| Анне + в = аннев. | Сăрла + в = сăрлав. |
| Атте + в = аттев. | Çăмха + в = çăмхав. |
| Ăслай + в = ăслав. | Çурла + в = çурлав. |
| Ваçça + в = Ваççав. | Çырла + в = çырлав. |
| Гера + в = Герав. | Тупкă + в = тупкав. |
| Епре + в = епрев. | Укçа + в = укçав. |
| Ĕçле + в = ĕçлев. | Уçка + в = Уçкав. |
| Женя + в = Женяв. | Ӳпке + в = ӳпкев. |
| Зина + в = Зинав. | Федя + в = Федяв. |
| Инке + в = инкев. | Хакла + в = хаклав (оценка). |
| Йыхăр + в = йыхрав. | Чухла + в = чухлав. |
| Курка + в = куркав. | Шутла + в = шутлав. |
| Лапша + в = лапшав. | Шӳтле + в = шӳтлев. |
| Лаша + в = лашав. | Эмине + в = Эминев. |
| Мишша + в = Мишшав. | Эрешле + в = эрешлев. |
| Наçта + в = Наçтав. | Юрла + в = юрлав (спевка). |
| Пакша + в = пакшав. | Ятла + в = ятлав. |
| Палля + в = Палляв. | Яшка + в = яшкав. |

Числосене шутланă чухне те «в» приставкăпа усă куратпăр: пĕррев, иккев, виççев, тваттав, пилкев, улттав, çиччев, саккăрав, тăххăрав, вуннав.

Вырăсла сăмахсемпе усă курнă чухне те чăвашсем çак йăлайĕркепе усă кураççĕ. Сăмахран: мама + в = мамав, папа + в = папав тата ыт.те. Çакăн пек калаçнине Çĕнĕ Шупашкартан Шупашкара каякан автобус çинче илтрĕм, анчах та çав çынсемпе çывăххăн паллашма май килмерĕ. Халь те пулин ӳкĕнетĕп.

Тата тепĕр самант, çак йĕркепе хисеп (цифра) паллисене вуланă-çырнă чухне те усă кураççĕ. Сăмахран: Пĕрре + в = пĕррев, иккĕ + в = иккев тата ытти те.

## ВАРЛĂ ТУСĂМ

Варлă тусăм, вăйна пух,
Вăйна пух та вăййа тух:
Вăйă-кулă пынă чух
Вăхăт шăвать сисме çук.



**Алфавитри** пиллĕкмĕш сасă палли — **Г**.

Ăна чăваш çырулăхне 1933 çулта кĕртнĕ. И.Я.Яковлев унпа унччен те усă куркаланă. Г урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче кăна çырăнать.

Вăл çапла вуланать: гă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Г** — çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *газ, гараж, газон, генерал, генералитет, гимн, горн, гранат, гранит, груша...*

сăмах варринче: *вагон, Игорь, ирга, лагерь, бригада, прогул, пергамент, тигр, фагот, фрагмент, ягуар...*

сăмах вĕçĕнче: *лаг, варяг, лозунг, митинг, плуг, универмаг, утюг, флаг, шланг, эпилог, Эренбург...*

**Шӳтлевсем:**

Га-га-га, Гарри кайрĕ гаража.
Ге-ге-ге, герой пулчĕ Туринге.
Ги-ги-ги, гимн юрларĕ гид.
Гу-гу-гу, Гулливер халь ни гу-гу.

**Ытарлăхсем:**

1. Грек тенĕ сăмах мĕнпе ытарлă? *(«Грек» сăмах варринче нота «ре» пур.)*
2. Грецин тепĕр тĕрлĕ ячĕ мĕнлерех? *(Эллада.)*

**Ятарлăхсем:**

Г сасă палли турчка палли мар.

Гулливер — Д.Свифт çырнă романти паллă сăнар.

## ГАЛИНА

Галя лайăх вĕренет —
Гаммăсене шĕкĕлчет.
Гаммăсене пĕлмен чух
Гитарист пулма май çук.

## ГЕРОЙСЕМ

(Халап-юмахри сăнарсем)

1. - - - - - - - Асамлă юмахсенчи хăрушă сăнар.
2. - - - - - - - Чăваш юмахĕсенчи çивĕч ăслă хĕрача.
3. - - - - - - - Балдан чăвашла куçăмĕ (А. Афанасьев тăрăх).
4. - - - - - - - Н. Васильев юмахĕнчи вăрман хуçи.
5. - - - - - - - Гномăн пĕчĕклетсе каланă варианчĕ.
6. - - - - - - - А. С. Пушкин эпиграмминчи шӳтле сăнар.
7. - - - - - - - Вырăс халăх юмахĕнчи çăрттанпа туслă ача.
8. - - - - - - - Вăрманпа туслă чипер пике.
9. - - - - - - - Ёшпĕл кайăкăн юррине кура панă ячĕ.
10. - - - - - - - В. Бианки çырнă юмахри стадион.
11. - - - - - - - Тутар халăх юмахĕнчи Уйăхпи.
12. - - - - - - - Чăваш юмахĕсенчи илемлĕ хĕрача.
13. - - - - - - - Чустаран унаса тунă паттăр ача.
14. - - - - - - - Я. Ухсай сăввисенчи кулăшла сăнар.
15. - - - - - - - Сарă тиллĕн юмахри ячĕ.
16. - - - - - - - Мăр-мăр кушакăн юмахри ячĕ.
17. - - - - - - - Чăваш мифĕсенчи çутă куçлă хĕрача.
18. - - - - - - - В.Шекспир пьесинчи кĕвĕç мавр.
19. - - - - - - - Авалхи грек мифĕнчи мухтавлă паттăр.
20. - - - - - - - А. С. Пушкин юмахĕнчи мухтавлă сăнар.
21. - - - - - - - А. С. Пушкин юмахĕнчи патша сăнарĕ.
22. - - - - - - - Урана сырмалли çинчен çырнă юмах.
23. - - - - - - - Европăри халăхсен юмахĕнчи чи пĕчĕк асамçă.
24. - - - - - - - Н. Ыдарай çырнă юмах ячĕ.
25. - - - - - - - Ӳкме пĕлмен пукане ячĕ.
26. - - - - - - - А. С. Пушкин юмахĕнчи айван паттăр.
27. - - - - - - - Телестудире çуралнă сысна çури.
28. - - - - - - - Гомер поэминчи хăрах куçлă улăп.
29. - - - - - - - «Çилçунат» журналта çуралнă сăнар.
30. - - - - - - - Юмахри кукша пуçлă паттăрсен псевдонимĕ.
31. - - - - - - - Юмахри сăнартан пулса кайнă ял ячĕ.
32. - - - - - - - Автор юмах валли хатĕрленĕ ятарлă ят.
33. - - - - - - - Эрнекун çуралнă пикесен сумлă ячĕ.
34. - - - - - - - Çĕнĕ çул уявĕнчи çамрăк пике.
35. - - - - - - - Вырăс юмахĕнчи усал карчăкăн чăвашла куçăмĕ.

**Тупсăмĕ:**

1. Аçтаха. 2. Ăспике. 3. Балдай. 4. Вăрхуç. 5. Гномик. 6. Данко. 7. Емелюк. 8. Ёлочка. 9. Ĕçлеçи. 10. Жукамо. 11. Зейнаб. 12. Илемпи. 13. Йăвача. 14. Кĕлпук. 15. Лисави. 16. Мăрсук. 17. Наркуç. 18. Отелло. 19. Персей. 20. Руслан. 21. Салтан. 22. «Çăпата». 23. Тролль. 24. Ухмача. 25. Ӳкемпи. 26. Фарлаф. 27. Хрюшка. 28. Циклоп. 29. Чухлай (Чухлайкин). 30. Шаклай. 31. Щамалы. 32. Ыхралы. 33. Эрнепи. 34. Юрпике. 35. Якамай.

## ГОГОЛЬ

Гоголь — кăвакал, анчах та килти кăвакал мар, чурăс кăвакал. Вĕсем çинчен пурте пĕлсех пĕтерейместĕ те. Танлаштарса пăхсан вĕсем килти кăвакалсенчен кăштах пĕчĕкрех. Вĕсен ареалĕ: Азири, Европăри тата Çурçĕр Америкăри вăрманлă-шывлă вырăнсем. Сăмах майăн каласан, гогольсем Чăваш çĕршывĕнче те, Атăлпа Сĕве хутлăхĕсенче те тĕл пулаççĕ, çавăнпа та вĕсем çинчен уйрăм калаçу хускатас терĕмĕр.

Гогольсем çуркунне юр кайма пуçласанах хăйсене килĕшнĕ вырăнсене вĕçсе килеççĕ те тӳрех пурăнмалли вырăн хатĕрлеме тытăнаççĕ. Йăвисене ытти кăвакалсем пек, çĕр çине мар, йывăç хăвăлĕсенче е ырă çынсем туса çакнă вĕллесенче хатĕрлеççĕ. Пĕр йăвапах темиçе çул хушши усă кураççĕ. 4 — 14 кăвак-симĕс тĕслĕ çăмарта çулсеренех тăваççĕ. Килти кăвакалсем пекех, вĕсем те чĕпписене 30 талăк хушши пусма ларса кăлараççĕ. Чĕпписем вара, такам васкатнă пек, пĕр харăсах тухаççĕ те талăк хушши йăварах йăпшăнса лараççĕ. Талăк иртсенех вĕсене амăшĕ саспа чĕнсе кăларать. Чĕпписем вара пĕрин хыççăн тепри çĕр çине е шывлă вырăнах сике-сике анаççĕ, питĕ çăмăл пулнăран аманмаççĕ те, сусăрланмаççĕ те. Тӳрех шывлă вырăн патнелле талпăнса чупаççĕ. Амăшĕ вĕсене васкасах тăшман курма пултарайман хӳтĕ вырăнсене вырнаçтарма тăрăшать. Тин çеç çăмартаран тухнă пулин те чĕпписем питĕ лайăх ишме-чăмма пултараççĕ, шыв айĕнче минут çурă е икĕ минут хушши пуласси вĕсемшĕн ним те мар. Икĕ уйăхран çунатланса та çитеççĕ. Вăт мĕнле маттурсем!

Мĕнпе тăранса пурăнаççĕ-ха вĕсем? Гогольсен апачĕ — вăлчасемпе вĕтĕ пулăсем, рак е рачок йышши пĕчĕк чĕрлĕхсем тата тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăсем. Хăйсене кирлĕ апат-çимĕç шыраса гогольсем шыв тĕпнелле 4 метр таран чăмса пуçтараççĕ, пĕсехисене тултараççĕ.

Гогольсем — сунарçă енлĕхĕ, вĕсен ашĕ хăйне майлă деликатес, ăна тутанса пăхакансем пурте ырлаççĕ. Кăвакал ашĕ тутлă апат пулин те вĕсен йышне пĕтерес марччĕ.

Ай-хай чурăс кăвакал
Ан пултăрах пит сахал.




**Алфавитри** улттăмĕш сасă палли — Д.

Ăна чăваш алфавитне 1933 çулта кĕртнĕ. И.Я.Яковлев ку сасă паллипе 1871—1872 çулсенчех усă курнă. Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче кăна çырăнать.

Вăл çапла вуланать: дă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

**Д** — çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *Дарвин, домино, доска, документ,дояр, доярка, диван, динозавр...*

сăмах варринче: *адвокат, адрес, ода, одеколон, кодекс, задача, радио, медаль, орден, чардаш, шарада...*

сăмах вĕçĕнче: *анод, доклад, мармелад, лимонад...*

**Шӳтлевсем:**

Да-да-да, Далмат кайнă похода.
Ди-ди-ди, Дима пирĕн командир.
Ду-ду-ду, думба çинче какаду.
Ды-ды-ды, «ни туды и ни сюды». *(Юрăран.)*

**Ытарлăхсем:**

1. «Д»-па пуçланакан мĕнле вĕçен кайăка арçын ячĕпе чĕнеççĕ? *(Дрофа ятлă кайăка тепĕр тĕрлĕ Джек теççĕ.)*
2. «Д» çумне арçын ячĕ хушсан мĕн пулать? *(Мебель ячĕ пулать. Д + Иван = диван.)*
3. Мĕнле вăйă ятĕнче икĕ нота пĕр харăс тĕл пулать? *(Домино сăмахра. До + ми + но = домино.)*

**Ятарлăхсем:**

Да тенипех ĕç пĕтмест, пуçланать кăна.
Доминолла вы-ляма до-ре-ми-фа кирлех мар.

## ДОКЛАД

Доклад тума мĕн кирлĕ?
Доклад тума чун кирлĕ.
Доклад чуна витмен чух
Доклад усă кӳрес çук.

## ДЖЕК ĂСТАЛАНĂ ÇУРТ

Акă çĕн çурт,
Ăна ăсталанă Джек.

Акă тулă,
Ăна хывнă таса ырçана,
Çав ырçа питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Ак çерçи,
Вăл тустарать çав сар тулла,
Çав тулли упранать ырçара,
Çав ырçа питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акă кушак,
Вăл текех çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла
Çав тулли упранать ырçара,
Çав ырçи питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акă йытă,
Вăл вĕрсе хăвалать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Сар тулли упранать ырçара,
Çав ырçа питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акă Ĕне,
Вăл час-час хăмсарать-çке йытта,
Çав йытти хăвалать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Çав тулли упранать ырçара,
Çав ырçи питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акă Мариç,
Вăл сăвать ирсерен ĕнине,

Çав ĕне хăмсарать-çке йытта,
Çав йытти хăвалать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Сар тулли упранать ырçара,
Çав ырçа питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Ак кĕтӳç,
Вăл куллен кăтăртать* Мариçе,
Çав Мариç патаклать ĕнине,
Çав ĕне хăмсарать-çке йытта,
Çав йытти хăвалать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Сар тулли упранать ырçара,
Çав ырçа питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акă Автан,
Вăл ирех вăратать кĕтӳçе,
Çав кĕтӳç кăтăртать Мариçе,
Çав Мариç патаклать ĕнине,
Çав ĕни хăмсарать-çке йытта,
Çав йытти хăвалать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Çав тулли упранать ырçара,
Çав ырçи питĕрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

(Акăлчансен путишĕ)

## ДУНДУК

Йăлхав

Пурăннă пулнă Дундук,
Çав Дундукăн пулнă питĕ пысăк сундук,
Çав сундукра пулнă питĕ пысăк çатан,
Çав çатанра пулнă питĕ пысăк хуран,
Çав хуранта пулнă питĕ пысăк сухан,
Çав сухан питĕ-питĕ йӳçĕрен
Юмахлам-ха çĕнĕрен...

*(Юмахçă çак йăлхава йăлăхса çитиччен тăсма пултарать.)*

---

* Кăтăртать — улталать.



**Алфавитри** çиччӗмӗш сасӑ палли — **Е**.

Ӑна çӗнӗ çырулӑха 1871 çулта кӗртнӗ. Вӑл чӑваш графикинче Э тата ЙЭ сасӑсене пӗлтерет.

Вӑл çапла вуланать: йе.

Вӑл çапла çырӑнать: *(çырса кӑтартмалла)*.

**Е** çак вырӑнсенче тӗл пулать:

сӑмах пуçламӑшӗнче: *евӗк, евӗр, евчӗ, ейӳ, ерӗç, енне, епле, ешер, ешӗл, ещӗк, ещӗкре...*

сӑмах варринче: *елеке, елпеке, елпешке, ӗнен, ӗнер, кедр, кӗрен, крем, Кремль, тӗрев, телевизор...*

сӑмах вӗçӗнче: *вите, витре, ӗне, кӗрпе, курите, пӗрене, кӗнеке, серте, çӗпре, тетте, чиперкке...*

**Шӳтлевсем:**

Ев-ев-ев, Евӑна кирлех писев.
Ен-ен-ен, Енисей те хамӑр ен.
Ех-ех-ех, Ехрем вылять пӗчченех.
Еш-еш-еш, ешӗл тумлӑ халь пилеш.

**Ыtарлӑхсем:**

1. «Е» çумне хупӑллӑ шӑтӑк ятне хушсан мӗн пулать? *(Хӗрçын ячӗ пулать. Е + люк = Елюк.)*
2. Еремейре миçе «ре»? *(Икӗ тӗрлӗ хурав: 1— Еремей ятӗнче пӗр «ре», 2— «Еремейре» тенӗ сӑмахра икӗ «ре».*

**Ятарлӑхсем:**

Еккӗм — Иоакким тенине чӑвашлатса калани.
Екки пур чух Еккӗмле, Екки пӗтсен — эххӗмле.
Екки-мекки сӑмахӑн хӑрах екки.

## ЕВА

Ева пиллӗкре анчах,
Ева — пӗчӗк хӗрача.
Ева ӗҫ тӗлне пӗлет —
Енчӗксем халех тӗрлет.

## ЕРИПЕН

Епрев

Авăрлантăм
ерипен,
Алăк уҫрăм
ерипен,
Килтен тухрăм
ерипен,
Палан татрăм
ерипен,
Пасар тăтăм
ерипен,
Палан сутрăм
ерипен,
Палан хакӗ
ерипен,
Пуртă пулчӗ
ерипен,
Пуртăпала ӗҫлесе
ерипен,
Пуйса кайрăм,
тăвансем,
ерипен.

## ЕРЕМЕЙ

Анатри чăвашсем те, Вăрмар вырăсӗсем те ҫиме юрăхлă пӗр кăмпана ЕРЕ́МЕЙ тесе ятарлă ят панă. Ăна «Еремей калпакӗ», «Еремей кăмпи», «Ерми пуп шлепки» тесе калаҗансем те пур.

Еремей кăмпинчен хăйӗнчен ыйтăттăм — кăмпасем калаҫма пӗлмеҫҫӗ.

Еремей ятлă ҫынсенчен ыйтăттăм — ман пӗлӗшсем хушшинче Еремей ятлă ҫынсем ҫук.

Ирӗксӗрех ачасенчен ыйтас пулать.

Калăр-ха, ачасем, Еремей тесе мӗнле кăмпана калаҫҫӗ?

**Ыйту явапӗ:** Еремей — сăркка тӗслӗ сӗтлӗ кăмпа, вырăсла каласан: млечник, серушка, серый млечник тата ытти те, урăхларах ятсем те пулма пултараҫҫӗ.




**Алфавитри** саккăрмĕш сасă палли — Ё.

Ăна чăваш çырулăхне 1938 çулта кĕртнĕ. Унпа урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче кăна усă кураççĕ.

Вăл çапла вуланать: йо.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

**Ё** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *ёлка, ёлочка...*

сăмах варринче: *лётчик, монтёр, шахтёр, вертолёт, миномёт, самолёт...*

сăмах вĕçĕнче: *Ёжиньё (автор ăсталанă сăмах. Урăхран вырăсла-чăвашла кирлĕ пек вуланакан сăмах тума çук.)*

**Шӳтлевсем:**

Ё-ё-ё, Ёжике çĕнеймĕ Юс.
Ё-ё-ё, Ёжка ятлă Чĕрĕп тус.
Ё-ё-ё, Ёлка кирлĕ Çĕнĕ çул.
Ё-ё-ё, Ёлка çинче пулмĕ çу.

**Ытарлăхсем:**

1. Ачасемшĕн Ёлка кам?
*(Çĕнĕ çул хăни.)*
2. «Ёжиньё» тенĕ сăмах мĕнпе ытарлă?
*(«Ё»-па пуçланса «Ё»-па вĕçленет.)*
3. «Ё» сасă паллин авторĕ кам?
*(Вырăс писателĕ Н.М. Карамзин.)*

**Ятарлăхсем:**

1. Ёлка-ёлка тенĕрен
Ёлка пулмасть йĕлмерен.
2. «Ё» сасă паллисĕр алфавит тулли мар.

# ЁЛОЧКА

(З.Александроврăн)

Ах, вăрманта сивĕ-тĕр
Чăрăша хĕлле,
Ăна илсе килĕпĕр
Вăрмантан киле.

Ёлка туса лартăпăр
Пÿлĕм варрине,
Теттесем те çакăпăр
Лăссисем çине.

Çутă çăлтăр çутăпăр
Çĕнĕ Çул ятне,
Парнесем те хурăпăр
Туратсем айне.

Карталанса тăрăпăр
Пурте ун тавра,
Савăк юрă юрлăпăр
Чаплă уявра.

# ЁЁЁ-СЕМ

Авалах та мар, паянах та мар — аслă вăрман варринчи уçланкăра Ёжикус пурăннă. Пурăннă та пурăннă, йĕплĕ çăмхан курăннă.

Пĕррехинче, пĕр илемлĕ ир çинче, чипер Ёжикус чипер Ёжаннăпа тĕл пулать. Тĕл пулаççĕ те çамрăк чĕрĕпсем чĕрĕп туйĕ туса пĕрлешеççĕ.

Пĕрремĕш çулах вĕсен пĕрремĕш çура çуралать, ăна вĕсем Ёжка тесе ят параççĕ.

Иккĕмĕш çул тепĕр çура çуралать, ăна вĕсем Ёёжка тесе ят параççĕ.

Виççĕмĕш çул тата тепĕр çура çуралать, ăна вĕсем Ёёёжка тесе ят параççĕ. Çапла вара пĕр çемьере виçĕ пĕрешкел ятлă пĕртăвансем пулса тăраççĕ: Ёжка, Ёёжка тата Ёёёжка. Тĕлĕнмелле ятсем! Ятран та ытла тĕлĕнмелли акă мĕн:

— Мĕнле чĕнмелле-ши виçĕ пĕрешкел ятсене пĕр харăсах?

**Ыйту явапĕ:** Вăрăмлатса та туллинреххĕн — ЁЁЁЁЁжкăсем темелле. Кĕскен — ЁЁЁ-сем теме те юрать.



**Алфавитри** тӑххӑрмӗш сасӑ палли — **Ё**.

Ӑна ҫӗнӗ ҫырулӑха 1873 ҫулта кӗртнӗ, унччен Ё сасӑ палли вырӑнне ҫемҫетӳ паллипе (ь) усӑ курнӑ.

Вӑл ҫапла вуланать: ёё.

Вӑл ҫапла ҫырӑнать: *(ҫырса кӑтартмалла)*.

**Ё** ҫак вырӑнсенче тӗл пулать:

сӑмах пуҫламӑшӗнче: ***ёлӗк, ёмӗр, ёмӗт, ёне, ёнер, ёҫ, ёҫлев, ёшенни, ёшенӳ...***

сӑмах варринче: ***кӗве, кӗл, лӗпӗш, пӗлӗш, сӗт, ҫӗнни, ҫӗр, тӗс, тӗслӗх, хӗр, тӗтре, тӗрӗслев...***

сӑмах вӗҫӗнче: ***вӗчӗ, пӗрчӗ, ҫӗрӗ, тӗрӗ, хӗрлӗ, хӗҫӗ, чӗрӗ, чӗрнеллӗ, шӗшкӗ, шӗшлӗ...***

**Шӳтлевсем:**

Ёр-ёр-ёр, ёрлетсе ан вӗр.
Ёҫ-ёҫ-ёҫ, ёҫ манса ан вӗҫ.
Ҫӗ-ҫӗ-ҫӗ, ҫӗр ҫӗмӗрсе ёҫлеҫҫӗ.

**Ыйтӑвсем:**

1. Ёне хӑҫан вӑхӑта пӗлтерет? *(«Р» сас палли хушсан.)*
2. Ут хатӗрӗнче мӗнле выльӑх ячӗ упранать? *(«Йӗнер» сӑмахра «ёне» сӑмах упранать.)*
3. Мӗнле сӑмахра икӗ выльӑх ячӗ юнашар пулӗ? *(«Якут» сӑмахра ут (лаша) тата як (вӑкӑр) ячӗ юнашар.)*

**Ытарлӑхсем:**

Е пӗччен мар, ун хыҫӗнче Ё тата Ё пур.

Ёмӗрлӗх япала ёмӗтре ҫеҫ пулма пултарать.

Ёнерхи — ёне хырӑмӗнче, паянхи — патша аллинче, ыранхи — ырҫа тӗпӗнче.

## ЁЛЁКРЕХ

Ёненёш

Ёлёкрех
Ёне пулнă сĕтлĕрех,
Хальтерех
Ёнесем те чирлĕрех.

Ёлёкрех
Ёнсе пулнă çирĕпрех,
Хальтерех
Ёнсесем те çўхерех.

Ёлёкрех
Курăк пулнă симĕсрех,
Хальтерех
Курăксем те тĕксĕмрех.

Ёлёкрех
Сывлăм пулнă сиплĕрех,
Хальтерех
Сывлăмсем те сивĕрех...

Ёлёкрех
Хĕвел пăхнă савăкрах,
Хальтерех
Хĕвел пăхать салхурах.

Ёлёкрех
Сăмах пулнă сумлăрах,
Хальтерех
Сăмахсем те сутлăхра.

## ЁЛЁКЧЁ

Шўтлев

Ёлёк чухне ёлёкчĕ —
Ёнсе çинче çĕлĕкчĕ,
Ёнсе çинче çĕлĕкчĕ —
Ёненме çук çĕтĕкчĕ.

Ёлёк чухне ёлёкчĕ —
Ёсĕклеме ирĕкчĕ,
Ёсĕклеме ирĕкчĕ —
Ёçкелеме хĕсĕкчĕ.

## ЁНЕ

Йăлхав

Мухтанчăк Ёне
Мунча кĕчĕ ёнер,
Мунчаран тухсан
Пур вăйне пухса
Пуçларĕ ёçме:
Ёçет те ёçет,
Ёçет те ёçет...
Чарăнчĕ ёçме —
Пуçларĕ вĕçме.
Вĕçет те вĕçет,
Вĕçет те вĕçет...
Чарăнчĕ вĕçме —
Пуçларĕ ёçме.
Ёçет те ёçет,
Ёçет те ёçет...

(Вĕçĕмсĕр)

## ЁНЕ ЁÇĔ

Ёнер тесе ёнер мар,
Ёнентерме çăмăл мар,
Ёнчĕ куçлă пĕр ёне
Ёçпе кайнă ёшнене.

Ачасем, халь ман сире
Пĕр ыйту парас шут пур.
Ёне тусăн ёшнере,
Калăр-халĕ, мĕн ёç пур?

(Ёне тусăн ёшнере ешĕл курăк е çулçă çиес кăмăл пур.)

## ЁШПĔЛ

Ёшпĕл ятлă кайăк пур,
Ёçлĕх çинчен юрри пур:
— Ёçле-ёçле-ёçлеçи,
Ёçлемесен ан та çи!..




**Алфавитри** вуннӑмӗш сасӑ палли — **Ж.**

Ӑна чӑваш ҫырулӑхне 1933 ҫулта кӗртнӗ, унпа урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсенче кӑна усӑ кураҫҫӗ.

Вӑл ҫапла вуланать: жӑ.

Вӑл ҫапла ҫырӑнать: *(ҫырса кӑтартмалла).*

**Ж** ҫак самантсенче тӗл пулать:

сӑмах пуҫламӑшӗнче: *жакет, Жанна, жилет, жираф, журнал...*

сӑмах варринче: *абажур, боржоми, гражданин, дирижабль, бюджет, коржет, сольфеджио...*

сӑмах вӗҫӗнче: *ажиотаж, вернисаж, гараж, морж, Париж, саботаж, чертёж, монтаж, шантаж, этаж...*

**Шӳтлевсем:**

Жа-жа-жа, Жанна кайрӗ гаража.
Же-же-же, Женя илчӗ протеже.
Жи-жи-жи, жилет кирлӗ терӗ Джим.
Жу-жу-жу, журнал ҫинче абажур.

**Ытарлӑхсем:**

1. «Ж» ҫумне ахаль сӑмах хушсан мӗн пулать? *(Ятарлӑ комиссии пулать. Ж + юри = жюри.)*
2. Иван французла кам пулать? *(Жан пулать.)*
3. Якку французла мӗн ятлӑ? *(Жак ятлӑ.)*

**Ятарлӑхсем:**

Жан-Жак Жаниковский — манӑн тус.
Жозефина — Наполеон Бонапарт мӑшӑрӗ.
Жухрай — Н. Островский ҫырнӑ романти арҫын ячӗ.
Жукин сын мӗн тени? *(Нӑрӑ ывӑлӗ.)*

## ЖИРАФ

Жираф-жираф тенĕрен
Жираф паллă ĕлĕкрен.
Жираф вăрăм мăйлăскер,
Жираф питĕ çӳллĕскер.

Журнал — вăхăтран вăхăт пичетленсе пыракан çырулла ĕçсен пуххи. «Çилçунат» — шкул çулне çитнĕ чăваш ачисен журналĕ. «Тетте» — кĕçĕн çулхи чăваш ачисен выляса вĕренмелли журналĕ. «Тăван Атăл» — чăваш çыравçисен илемлĕ литература журналĕ. «Ялав» — чăваш çыравçисен илемлĕ хайлавĕсене пичетлекен журнал.

Журнал тесе ачасем мĕнле вĕреннине паллă туса пымалли ĕç кĕнекине те калаççĕ. Алă вĕççĕн çырса хатĕрленĕ сăвă-юрăсен пуххине те журнал теме пулать. Ун пек журналсене эсир хăвăр та вĕрентекенсем пулăшнипе çырса хатĕрлеме пултаратăр.

## ЖУРНАЛ

Журнал алла тытатăп,
Журнал çине куçлатăп.
Журнал çине çырнине
Жу-жу тесе вулатăп.

Жираф (жирафа) — жирафсен йышне кĕрекен сĕтпе çăвăр çитĕнтерекен вăрăм кĕлеткеллĕ чĕр чун. Кӳлепи кĕске, мăйĕ вăрăм, мăй шăмми пур пĕрех çиччĕ сыпăклă. Çӳллĕшĕ 5,5 метр, йывăрăшĕ 1000 кило таран. Урисем вăрăм пулнипе питĕ хăвăрт чупма пултарать. Амин те, аçин те пуç тӳпинче мăйракасем пур. Африкăра, саваннăра, пурăнаççĕ. Йывăç çулçи, уйрăммăнах акаци çулçине юратса çиеççĕ. Мăшăрпа пурăнаççĕ, пĕрер çура анчах ӳстереççĕ.

Жирафсем тĕсне пăхсан сарă хăмăр тĕслĕрех курăнаççĕ. Тирĕ саплăксенчен çыпăçтарса тунă пек курăнать.

## ЖУРНАЛ

«Жу» çумĕнче «Р» пулсан —
Жур тесе çеç вулатпăр,
«Жур» хыçĕнче «нал» пулсан —
Журнал тесе вулатпăр.

# З

**Алфавитри** вунпĕрмĕш сасă палли — **З**.

Ăна чăваш çырулăхне 1933 çулта кĕртнĕ, унпа урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче кăна усă куратпăр.

Вăл çапла вуланать: зă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**З** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *завод, задача, зал, заметка, зебра, зубр, зубровка, зуммер...*

сăмах варринче: *азбуки, грузовик, резина, бензин, вокзал, мазут, озон, горизонт...*

сăмах вĕçĕнче: *газ, джаз, колхоз, совхоз...*

**Шÿтлевсем:**

За-за-за, завхоз кайрĕ Кавказа.
Зе-зе-зе, Зеландире пур музей.
Зи-зи-зи, Зинуксен пур лимузин.
Зу-зу-зу, зубр ячĕ мар Мăрзук.

**Ытарлăхсем:**

1. Зебра хыçĕнче мĕн пур? *(Икĕ тĕрлĕ хурав: 1 — зебра хыçĕнче хÿри пур. 2 — «Зебра» сăмах вĕçĕнче «а» пур.)*
2. Йăрăм тирлĕ лаша мĕн ятлă-ши? *(Зебр е зебра.)*
3. Шăлламас вăкăр мĕн ятлă? *(Зубр.)*

**Ятарлăхсем:**

1. Зубр — зуб (*шăл*) сăмахран пулса кайнă чĕр чун. *(Шÿтле этимологи.)*
2. Лимузин — çăмăл автомашина ячĕ.
3. Мăрзук — вырăслатса каланă кушак ячĕ.

## ЗАВОД САССИ

Шӳт

Зав. калать:
— Мĕн каласси,
Заводăн та пур сасси!
Зам. ыйтать кулса ытарлăн:
— Завод сасси мĕн ятлă?



**Шӳт явапĕ:** Завод сасси — гудок.

## ЗАДАЧА

Алла хутпа кăранташ тытрăм та çыру сĕтелĕ хушшине лартăм. 3 сасăпа та, 3 сасă паллипе те чăвашла сăмахсем çук. Çук тăк кивçене каяс пулать е çĕнĕрен тумалла. Акă «задача» сăмах. Ăна вырăс чĕлхинчен илнĕ. Вăл шутласа тупас тенине пĕлтерет. Малалла эпир сăмах задачисем тумалла выльăпăр. Задачăн хурăмлă схеми çапла: САСĂ + ПАЛЛИ = САС ПАЛЛИ (Буква).

| |
|---|
| АЗ + БУКИ = АЗБУКИ (буквы) |
| АЛЬФА + БЕТА = АЛФАВИТ (Букварь) |

АВĂН + КАЙĂК = (Авăн кайăкĕ) = ШĂШИ (мышка)
ĂСАН + ХӲРЕ (Ăсан хӳри) = ĂСА (Челнок)
БАНК + ХУÇА (Банк хуçи) = БАНКИР
ВĂРМАН + ХУÇА (Вăрман хуçи) = ВĂРХУÇ (Лесовик)
ГАЙКА + МĂШĂР (Гайка мăшăрĕ) = БОЛТ
ДОЛЛАР + ЫЛМАШ (доллар ылмашĕ) = ВАЛЮТА
ЕШĔЛ + КУРĂК (Ешĕл курăк) = ЕШĔЛХЕ (зелень)
ĔÇЛĔХ + ĔМПИКЕ (Ĕçлĕх ĕмпики) = ĔШПĔЛ (Овсянка)
ЗАВОД + САСĂ (Завод сасси) = ГУДОК
ИРТНĔ + ВĂХĂТ (Иртĕ кун) = ĔНЕР (вчера)
ЙӲÇĔ + ШĔВЕК (Йӳçенкĕ шĕвек) = СĔРККЕ (Уксус)
КИТАЙ + КУРĂК (Китай курăкĕ) = ЧЕЙ (Чай)
ЛАША + ЛАРКĂÇ (Лаша ларкăçĕ) = ЙĔНЕР (Седло)
НУША + ÇĂКĂР (Нуша çăкăрĕ) = КУЛАЧĂ (калач)
ОКЕАН + ХУРАХ (Океан хурахĕ) = ЦУНАМИ
ПЫСĂК + КАШĂК (Мăн кашăк) = ÇĂПАЛА (Половник)
РУНКĂ + КАЙĂК (Рункă кайăкĕ) = РУНКĂШ (Ронжа)
САЛА + КАЙĂК (Сала кайăкĕ) = ÇЕРÇИ (Воробей)
ÇĂМĂЛ + ÇИЛ (Çăмăлкка çил) = ВАРКĂШ (Ветерок)
ТИПĔ + КУРĂК (Типнĕ курăк) = УТĂ (Сено)
УПА + ÇУРА (Пĕчĕк упа) = УПАШКА (Медвежонок)
ӲТСĔР + ӲЛЕЧЕ (Ӳтсĕр кĕлетке) = ӲПРЕ (Мошка)

ФИГ + ЙЫВӐÇ (Фик йывӑççи) = ФИКУС
ХУРӐН + КУКӐЛЬ (Хурӑн кукли) = ХУЛӐ (Розга)
ЦИРК + ЁÇЧЕН (Цирк ёçченӗ) = ЦИРКАЧ
ЧӖРӖ + СЕХЕТ (Чӗрӗ чунлӑ сехет) = АВТАН (Петух)
ШӖШКӖ + ПИКЕ (Шӗшкӗ хӗрачи) = МӐЙӐР (Желудь)
ЩАВЕЛЬ + АПАТ (Щавель апачӗ) = ЩИ (купӑста яшки)
ЭМЕЛ + ӐСТА (Эмел ӑсти) = ЭМЕЛÇӖ (Лекарь)
ЮМАН + АЧИ (Юман ывӑлӗ) = ИКЕЛ (йӗкел) ЖЕЛУДЬ
ЯЛМАК + ХӲРЕ (Ялмака хӳре) = ЯЛМАН (Тушкан, тушканчик)
ЯПШАР + ЧӖЛХЕ (Япшар чӗлхеллӗ çын) = ЙӐПӐЛТИ (Льстец, подхалим)

## ЗНАКСЕМ

Ӑнлав

Авалхи çырулӑхсенче те, паянхи çырулӑхсенче те тӗрлӗрен паллӑсем питӗ нумай. Астрономире те тата ытти наукӑсенче те йышлӑ вӗсем. Эпир кунта грамматика паллисем çинчен, тепӗр тӗрлӗ каласан — сасӑ паллисем çинчен калаçӑпӑр. Вӗсене пӗрлештерекен йӗркелӗхе АЛФАВИТ тетпӗр. Авалхи паллӑсемпе паянхи паллӑсем те пӗр пек мар. Çухалнӑ чӗлхесем пире кирлех мар-ха, эпир хальхи чӗлхесем çинчен калаçӑпӑр.

Вырӑс алфавичӗ те идеаллӑ, универсаллӑ алфавит мар. Çемçетекен (ь), хытӑлӑх (ъ) паллисем пирки сӑмахлар-ха. Иккӗшӗ те вӗсем нимле сасӑпа та çыхӑнман, сасӑ паллисем те мар. Темшӗн вӗсене халиччен те ЗНАКСЕН ушкӑнне куçарман.

Вӗсем пачах та кирлӗ мар тесе каламӑпӑр, анчах та вӗсене алфавит йышӗнчен кӑларса знаксен йышне вырнаçтарни кирлех. Кун пек тӑвас пулсан вуласси те, калаçасси те, çырасси те самаях çӑмӑлланать.

1936 çулсенче, патшалӑх шайӗнче, чӗлхе реформи ирттернӗ май эпир те вырӑс алфавитне курттӑмӑн йышӑнтӑмӑр та çак знаксене хӑйсене тивӗç вырӑна лартаймастпӑр. Йӑла-йӗрке тӑрӑх кашни пулӑмӑн, кашни япалан хӑйӗн вырӑнӗ пулмалла. Грамматика паллисем (знакӗсем те) хӑйсен йышӗпе пурӑнни пурне те çырлахтарать темелле.

Знаксем (условнӑйсем те, условнӑй маррисем те) питӗ нумай. Кашни уйрӑм наукӑра хӑйне тӗрлӗ знаксем пур. Астрономире те, географире те, математикӑра та йышлӑ вӗсем. Çӗнӗрен те çӗнӗ знаксем хутшӑнсах пыраççӗ. Эпӗ кунти грамматика знакӗсене пичетлекен машинка çинчен çырса илтӗм. Вӗсем пурте кирлӗ. Машинкӑри знаксене чӑвашлатас пулсан вырӑн та çитмест. Ун пек чухне ирӗксӗрех Е,О (ноль), Ъ, Ь паллӑсемпе усӑ курма тивет.

Знаксем: ./ ../.../:/;/.—/,—/—/-/!/!!/!!!/?/??/???/?!/()/[]/„„/ь/ъ/ т. ыт. те.

# ЗОДИАК

Зодиак (грек сăмахĕ) — Зоон (чĕр чун) тенĕ сăмахран.

Хĕвелĕн аслă уçлăхра çаврăнса вĕçмелли курăмлă çулне эклиптика теççĕ. Çав çула хĕвел 12 уйăх хушшинче çаврăнса тухать те, çаврăннă май тĕрлĕ çăлтăрлăхсен (созвездисен) хушшипе иртет. Çăлтăрсен пĕрлĕхне е çăлтăрсен уйрăм ушкăнне зодиак теме йышăннă.

Зодиаксемпе вĕсене тивĕçекен уйăх ячĕсем çаксем:

1. Шывсапан — Водолей = Кăрлач — январь.
Унăн палли: ♒
Вариант: Шывтăкан. Тĕрĕсех мар, мĕншĕн тесен тăрă шыва тăкмаççĕ, унпа сапса усă кураççĕ.
2. Пулăсем — Рыбы = Нарăс (февраль). Унăн палли: ♓
Вариантсем çук.
3. Путек — Овен = Пуш (март). Унăн палли: ♈
Вариант: Сурăх. Тĕрĕсех мар, мĕншĕн тесен амалăха анчах пĕлтерет. Путек сăмахра ама-аçа пĕрлĕхĕ пур.
4. Пăру — Телец. = Ака (апрель). Унăн палли: ♉
Вариантсем çук.
5. Йĕкреш — Близнецы = Çу (май). Унăн палли: ♊
Вариантсем çук. Кĕске формăпа çырни килĕшӳллĕрех.
6. Хĕскев — Рак. = Çĕртме (июнь). Унăн палли: ♋
Вариант кирлех мар, мĕншĕн тесен хĕскев — авалхи чăваш сăмахĕ. Рак — каярах кĕнĕ сăмах.
7. Арслан — Лев. = Утă (июль). Унăн палли: ♌
Вариантсем çук. Кĕске форма килĕшӳллĕрех.
8. Пике — Дева. = Çурла (август). Унăн палли: ♍
Вариант: Хĕр тени тĕрĕсех мар. Пике тĕрĕсрех.
9. Виçе — Весы. = Авăн (Сентябрь). Унăн палли: ♎
Вариант: Тараса тени тĕрĕсех мар, Виçе тĕрĕсрех. Тараса мел анчах: пружинлă виçе, тарасаллă виçе.
10. Сăхаян — скорпион. = Юпа (Октябрь). Унăн палли: ♏
Вариантсем çук.
11. Тĕкрĕç — Стрелец = Чӳк (Ноябрь) Унăн палли: ♐
Вариант: Тĕкĕрçĕ, Ухăçă. Тĕкрĕç — авалхи сăмах. Ухăçă — ăнланмалларах пек. Тахăшĕ аван?
12. Качашка — Козерог. = Раштав (Декабрь). Унăн палли: ♑
Вариант: Ту качаки, Ту таки. Иккĕшĕ те тĕрĕсех мар пек. Ту çинче сиккелесе çӳрекен качака такине Качашка тесен аванрах пулĕ.

## ЗООСАД

Африка зоологсемшĕн мĕнпе паллă? Африкăра пĕрремĕш зоосадсем (зоологи сачĕсем) пулнине тĕпчесе палăртнă. Зоосад тени ытларах зоопарк ăнлавпа çӳрет. Апла та, капла та пĕлтерĕшĕ пĕрех. Азири тата Африкăри патшасем, раджасем, хансем тата фараонсем зоопарксем туса çынсене тĕлĕнтерме, хăйсен хăватне кăтартма тăрăшнă. Пĕрремĕш зоосадсем пирĕн эрăччен икĕ пин çул каяллах пулнă. Китайра та пулнă çавăн пек сад, унăн лаптăкĕ 400 гектар ытла пулнă. Çавна «Ăслăх сачĕ» е «Пĕлӳ паркĕ» тенĕ. Колумб уçнă Америкăра та (хальхи Мексика çĕрĕ çинче) калама çук капăр зоологи пахчи пулнă. Вăхăтне палăртса каласан ку вăл 1519 çулсем. Унта альпакасем, крокодилсем, ламăсем, оцелотсем, шиншилласем, ягуарсем тата ытти тĕлĕнтермĕш чĕр чунсем пурăннă. Ытла та нумай çав çут тĕнчен тĕрлĕрен тĕлĕнтермĕшсем: ăспа ăнкарса та, куçпа курса та пĕтереймĕн.

## ЗООПАРК

Зинук ятлă пĕлĕшпе
Зоопарка çӳретпĕр.
З сас палли сĕмĕпе
Зебра çырма пĕлетпĕр.

## ЗООШӲТ

Зоолог ачасенчен ыйтать: — Зоопаркра миçе пахча е миçе сад? Ачасем, кам маларах чухласа илет?

(**Шӳтле ыйту тупсăмĕ:** ЗОО тесе çырнине «виçĕ çĕр» тесе ăнлансан пурĕ виçĕ çĕр пахча е виçĕ çĕр сад пулать.)

## ЗИНУКПА ЗИНУН

Зинукпа Зинун тĕл пулаççĕ. Калаçу хускалать.

— Эсĕ Зебрпа Зебра çинчен илтнĕ-и? — йытать Зинук.

— Илтнĕ, — хуравлать Зинун.

— Зебупа Зебуха çинчен те илтнĕ-и?

— Илтнĕ, паллах.

— Зубрпа Зубра çинчен те илтнĕ-и?

— Илтнĕ кăна мар, курнă та!

— Апла пулсан кала-ха, З-па пуçланакан чĕр чунсене ăçта пĕр харăсах курма пулать?

Зинун аптраса ӳкмен, мĕнле кирлĕ — çапла хуравланă. Ачасем, эсир кирлĕ пек хуравлама пултаратăр-и?

**Ытарлăх яваçĕ:** «З»-па пуçланакан чĕр чунсене пĕр харăс зоологи словарĕ çинче курма пулать.




**Алфавитри** вуниккĕмĕш сасă палли — **И**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: ии.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**И** çак самантсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *Иван, ийĕ, иккĕ, илем, имлĕх, иçĕм, ихтиолог, Ишек, ишкев...*

сăмах варринче: *винтовка, вир, виçе, витре, кил, кит, кичем, кишĕр...*

сăмах вĕçĕнче: *каçхи, панулми, Салампи, пăри, сухари, çухави, çĕрулми...*

**Шӳтлевсем:**

— Иа-иа-иа! — çухăрса ярать Ашак.

— Ив-ив-ив, Ивана, Илле, ан тив!

— Ин-ин-ин, — инçетренех курать кин.

— Ия-ия-ия, тесе калаççĕ елчĕксем.

**Ытарлăхсем:**

1. «И» çумне мĕнле сăмах хушсан ят пулать? *(«Люк» хушсан. И + Люк = Илюк.)*

2. Мĕн тума кăмăлласан хитрелĕх пулать? *(Илме кăмăлласан.)*

3. Ишеке кайма мĕн кирлĕ? *(Çул кирлĕ.)*

**Ятарлăхсем:**

1. Илем — пурне те илĕртет.
2. Илем те яланлăх япала мар.
3. «Илем — чăваш чĕлхинчи чи хитре сăмахсенчен пĕри», — тенĕ Н. И. Ашмарин.

## ИДИОМА

Ăнлану

Идиомăсем — тăван чĕлхере кăна тĕл пулма пултаракан сăмах çаврăмĕсем. Истори енчен пăхсан вĕсем авалхи ăрăмăçлă тухату чĕлхинчен юлнă. Ăсчахсем вĕсене юриех пурне те ăнланмалла мар чĕлхепе шахвăртса каланă. Сăмахран: «Идиома» тенине ытти чĕлхесем çине куçарма та май çук. Тепĕр тĕслĕх: Вут куçне шыв! Вырăсла: Воду в глаз огня! Малтанлăха вăл ниме пĕлтермен сăмах пуххи пек кăна туйăнать, анчах та унта ăслăх пĕрчи пур. «Вут куçне шыв!» тепĕр тĕрлĕ «Çулăма шывпа сӳнтер!» тени пулать. Мĕншĕн уçăмсăр каланă-ха? Мĕншĕн тесен авалхи çынсем «Вут куçне шыв!» тесе каласан вут-çулăм асамлă сăмахран хăранипе вăйсăрланса-тамалса пырать тенĕ. Çавăнпа та ĕлĕкех каланă: Ĕненӳ — хăватлă вăй, хăвăн ĕçне ĕненсе-пĕлсе тăватăн пулсан ăнăçу пулать.

Анлăрах илсе пăхсан ăнланма йывăр сăмах çаврăнăшĕсене пурне те идиомăсем е фразеологи пĕрлĕхĕсем теме пулать. Çакăн евĕр сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулсан аслисенчен е вĕрентекенсенчен ăнлантарса пама ыйтас пулать.

Халь вара йывăр сăмах пĕрлĕхĕсене ăнланма е ăнлантарса пама тăрăшса пăхар-ха. Акă вĕсем, алфавит йĕркипе хатĕрленĕ тĕслĕхсем:

Арманĕ лайăх авăрать. (Апатне вăйлă çиет.)

Ăсанăн та ăсĕ малта. «Ăсан» тенĕ сăмахра «ăс» сыпăк малта. Балдайăн ăсĕ малта. (Айванăн та ăсĕ пур.)

Витĕр куç саккăр сăвать. (Куçĕ пурне те курма ĕлкĕрет.)

Гага тĕкĕ хуçине сутать. (Гагăсене тĕкĕ паха пулнипе тытса пĕтернĕ.)

Докладăн тĕшши пулмалла. (Докладра пурне те кирлĕ ыйтусем пулмалла.)

Екки ярсан еккĕмле. (Хăйне майлă айкашать.)

Ĕжик туспа Чĕрĕп тус. (Пĕрне-пĕри йĕплекен çынсем.)

Ĕне сĕчĕ чĕлхинче. (Ĕне апат парсан кăна сĕт антарать.)

Ачасем, малалла хăвăр ăсласа çырăр.

## ИКЕРЧĔ

Шӳт

Ирина паян ирхине
Икерчĕсем пĕçерчĕ —
Ивукпала Иллене
Иклетиччен çитерчĕ.

4. Заказ № К-1453.

## ИКĔ ЧУН

Илем

Хĕвелтухаç кăвакарчĕ —
Шуçăм карчĕ каррине.
Икĕ çамрăк кăвакарчăн
Килсе ларчĕç çурт çине.

Кăвăл-кăвăл калаçаççĕ,
Калаçаççĕ кăмăлтан.
Мĕн пуплеççĕ? Ăнланасчĕ
Пăхнă майăн кантăкран.

Кайăксен чĕлхи пур тетчĕ
Манăн ватă асанне.
Пур пулсан ăна тупасчĕ —
Парнелесчĕ çынсене.

Кăвакарчăн пек калаçчăр
Ваттисем те вĕттисем,
Юратма, савма вĕренччĕр
Пулас пурнăç хуçисем.

## ИРĔКЛĔ

Ирпе ирех тăракан
Ирĕклĕрех курăнать,
Ирĕклĕ çын яланах
Икĕ ĕмĕр пурăнать.

Ирĕклĕ çын эпĕ те —
Ирех ыйха сиретĕп.
Иллене те, пурне те
Ирех тăма сĕнетĕп.

## ИРККА

Иркка ирех вăранать —
Ирех çапла вăрханать:
Ирпе ирех тăракан —
Икĕ ĕмĕр пурнакан.



**Алфавитри** вунвиççĕмĕш сасă палли — **Й**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: ăй, йă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Й** çак самантсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *йăва, Йăван, йăвă, йăран, йăх, йытă, йышлă...*

сăмах варринче: *айăп, вăйă, кайăк, кайра, майра, сайра, туйра, уйра, шуйттан, шуйхану...*

сăмах вĕçĕнче: *ай-ай, какай, калай, Балдай, пай, сарай, урай, Ухсай, Хусанкай, Ярантай...*

**Шӳтлевсем:**

Йă-йă-йă, Йăванкка çиет йăва.

Йĕ-йĕ-йĕ, йĕкепе тус мар ийĕ.

Йӳ-йӳ-йӳ, йӳнех мар лимон йӳççи.

Йы-йы-йы, йывăçсем хăйне пĕр йыш.

**Ытарлăхсем:**

1. Йăвача çумĕнче мĕн упранса пурăнать? *(«Ача» сăмах.)*
2. Йăвăç варринче мĕн пур? *(«Йăвăç» сăмах варринче тепĕр сăмах — «ăвă» пур.)*
3. Йыхрав сăмах мĕнпе ытарлă? *(«Йыхрав» сăмах варринче «ыхра» пытаннă.)*

**Ятарлăхсем:**

Йывăрлăха çĕнмесĕр çăмăллăха çитме çук.

Йывăр теççĕ пурнăçа — кам çĕклесе курнă-ши?

Йывăç та, этем те йышпа пурăнать.

# ЙЫТĂ ЙЫШĔ

Ят шутлавĕ

Акбарс эмел хыпнă та
Ăрсук пулса тăнă та:
Ăрсукран — Барбос,
Барбосран — Вĕркке,
Вĕрккерен — Гав-гав,
Гав-гавран — Даркуш,
Даркушран — Ерепке,
Ерепкерен — Ёршик,
Ёршикрен — Ёмĕлке,
Ёмĕлкерен — Жандар,
Жандартан — Зуммер,
Зуммертан — Ишехей,
Ишехейрен — Йĕрлей,
Йĕрлейрен — Кампур,
Кампуртан — Лискав,
Лискавран — Мухтар,
Мухтартан — Наркуç,
Наркуçран — Опимах,
Опимахран — Пупсик,
Пупсикрен — Раскай,
Раскайран — Саспар,
Саспартан — Çăмхай,
Çăмхайран — Тухтар,
Тухтартан — Улаçка,
Улаçкаран — Фунтик,
Фунтикрен — Хăрхам,
Хăрхамран — Цаппай,
Цаппайран — Чармак,
Чармакран — Шавкка,
Шавккаран — Щеврик,
Щеврикрен — Ырухха,
Ыруххаран — Элихха,
Элиххаран — Юлахай,
Юлахайран — Ярухха,
Яруххана асăнсан —
Ят шутлавĕ пĕтрĕ ман.

**Ĕç пани:**
Шутлав пĕтрĕ пулин те ятарлă ятсемпе ĕçлесси вĕçленмен. Ярăма кĕртнĕ йытă ячĕсем мĕне пĕлтереççĕ? Каласа е çырса тухмалла. Кам тĕрĕсрех хуравлать те çырать — çавă çĕнтерӳçĕ пулать. (Тĕслĕхрен: Шавкка — пĕчĕк йытта шавкка теççĕ.)

**Ятарлă ĕç:**
Пилĕк е çичĕ сасă паллинчен тăракан йытă ячĕсене алфавит йĕркипе çырса тухăр.




**Алфавитри** вунтăваттăмĕш сасă палли — **К**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: кă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**К** çак самантсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: ***кавăн, кавир, кайăк, калпак, калуш, канат, кантра, касмак, кашăк...***

сăмах варринче: ***ака, акка, икерчĕ, иккĕ, кукка, лавкка, пĕкĕ, çекĕл, шĕкĕ, шĕшкĕ...***

сăмах вĕçĕнче: ***алăк, валак, калак, кушак, пушмак, сукмак, такмак, тукмак, шакмак, янрак...***

**Шӳтлевсем:**

Ка-ка-ка, Каврук кайрĕ аякка.
Кĕ-кĕ-кĕ, кĕпе манăн вуниккĕ.
Ки-ки-ки, килсерен пур сан пекки.
Ку-ку-ку, кулассу килсессĕн кул.

**Ытарлăхсем:**

1. Камăн кукка пулас кăмăл пур? (***Куккукăн, вăл яланах «кукку» тесе авăтать.)***

2. Мĕнле вĕçен кайăк ячĕ кутăнла та, пуçăнла та пĕр пекех вуланать? ***(Куккук ячĕ.)***

3. Мĕнле кайăк ячĕ уйрăм çырсан пăсăлать? ***(Курак ячĕ. Уйрăм çырсан — «ку рак» пулса тăрать.)***

**Ятарлăхсем:**

Куккукăн яланах пĕр юрă: — ку-ку! ку-ку!
Кум патне кум кум та кум.
Кушакăн та куштанлăхĕ пур теççĕ.

## КАВĂН

Шӳт

Ах, аппаçăм, савăн,
Ах, пиччеçĕм, савăн —
Эп ӳстертĕм кавăн.

Асра юлма тивĕç
Ман мухтавлă çимĕç —
Кам мĕн калĕ хирĕç?

Кавăн тĕс памарĕ,
Мана тус тумарĕ —
Шурлăхалла кайрĕ.

Халь унпа ир-каçăн
Шапасем выляççĕ —
Шутсăр савăнаççĕ!

## КАЙМАЛ

Акă вĕсем, каймал тĕслĕхĕсем — каялла та, малалла та пĕр пек вуланакан сăмахсем, сăмах çаврăнăшĕсем, предложенисем. Вырăсла вĕсене перевертыши теççĕ.

АККИМ — МИККА АК КУ КУККА АКУЛИ, ИЛ УКА
АК ÇАВ ВАÇКА АННА, АТТА ТАСАТ
АЛЛА, АРА, АЛЛА АЛЛА, АППА, АЛЛА
АНУÇ, ТЫТ ÇУНА АРАРАТ, ТАР АРА
АРОНИК КИНОРА АÇУ ХУÇА АТНУ КУНТА
АХ-АХ-АХ Е ХА-ХА-ХА АХ, МАРУКА КУРАМ-ХА
АХ, МАÇАК, КАÇАМ-ХА АХ, ТАРУÇ, АЧА ÇУРАТ-ХА

ĂСУ — УСĂ

БОБ, АРА, БОБ

ВАЛЯ — ЯЛАВ ВАЛЯ ТУС, СУТ ЯЛАВ
ВАЛЯ, ТЫТ ЯЛАВ

Г* *(Ку сасăпа каймал тĕслĕхне хăвăр тупăр.)*

ДОХОД, АРА, ДОХОД

ЕЛЕ-ЕЛЕ, ЕЛЕ-ЕЛЕ Е, КĔРĔК ВАÇЛИ, ИЛ ÇАВ КĔРĔКЕ

Ё-Ё-Ё

ЁРТИÇ АЛЛА ÇИТРĔ ЁРТИÇ, АППА ÇИТРĔ

Ж* *(Ку сасăпа каймал тĕслĕхне хăвăр тупăр.)*

ЗАКАЗ

ИРА ТУС, КЁРЁК СУТАР-И?

ЙУТ — ТУЙ

КАЗАК КАЗАК ҪЕҪ КАЗАК КАРУК ТУС, СУТ КУРАК
КАРУК, ТЫТ КУРАК КĂТĂК У КĂТĂК
КИНТУШ — ШУТНИК
КИС-КИС-КИС, СИК-СИК-СИК КУККУК
КУККУК ТЕТ КУККУК КУ ҪАВ ВАҪУК
КУҪ, КУҪУК — КУҪУК ҪУК
КУҪРА ХЁРЁХ КУҪУК ҪУМРА АРМУҪ

ЛЕШ ҪЕҪПЁЛ ЛЁП ҪЕҪ, ШЕЛ ЛИНА, АН ИЛ
ЛИНА, КЁРЁК АН ИЛ

МАДАМ МАДАМ ТЕТ МАДАМ
МАКРУҪ, ТЫТ ҪУРКАМ МИКУҪ ҪУК-ИМ
МУСКАВ-ВАК СУМ МУК ТЕТ КУМ

НАРАТ ТАРАН НАРКУҪ АЧА ҪУКРАН
НАХХАЛ, ТЫТ ЛАХХАН НАЧУК, ТЫТ КУЧАН
НУХРАТ Е ТАРХУН

ОХ-ОХ-ОХ, ХО-ХО-ХО

ПАЛЛАП, АРА, ПАЛЛАП ПАЛЛАХ, ХАЛЛАП
ПУХ, АННА, ХУП

РАДАР РАСНА АН САР

САКНА ҪЕҪ АН КАС САТРАП, ТЫТ ПАРТАС СĂВĂС
СĂМАХ — ХАМ ĂС СУТ ЯЛАВ ТЕТ ВАЛЯ ТУС

ҪАК ЕННЕ КАҪ ҪАК КАҪ ҪЁВЁҪ, АРА, ҪЁВЁҪ

ТАРАС, КЁРЁК САРАТ ТУР УТ ТУС, АЛА СУТ
ТУ ЕННЕ УТ ТЫТ-ХА, АППА, АХ, ТЫТ

УҪ, ПАРАП ҪУ

ӲСЕВЕ СӲ

ФУ ТЕТ УФ ФУТ, АРА, ТУФ

ХАМАХ, АРА, ХАМАХ ХĂНĂХ, АРА, ХĂНĂХ
ХЕЛИНА, АН ИЛЕХ ХУТ ПАРАП, ТУХ

ЦЫЦ ЦЫЦ, АРА, ЦЫЦ

ЧАЛУК Е КУЛАЧ

ШАЛАШ

ЫХ-ЫХ-ЫХ Е ХЫ-ХЫ-ХЫ

ЭХ-ЭХ-ЭХ Е ХЭ-ХЭ-ХЭ

Ю-Ю

ЯЛАВ — ВАЛЯ ЯЛАВ ТЫТ, ВАЛЯ

# КАЛАШСЕМ

Ăнкару

Авалтан асра упранакан ăслăх пĕрчисем халăх пултарулăхĕн пĕр пайĕ шутланаççĕ. Вĕсене тепĕр тĕрлĕ вак жанр тесе те калаççĕ. Вырăс чĕлхинче вĕсене «пословицы и поговорки» теме йышăннă. Халиччен чăваш чĕлхинче вĕсене уйăрса уйрăммăн каламалли ятсем пулман. Малтанхи фольклористсем те çак сăмахсене хăйсенчен çулпа аслăрах юлташĕсенчен çырса илнипе вĕсене «ваттисен сăмахĕсем» тенипех çырлахнă. «Ваттисен сăмахĕсем» (слова старых людей) тени вара пире халĕ туллин çырлахтараймасть. Терминласа каланă ятарлă сăмахсем кирли сисĕнсе тăрать. Калашсемпе тенешсем тени пур енчен те çырлахтарать. Калашсем — пословицы, тенешсем — поговорки. Кун пек калани çав сăмах çаврăмĕсене уйрăмшарăн тĕпчеме те май парать. Çапла вара, ман шутпа:Калашсем — ăс парса е вĕрентсе каланă сăмахсем, Тенешсем — техĕм парса илемлетнĕ сăмах çаврăмĕсем.

# КАЛАШСЕМ

Авланиччен ӳсмелле,
Авлансассăн — тӳсмелле.
Ăсу пулсан ăсла ĕç,
Ăс пулмасан ан та ĕç.
Балдайпала çӳретĕн —
Балдай сĕмне илетĕн.
Вăййа тухсан хăраххăн
Вăйă иртет вăраххăн.
Геркулес пулсан, паллах,
Герострат та пулмалла.
Д сас палли пĕлмен чух
Доклад тесе çырма çук.
Ева тесе çырнă чух
Е сас палли питĕ чух.
Ё сас палли чăрăша
Ёлка пулма пулăшать.
Ĕçкĕпеле иртĕхсен
Ĕçлĕхрен тухса ӳкен.
Йăвашланса ларнă чух
Йывăрлăхран тухма çук.
Калама çук кирлĕ чух
Катăк чул та тупма çук.
Лайăх лаша çул юсать,
Латсăр лаша çул пăсать.
Малтан мала утмалла,
Маттур ача пулмалла.
Никама та усă çук
Ним тумасăр ларнă чух.
Ока хĕрне çитмесĕр
Ока шывне ĕçеймĕр.
Пĕлсе çырнă кĕнеке
Питĕ сумлă кĕреке.
Районтан килсен хăна
Ратлансах ал пар ăна.
Сăвă пултăр кăварлă,
Сăмах пултăр сăнарлă.
Çичĕ сăмах каличчен
Çивчĕ кала пĕр хутчен.
Туслăх — хаклă мул, тупра,
Туслăха куç пек упра.
Ухмаха ăс парасси —
Ухватпа пус чавасси.
Ӳкĕнсен те çĕр хутчен
Ӳхĕ пулмĕ ӳпререн.
Факир ятне илмесĕр
Фрак тăхăнни илемсĕр.
Хуть те çурăл, хуть те çун —
Хутсăр ним те тума çук.
Цирк куратпăр канура,
Циркуль кирлĕ урокра.
Чăнлăх тавра çуралать,
Чăнлăх таврах путланать.

Шухăшпала супатăн —
Шурлăх тĕпне путатăн.
Щедрина вулас пулать —
Щедрин пек пулас пулать.
Ыр çын ятне ярас мар,
Ытла япăх пулас мар.
Элек акса çӳрекен —
Этем ятне çĕртекен.
Юратма пĕлен чĕре
Юрлă мар çут тĕнчере.
Ялан яту пурăнсан
Ялти ватă ятламан.

## КАМА МĔН

Вăрăм майăх — кушака,
Вăрăм хăлха — ашака,
Вăрăм хӳре — калтана,
Вăрăм чĕлхе — айвана.

Çирĕп алă — ачана,
Çирĕп сывлăх — тăвана,
Çирĕп патак — каскăна,
Çирĕп туя — таркăна.

Тулли сасă — юрăçа,
Тулли сăнар — сăвăçа,
Тулли туйăм — пуçлăха,
Тулли пурнăç — халăха.

## КАЛАВ

Йăлхав

Калав вăл — калав,
Калăпланă хайлав —
Калав питĕ кĕскерен
Калас мар-и çĕнĕрен?
— Кала!
Эп те кала, эс те кала,
Эс те кала, эп те кала —
Калав питĕ кĕскерен
Калас мар-и çĕнĕрен??
— Кала!!

Эп те кала, эс те кала,
Эс те кала, эп те кала —
Калав питĕ кĕскерен
Калас мар-и çĕнĕрен???
— Кала!!!
*(Вĕçĕмрен тăсăлать)*

## КАЛАМБУР

**Каламбур** — пĕр пек рифмăсемпе сăвăланнă сăмахсен çаврăмĕ.

**Тĕслĕхсем:**

Ак вĕçекен Тăмана,
Акă хирти тăм ана.
Ăсласа кала, Ăсан,
Ăслăхна ăçтан ăсан?
Баку терĕн каçпала,
Бак у мĕнле япала?
Вăрăмтунашăн вĕçнĕ чух
Вăрăм туна питĕ чух.
Га-га тени илтетĕн:
— Гага тĕкне ил! — тетĕн.
Дора çырать çĕр каçи:
До, ре, ми, фа, соль, ля, си...
Епрем калать — хурама,
Ехрем кулать — хур ама.
Ĕлĕкренех Туçара
Ĕннĕ пекех ту çара.
Ёлка куллен илĕртет,
Ёлка курма килĕр! — тет.
Журнал мĕншĕн çырăнман? —
Журнал çине çыр, ăнман!
Завĕ калать: — Ӳсĕреп.
Замĕ çырать: — Ӳсĕр эп.
Икĕ хутчен Пахатир
Илсе килчĕ паха тир.
Йăвашкелне Михала
Йăтса кайрĕ мих, ала.
Карташĕнчи Такана
Кирлĕ тулли такана.
Ларма хĕрĕ Укçине
Лайăх упрать укçине.
Майра кĕпçи илĕртет —
Мана татса илĕр тет.
Нарастаран çул çине
Нарат тăкать çулçине.
Окçа, окçа тенĕрен
Окçа ӳкмест тĕнĕрен.
Пул! тенипех çăварта
Пулас çук çав çăмарта.

Рак çине пăхса Курак
Ратланса кулать: — Ку — рак!
Савнă тусăм Кĕтерне,
Саван пулсан — кĕт эрне!
Çырас пулсан «каламбур»
Çырса хума калам* пур.
Татах илсе пар, аппа,
Тăхăр сумлăх параппан.
Уках калать «Асатте»,
Улай кулать: — Ас, атте!
Укаç карчĕ шăналăк,
Ун айĕнче шăна лăк.
Ӳкерес мар çул çине
Ӳхлем курăк çулçине.
«Фонтан» терĕ вăл мана,
«Фон тан» терĕм эп ăна.
Хĕр астартăм çĕрĕпе
Хĕрлĕ куçлă çĕрĕпе.
Це-це! тени йĕплени,
Цеце тени чир шăни.
Чĕмсĕр этем чĕринче
Чĕрĕлĕ-ши чĕренче**?
Шерте çинчи Шăнкăрчă
Шĕвик-шĕвик шăхăрчĕ.
Щетка питĕ çĕнĕрен
Щеткăлам-ха çĕнĕрен.
Ыраш вырма тухнă чух
Ыр аш çини питĕ чух.
Элес-мелес Элекçи,
Эс те пĕрре элек çи.
Эмеллентĕм çăвĕпе
Эпĕ пулă çăвĕпе.
Юлашкинчен юлташла,
Юлташ, эсĕ юл, ташла!
Ялухха, нарастаран
Ял тавра нарат саран.
Яшка*** пĕчек пулсан та
Яшка çиме юрататъ.

---

* Калам (калем) — перо.
** Чĕренче — чĕрсе тунă хăма.
*** Яшкă тесе вуламалла.

## КАМ ВӐЛ

Шӳт

Арӑслан халь король мар,
Арӑслан халь патша мар,
Арӑслан халь кам иккен?
Кам-ха пултӑр —
Президент!

## КАРАС КӲЛЛИ

Кӗскев

Кавалкасси ҫӗрӗнче,
Калай кати хыҫӗнче,
Карас кӳлли пулнӑ тет.
Кӗске юмах пӗтрӗ те!

*(Юмахҫӑ калаҫма чарӑнать.)*

## КАҪПАЛА

Шӳт

— Кӗпер урлӑ КАҪ,
Кӗпер урлӑ ПА,
Кӗпер урлӑ ЛА, —
Кӗпер урлӑ КАҪПАЛА
Мӗнле майпа КАҪМАЛЛА?

— Кӗпер урлӑ КАҪ,
Кӗпер урлӑ ПА,
Кӗпер урлӑ ЛА,
Кӗпер урлӑ КАҪПАЛА
Михӗ йӑтса каҫмалла!

— Кӗпер урлӑ каҫпала
Ма михӗпе каҫмалла?
— Каҫас пулсан михӗпе
Курӑнатӑн ӗҫлӗ пек.

## КАЧАШКА

Кулмӑш

Калама ҫук ачашка
Каҫӑр пуҫлӑ Качашка,
Кашни кунах кавсӑлать —
Купӑсташӑн кастарать.

Кукар парсан та тиркет —
Кукар шăрши япăх тет,
Кукăль парсан та тиркет —
Кукăль сăмси хытă тет.

Кулач парсан та тиркет —
Кулас шутпа патăн тет,
Кучан парсан та тиркет —
Куштан этем çитĕр тет.

Калама çук ачашка
Каçăр пуçлă Качашка,
Кашни кунах хирĕçет —
Кушак пăрçи кирлĕ тет.

## КĂ-КĂ-КĂ

Кулмăш

Каруксем пулаççĕ тĕрлĕрен,
Тĕрлĕрен пулаççĕ Каруксем:
Кураксем тытаççĕ пĕрисем,
Теприсем тытмаççĕ Кураксем.

Кураксем пулаççĕ тĕрлĕрен,
Тĕрлĕрен пулаççĕ Кураксем:
Курăксем çиеççĕ пĕрисем,
Теприсем çимеççĕ Курăксем.

Курăксем пулаççĕ тĕрлĕрен,
Тĕрлĕрен пулаççĕ Курăксем:
Куянсем тытаççĕ пĕрисем,
Теприсем тытмаççĕ Куянсем.

Куянсем пулаççĕ тĕрлĕрен,
Тĕрлĕрен пулаççĕ Куянсем:
Кулянма пĕлеççĕ пĕрисем,
Теприсем —
явапсăр Явăлсем!

## КĂТКАЙ

Калаçу

— Кăткай тусăм, кала-ха,
Ма сăхатăн халăха?
— Ма курмастăн эс чăна;
Эп сăхмап, çыртап кăна.
— Каласам апла пулсан

Халăха эс ма çыртан?
— Чухлама пĕл чăнлăха —
Эп çыртни çынна паха.
— Апла пулсассăн кил,
Мана та эс çыртса ил!
— Апла пулсан килем —
Сых ятне çыртса илем.

## КĔРĔК

Кăмăл

Сарă сурăх тирĕнчен
Сарă кĕрĕк çĕлĕпĕр —
Сарă хĕрсем умĕнче
Саркаланса çӳрĕпĕр.

Хура така тирĕнчен
Хура кĕрĕк çĕлĕпĕр —
Хура хĕрсем умĕнче
Хуçкаланса çӳрĕпĕр.

Шурă така тирĕнчен
Шурă кĕрĕк çĕлĕпĕр —
Шурă питлĕ хĕрсене
Шуйхантарса çӳрĕпĕр.

## КИНТУШ

Шӳт

Пĕррехинче ман умма палламан çын пырса тăчĕ. «Эпĕ — Кинтуш, — терĕ вăл, — сана телейлĕ пурнăç пиллеме пултаратăп. — Аванччĕ ун пек пулсан, — терĕм эпĕ. Кинтуш мана çакăн пек сăвă каласа пачĕ.

Анаталла чуп —
Аçа чулĕ туп,
Куçна уçса хуп —
Ункă вĕçне туп.

Вара пурнăçу
Пулĕ пыл та çу!
Кун пек ăнăçу
Урăх пулас çук.

Кинтуш ятне кутӑнла вуласа пӑхрӑм та пӗтӗмпех ӑнлантӑм: вӑл мана шӳтлӗ сӑвӑ каласа панӑ иккен. Ачасем, ункӑ вӗҫне курнӑ-и эсир? Курман пулсан шыраса пӑхӑр-ха, пур-и вӑл?

Ункӑ пирки ҫакӑн пек сӑвӑ ҫыртӑм:

Ах, ултавлӑ ункӑ —
Кам-ши ӑна тунӑ?
Ун вӗҫне тупасчӗ —
Ырлӑхра пуласчӗ.

## КУЛАС КИЛЕТ

Кулмӑш

Ахӑрса кулас килет,
Макӑрса кулас килет,
Ҫухӑрса кулас килет,
Ашкӑнса кулас килет...

Ахӑрса та эсӗ кул,
Макӑрса та эсӗ кул,
Ҫухӑрса та эсӗ кул,
Ашкӑнса та эсӗ кул —
Ашак ҫеҫ пулса ан юл!..

## КУЛЯНУ

Кулмӑш

Акӑ эпӗ
Пӗр-пӗччен тӑратӑп —
Иккӗленме хӑратӑп:
Иккӗленсе кайсан,
Виҫҫӗленсе кайсан,
Виҫерен тухсах кайсан...
Мӗн пулӗ-ши кайран?
Мораль:
Кайран,
    кайран,
        кайран
Курак сӑхать куҫран.



**Алфавитри** вунпиллӗкмӗш сасӑ палли — **Л.**

Ăна чӑваш ҫырулӑхне 1871 ҫулта кӗртнӗ.

Вӑл ҫапла вуланать: лӑ.

Вӑл ҫапла ҫырӑнать: *(ҫырса кӑтартмалла).*

**Л** ҫак вырӑнсенче тӗл пулать:

сӑмах пуҫламӑшӗнче: *лав, лавҫӑ, лакӑм, лапатка, лар, ларт, лӑп, лӗпӗш, лупас, лупашка...*

сӑмах варринче: *ала, алӑк, алмаз, алса, улӑх, валем, калем, палӑк, пулӑ...*

сӑмах вӗҫӗнче: *авал, кахал, кӑвакал, икел, кӗтмел, кӗмӗл, ҫӗмел, ҫул, тул, хул, чул, шкул...*

**Шӳтлевсем:**

Ла-ла-ла, лайӑх пултӑр малалла.
Лӑ-лӑ-лӑ, лӑпкӑ ҫын тасҫтан паллӑ.
Ле-ле-ле, Левен савать хӗвеле.
Лӗ-лӗ-лӗ, лӗпӗшсем те чӗреллӗ.

**Ытарлӑхсем:**

1. Лев Иванович камӑн инициалӗ-ши? *(Арӑсланӑн.)*
2. «Л» ҫумне пӗчӗк упа хушсан мӗн пулать? *(«Лупашка» пулать. Л + упашка = лупашка.)*
3. Путӑк вырӑна чӑвашсем мӗн теҫҫӗ? *(Лупашка теҫҫӗ.)*

**Ятарлӑхсем**:

Лайӑхлантаракансемпе лайӑхмарлантаракансем — латсӑр вӑрӑм сӑмахсем.

Лавӗ пур пулсан лав хуҫи те тупӑнать.

Леш айккинчи леш хайхисем ку айккине килесшӗн.

5. Заказ № К-1433

## ЛОГИКА

Ăспа-тăнпа уйласси —
Мĕн пуласса чухласси.

1. Варкуш та вĕçет,
Вăркка та вĕçет,
Вĕршĕн те вĕçет,
Вĕçкей те вĕçет...
Ман пĕлес килет —
Вĕçкей ма вĕçет?

2. Савай та вĕçет,
Саврук та вĕçет,
Сайрук та вĕçет,
Самсун та вĕçет...
Ман пĕлес килет —
Самсун ма вĕçет?

3. Çархан та вĕçет,
Çăхан та вĕçет,
Çерçи те вĕçет,
Çиркĕш те вĕçет...
Ман пĕлес килет —
Çиркĕш ма вĕçет?

4. Шапа та вĕçет,
Шăрка та вĕçет,
Шуймак та вĕçет,
Шуйттан та вĕçет...
Ман пĕлес килет —
Шуйттан ма вĕçет?

**Ыйту хуравĕсем:** 1. Санра вĕçкĕнлĕх пулсан ун чух эсĕ те вĕçен. 2. Самолет çине ларсан эсĕ те вĕçен. 3. Çунат пулсан эсĕ те вĕçен. 4. Юмахра пулсан эсĕ те вĕçен.

## ЛАШАПА ШАПА

Юптару

Лачакари мăн Шапа
Тава кĕнĕ Лашапа:
— Мекĕрленсен вăйпала
Танлашатăп санпала.

Лачакари мăн Шапа
Тав пуçланă Лашапа:
Мекĕрленнĕ вăйпалан —
Шап! çурăлнă çурмаран.




**Алфавитри** вунулттӑмӗш сасӑ палли — **М**.

Ӑна чӑваш ҫырулӑхне 1871 ҫулта кӗртнӗ.

Вӑл ҫапла вуланать: мӑ.

Вӑл ҫапла ҫырӑнать: *(ҫырса кӑтартмалла).*

**М** ҫак вырӑнсенче тӗл пулать:

сӑмах пуҫламӑшӗнче: *ма, майка, мӑйӑр, мӑнтӑр, мӑшӑр, мӗн, минтер, михӗ, мыскара...*

сӑмах варринче: *амал, камӑн, кӑмӑл, камбала, кӑмака, тамӑк, ямӑт, хӗсмет, тымар, чама, шампа...*

сӑмах вӗҫӗнче: *арӑм, аҫам, салам, турам, харам, шалкӑм, шӑллӑм, элем, ям...*

**Шӳтлевсем:**

Ма-ма-ма, ма макӑран эс, кумма.
Мӑ-мӑ-мӑ, мӑка чӗлхе чӗр тамӑк.
Ме-ме-ме, Мелисса ҫиет мемме.
Ми-ми-ми, минренӗ ун пуҫ мими.

**Ытарлӑхсем:**

1. Ма макӑрать марал? *(Марал этем мар, макӑрма пӗлмест.)*
2. «М» ҫумне йыхрав сӑмахӗ хушсан мӗн пулать? *(Масар пулать. М + асар = масар.)*
3. Мускав хӑҫан вакланать? *(Кутӑнла вуласан. Мускав = вак сум.)*

**Ятарлӑхсем:**

Макаров Макар Макарович май ҫук маттур макӑрать. *(Шӳт.)*

— Мук-мук-мук! — муклатать ирех ӗне.
— Му-у-у-ук! — хӑратма пӑхать Мумук.

# МАМĂНТ

Авал тенĕ кунсенче,
Ăшă енчи çĕрсенче,
Иртсе кайнă кунсенче
Пурăннă тет пĕр чĕр чун.

Пурăннă та пурăннă —
Пысăк ту пек курăннă,
Çăм купи пек туйăннă
Çав мăнттай чĕр чун.

Çав асамлă ирсенче,
Çав варасăр кунсенче,
Çав хатарлă çулсенче
Ячĕ те пулман-ха ун.

Акăш-макăш мăнăран,
Акăш-макăш пысăкран,
Çăм купи пек пулнăран
Мамăнт тенĕ те ăна.

Айвансене тĕлĕнме,
Ăслисене тĕпчеме,
Тĕпчесе чăнне пĕлме
Юлнă ун хапи кăна.

Аваллăхран юлнисем:
Пысăк шăмми-шаккисем,
Тата çăмлă тирĕсем
Упранаççĕ музейре.

Музее кайса курма,
Музее кĕрсе курма,
Музее çитсе курма
Ман сĕнес килет сире.

# МАНĂН ХУЛА

Гимн

Çамрăк сăнлă Çĕнĕ Шупашкарăм,
Вăй илсе пыратăн кунсерен.
Эп сана чунтан савса ырларăм,
Эп сана юратрăм чĕререн. } *2 хут*

Çепĕç тумлă Çĕнĕ Шупашкарăм,
Сан çине пăхса чун савăнать.
Çĕнелсе пыратăн эс хăватлăн,
Санра халăх вăйĕ курăнать. } *2 хут*

Çĕнĕ сумлă Çĕнĕ Шупашкарăм,
Курнине шанмасăр тĕлĕнен.
Юмахри майпа ӳсме пуçларăн,
Халапри пек хăвăрт çитĕнен. } *2 хут*

Çĕр пин йышлă Çĕнĕ Шупашкарăм,
Эсĕ тивĕç вăрăм ĕмĕре.
Юррăма сана эп халалларăм,
Сан яту янратăр кĕвĕре. } *2 хут*

Чĕрĕ чунлă Çĕнĕ Шупашкарăм,
Саншăн эп çухатрăм канăçа.
Чунăмпа сана савса юрларăм,
Саншăн парăп хамăн пурнăçа! } *2 хут*

## МОЙ ГОРОД

Гимн

Юный город Новочебоксарск мой,
С каждым днем ты набираешь сил.
Прикипел к тебе я всей душою,
Я тебя всем сердцем полюбил. } *2 раза*

Распрекрасный Новочебоксарск мой,
Мой родной, уютный добрый дом,
На крутой высокий берег Волги
Вознесенный доблестным трудом. } *2 раза*

Светлый город Новочебоксарск мой,
Словно сказка к нам пришла сама, —
Как грибы, под солнцем с каждым годом
Вырастают новые дома. } *2 раза*

Многолюдный Новочебоксарск мой,
Честь твоя и слава на века:
Пусть растут и ширятся по миру,
Как река растет из родника. } *2 раза*

Чистый сердцем Новочебоксарск мой,
Пой, живи, расти и хорошей.
Жизнь моя, судьба моя, мой город —
Вечная мелодия в душе! } *2 раза*

*Переводчик Н. Альтинг*

## МАÇАКПА МĂНУК

Мыскара

Анаткасра-кĕтесре Маçакпа Мăнук пурăннă. Пурăннă та пурăннă — пур енчен те курăннă.

Пĕррехинче çаксем — Маçакпа Мăнук — Çатракасси ялне хăнана кайма тухнă. Икĕ ял хушши ытла инçех те мар, ытла çывăх та мар, çапах та каймалăх пур. Малтанхи çухрăма çулçўревçĕсем чиперех утса тухнă темелле. Анчах та Çатракасси патне çитнĕçемĕн вĕсен шăм-шакĕ йывăрланнă. Маçак, ватă пулсан та, ура çинче çирĕп тăнă. Мăнукĕ вара пусмассерен такăнма пуçланă. Кĕçех вăл хавшасах çитет.

— Йăт-ха мана, Маçак! — сас парать çамрăкки.

— Мĕн пулчĕ тата? — ыйтать ватти.

— Мĕн пултăр — пушмак ывăнса çитрĕ!

— Пушмаку кăна ывăнни темех мар-ха вăл. Мĕнех, пушмаку ывăнчĕ пулсан та вăй çитнĕ таран малаллах тапаçлан, сана уншăн каярахпа ывăнман пушмак илсе парăп.

— Ун пек пушмак та пур-и вара?

— Ывӑнакан пушмак пур пулсан ывӑнман пушмакӑн ма пулас мар? Ун пек пушмак та пур, мӑнукӑм.

Ҫапла калаҫкаласа утнӑ май ваттипе ҫамрӑкки Ҫатракасси умнех ҫитсе тӑраҫҫӗ.

Яла кӗреспе ӗшенни те, ывӑнни те иртсе каять.

## МАШИНА

Ак хускалчӗ машина —
Вӑрӑм ҫул кӗтет ӑна:
— Ша-ша-ша, ша-ша-ша,
Вӗҫтеретпӗр Канаша!

Аслӑ ирӗк ҫулпала
Ярӑнатпӑр малалла:
— Ши-ши-ши, ши-ши-ши,
Ҫулӗсем ҫатма йышши!

Ак ҫитерчӗ те пире
Машина ҫитес ҫӗре:
— Ше-ше-ше, ше-ше-ше,
Канаш питӗ килӗшет!

## МӖН КИРЛӖ

Пуҫ вататӑп каҫлӑ-ирлӗ,
Тӑрӑшатӑп ӑнланма,
Пурӑнмашкӑн мӗн-ха кирлӗ,
Мӗн-ха кирлӗ пурӑнма?

Пурӑнмашкӑн сывлӑх кирлӗ,
Сывлӑш кирлӗ сывлама,
Чун-чӗре пулсассӑн чирлӗ
Питӗ йывӑр пурӑнма.

Пурнӑҫра туссем те кирлӗ,
Кирлӗ лайӑх пӗлӗшсем,
Пӗр-пӗрне пӗлни те кирлӗ
Пурӑнас тӑк килӗшсе.

Пурӑнмашкӑн пурте кирлӗ,
Пурте кирлӗ пурӑнма,
Ӑс та кирлӗ, тум та кирлӗ
Ҫын сӑнарлӑ курӑнма.

Улӑхпа вӑрман та кирлӗ,
Кирлӗ сарӑ тулӑ та,

Кăмăла уçмашкăн кирлĕ
Пархатарлă кулăш та.

Кашни çын хаваслă култăр,
Юхтăр юрă каç та ир,
Çут çанталăк сывă пултăр —
Сывă пулăпăр эпир!

## МУХТАВЛĂ МУЛКАЧ

Юмах

Ака пĕтсен пĕр илемлĕ ирхине çула тухнă Мулкач мул хутаççи тупать. Тупать те ăна хулпуççи урлă уртса килнелле каскать. Çул кукрине çитсенех ун умне Кашкăрпа Упа сиксе тухаççĕ, пĕр сăмах каламасăрах унăн хутаççине туртса илеççĕ. Мĕн тумалла Мулкачăн? Аптранă енне:

— Парăр хутаçça, — йăлăнса ыйтать Мулкач.

Лешсем памаççĕ.

— Парăр хутаçça, — тет Мулкач иккĕмĕш хут.

Лешсем памаççĕ.

— Парăр хутаçça! — кăшкăрсах ярать Мулкач ним тăвайман енне.

— Памасан вара... — лĕх-лĕх кулаççĕ лешсем.

— Унсăрăн каллех пĕркунхи пек пулса тухать акă!!!

Кашкăрпа Упа пĕр-пĕрин çине кăн-кан пăхса илеççĕ те мул хутаççине васкасах каялла тавăрса пapaççĕ.

Мулкач хутаççине хул урлă уртса хăйĕн çулĕпе малалла васкать.

Çавăнтах:

— Эй, Катăк тута, пĕркун мĕн пулнăччĕ вара!? — хыçалтан кăшкăрса ыйтаççĕ Кашкăрпа Упа, çамрăк Мулкачăн сăмахĕсене ăнланса илеймесĕр.

— Пĕркун çапла пулнăччĕ: тупăннă тупрана туртса илнĕччĕ те каялла паманччĕ...

Кашкăрпа Упа çăвар карса юлаççĕ.

Мулкач киле май утать.

Çав кунран пуçласа Мулкач çинчен Мухтав юрри юрлама тытăнаççĕ. Халь те пулин юрлаççĕ.

Мухтав сана, Мулкачă,
Хăюлăхшăн мухтав.
Мухтав сана, ыр каччă,
Ытарлăхшăн мухтав!




**Алфавитри** вунҫиччӗмӗш сасӑ палли — **Н.**

Ӑна чӑваш ҫырулӑхне 1871 ҫулта кӗртнӗ.

Вӑл ҫапла вуланать: нӑ.

Вӑл ҫапла ҫырӑнать: *(ҫырса кӑтартмалла).*

**Н** ҫак самантсенче тӗл пулать:

сӑмах пуҫламӑшӗнче: *нар, нарӑс, насус, нӑрӑ, нӑхта, ниме, нумай, наҫилккe, нухрат, нуша...*

сӑмах варринче: *ана, Анюк, Ванюк, пӑнчӑ, пиншак, туна, тунсӑх, тына, уначӑ, хунар, чиновник, чун...*

сӑмах вӗҫӗнче: *ан, ван, вӗлтӗрен, вӗрен, йӗвен, кӗсмен, писмен, сӗрен, тӗрен, чикан...*

**Шӳтлевсем:**

На-на-на, Наҫта кайнӑ хӑнана.
Не-не-не, Неҫтӗр килет виҫмине.
Ни-ни-ни, нимӗр ҫиет кӗҫӗнни.
Ну-ну-ну, нушара ҫук ӑмсану.

**Ытарлӑхсем:**

1. «Н» ҫумне тӗс хушсан мӗн пулать? *(Савӑт-сапа ячӗ пулать. Хура + н = хуран.)*
2. «Н» хыҫне хӗрҫын ячӗ хушсан мӗн пулать? *(Юхан шыв ячӗ пулать. Н + Ева = Нева.)*
3. Нухрат мӗнпе ытарлӑ? *(Кутӑнла вуласан сиплӗ шыв ячӗ пулать.)*

**Ятарлӑхсем:**

1. Нарастаран — наратран пуҫласа нарӑс таран.
2. Наянпала кахала намӑспала пахала.
3. Нушапа нуша улӑштарни нуша кӑна.

## НАРТĂКСЕМ

Анчăк тусăм, ан хамлат,
Нартăксене ан хăрат.
Кăвакалсем-нартăксем
Унсăрах хавшак чунсем.

Вĕсем питĕ сыхланаççĕ,
Питĕ хытă упранаççĕ —
Çавăнпа çеç çĕр çинче
Пурăнаççĕ.

## НĂРККА

Шӳт

Нăркка куллен çапла калать хуллен,
Çапла калать хуллен:
— Аванни —
Сыснасем нăрăхлатни,
Çавăнпа мĕн пĕчĕкрен
Нăрăх! тетĕп вĕçĕмрен.

## НĔРЧĔК*

Апăрша тăмани тепĕр чухне кун çутипех яла вĕçсе килетчĕ те сасартăк хăрушшăн кăшкăрашма тытăнатчĕ.

— Инкек пуласса ку! — тетчĕç ун пек чухне ял çыннисем.

Нĕрчĕк халăха пулăшма килнине ăнланасшăн пулман çав ун чухнехи тĕшмĕшлĕхрен хăтăлайман ял çыннисем. Мĕне пĕлтерет-ха нĕрчĕк ял хушшинех вĕçсе килни? Ăслă çынсем каланă тăрăх, нĕрчĕк вĕçсе килни ялта йĕке хӳресемпе шăшисем йышланнине пĕлтерет-мĕн.

Теприсем çапла та шутлаççĕ: вĕçен кайăкăн чĕрни çивчĕ пулсан — ăна вĕлермелле, тĕп тумалла, мĕншĕн тесен вăл çăткăн кайăк, усал тăшман. Çапла тăваççĕ те нумай чухне: е кайăкне вĕлереççĕ, е йăвине тустараççĕ. Айăпсăр вĕçен кайăк пусне çухатать, ун вырăнне чăннипех те çăткăн та усал чĕр чунсем ĕрчеме тытăнаççĕ. Йăнăш тăвас мар тесен пурнăçри пулăмсене ăнланас, çут çанталăк хавалне чухлас пулать. Çăткăн вĕçен кайăксенчен нумайăшĕ сиенлĕ хурт-кăпшанкăсемпе тăранса пурăнать, тавралăха тата ял хуçалăхне пысăк усă кӳрет. Пĕр тăмана, сăмахран, çулталăк хушшинче пĕр тонна таран пĕрчĕллĕ тыр-пул перекетлесе хăварма пулăшать. Арифметика ансат кунта: сăмахран, пĕр шăши çемйи талăкне пĕр килограмм тĕштырă çисе яма пултарать пулсан, вĕсене сăтăр тума чарсан пĕр тонна тĕштырă перекетленет. Ку ĕçре вĕçен кайăксен тӳпи пысăк, çав шутрах НĔРЧĔК ятлă тăманан та.

Сывă пултăр пĕчĕк Нĕрчĕк —
Сыхлама пĕлет вăл пĕрчĕ.

---

* Нĕрчĕк — тăманасен пĕр тĕсĕ: пĕчĕк тăмана, хырлăх тăмани. Вырăсла — неясыть. Нĕрчĕк питĕ усаллă вĕçен кайăк.



**Алфавитри** вунсаккăрмĕш сасă палли — **О**.

Ăна чăваш çырулăхне 1926 çулта кĕртнĕ, унччен те ку сасă паллипе И. Я. Яковлев усă куркаланă.

Вăл çапла вуланать: оо.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**О** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: ***Октавиан, октябрь, орден, отряд, охра, отметка, офицер, офорт...***

сăмах варринче: ***кобра, кролик, моряк, мотор, мотоцикл, нота, поляк, посол, ротор, сода, эпос...***

сăмах вĕçĕнче: ***звено, пальто, радио, перо, рондо, сольдо, сопрано, фото, шапито...***

**Шӳтлевсем:**

Ой-ой-ой, Олег паян тĕп герой.
Оп-оп-оп, опоздали — стоп!
Ос-ос-ос, Ослора паян хаос.
Оç-оç-оç, Оçка тусăм, хапха оç! *(Шӳт.)*

**Ыталăхсем:**

1. «Ол райт!» тени мĕн тени? *(«Питĕ лайăх!» тени.)*
2. «Опиçан» тесе камсем калаççĕ? *(Тури чăвашсем.)*
3. Ош хули мĕнпе ытарлă? *(Ун пек кĕске ятлă хула урăх çук.)*

**Ятарлăхсем:**

Ахлатни те ахах мар, охлатни те охра мар.
Охломонпа Соломон икĕ тĕрлĕ чемпион.
Охмах шӳтле сăмах кăна вăл! — терĕ тет пĕри.

# ОМОНИМ

Алфавит йĕркипе сăвăсем çырса тухрăм. Кашни сăвăра пĕр пек илтĕнекен мăшăр сăмахсем пур. Çав сăмахсем пĕр пек илтĕнсен те кашни сăмахăн пĕлтерĕшĕ хăйне уйрăм. Çавнашкал сăмахсене ОМОНИМ теççĕ. Омоним мăшăрĕсене уйрăм хут çине çырса илĕр те вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарса парăр. Кам маларах ĕлкĕрет — çав çĕнтерет. Астутарни: ятарлă ятсене пысăкпа (пысăк сасă паллипе) пуçласа çырнă.

Арлан калать Ăмана: — А сана тăк, Ă мана!
  Ăсана парсан Ăса — Ăсан кĕрĕ-ши ăса?
Вĕрене тип çулçине веçех тăкать çул çине.
  Герой ялан герой мар, Герой тепĕр чух — сăнар.
Дом мод тетпĕр вырăсла, Дом мод тетпер — чăвашла.
  Евчĕ шутне хурăна ешĕл тумлă Хурăна?
Ё сас палли Чăрăша Ёлка пулма пулăшать.
  Ёнене эс ан хĕне — ĕнӳ кайĕ сан хĕне.
Жан килчĕ те хупахран жан! тутарчĕ хапхаран.
  Зинук курнă Хурама, Зинук курнă хур — ама.
Ирпе тăрсан Ирккана ирис патăм: — Иркка, на!
  Йыхравлатăп пурсăра — йыш пухмалăх пур сăра!
Каласа парсам, Çĕлен, кун каçипе мĕн çĕлен?
  Лаçça кĕрсен Лариван Люçça калать: — Лар, Иван.
Мана калать Михала: — Мана пар тет мих, ала.
  Ник-ник Никантăр, ни пуса эс, ни кантăр!
Океан пулли О мар, океан пулли — Омар.
  Пир тĕртмелли ăсана Пурис сĕнет Ăсана.
Рак вăл çынна вĕлерет, Рак хĕскевпе хĕстерет.
  Савăнать-ши Сарана сиплĕ пулсан сар ана?
Çăвар лаши — Çăпала çырăнать шав Ç-пала.
  Тара-тара Таракан — тĕттĕм çĕре таракан.
Урапа ĕçленĕ чух Урапа тума май çук.
  Ӳлĕмрен ан çи пăрçа, ӳтренех сăхать Пăрça.
Ӳсĕр эп тет ĕçнĕ çын, Ӳсĕреп тет шăннă çын.
  Филимон лимон тытать, Фи, лимон! тесе хурлать.
Хĕрлĕ куçлă çĕрĕпе хĕр вылярĕ çĕрĕпе.
  Цеце — ыйхă чирĕ вăл,
Це-це çав чир шăни вăл.
  Чула чунпа чутлан та чун кĕртетĕн чула та.
Чанана калать Чана: — Чутла кĕçĕр çак чана!
  Шăналăк çăвар карать — шăна лăк кĕрсе тулать.
Щи пулать йӳç курăкран, щи пулать купăстаран.
  Ывăтас мар ырана, ыран тăвас ырана.
Эскам çине пăхатăп — «Эс кам?» тесе ыйтатăп.
  Юмахларăм Юманпа: — Ю санпа мар, Ю манпа!
Якку килсе кĕрес пек, Як ку! тесе калас пек.




**Алфавитри** вунтӑххӑрмӗш сасӑ палли — **П**.

Ӑна чӑваш ҫырулӑхне 1871 ҫулта кӗртнӗ.

Вӑл ҫапла вуланать: пӑ.

Вӑл ҫапла ҫырӑнать: *(ҫырса кӑтартмалла)*.

**П** ҫак вырӑнсенче тӗл пулать:

сӑмах пуҫламӑшӗнче: ***Павӑл, пакша, палан, пӑлан, пӗве, пике, пилӗк, пиллӗк, пурӑш, пыр...***

сӑмах варринче: ***аппа, капан, кӑпка, кӗпе, кӗпер, купа, тупа, хыпар, чӑпар, шупка, япшар...***

сӑмах вӗҫӗнче: ***асап, калӑп, карап, лап, сӑвап, тӑлӑп, туп, улӑп, услап, хӑлӑп, шулап...***

**Шӳтлевсем:**

Па-па-па, Павӑлпа тус ман аппа.
Пӑ-пӑ-пӑ, Пӑвара лавкка хупӑ.
Пӗ-пӗ-пӗ, пӗкӗ пек тӳрӗ эпӗ. (Шӳт.)
Пи-пи-пи, пикенсех ӗҫлер эппин.

**Ытарлӑхсем:**

1. Палӑк варринче мӗн пур? ***(«Палӑк» сӑмах варринче «алӑ» е «л» пур темелле.)***
2. «Пиллӗк» сӑмахра мӗншӗн икӗ «л» ҫыратпӑр? ***(Унсӑрӑн пиллӗк вырӑнне пилӗк пулса каять.)***
3. Пукан варринче мӗн пур? ***(«Пукан» сӑмах варринче «ука» пур.)***

**Ятарлӑхсем:**

Паянхи Павӑлсем пакӑлтатсах пайра пуласшӑн.
Пысӑкран та пӗчӗк пулать, пӗчӗкрен те пысӑк пулать.
Пур пулсассӑн пуҫӑнта — пурте пулӗ умӑнта.

## ПАРАППАН

Пат-пат параппан,
Пантăртатать пит аван.
Пантăртатма тытăнсан
Пушă вăхăт çук та сан!

Пат-пат параппан,
Паттăрланса айкашан.
Выртакана вăратан,
Ларакана тăратан,
Тăракана ташлатан,
Умри ĕçне мантаран.
Умри ĕçе мантаран —
Чун-чĕрене кантаран.

## ПĂРИ ПĂТТИ

Юмах

Пакша майри ир çинче
Пăри пăтти пĕçерет,
Хăвăл çăка айĕнче
Хăнисене çитерет.
Акăш çисе пăхать те:
— Акăш-макăш сиплĕ тет.
Ăсан çисе пăхать те:
— Ăс каймалла тутлă тет.
Вăркка çисе пăхать те:
— Вăй хушакан çимĕç тет.
Вĕршĕн çисе пăхать те:
— Витĕр лайăх пиçнĕ тет.
Карăш çисе пăхать те:
— Калама çук аван тет.
Куккук çисе пăхать те:
— Кун пеккине курман тет.
Пăчăр çисе пăхать те:
— Пăтăран та пăтă тет.
Пурăш çисе пăхать те:
— Пур апатран тутлă тет.
Чакак çисе пăхать те:
— Чаплăран та чаплă тет.
Чĕкеç çисе пăхать те:
— Чĕлхе çăтса ярăн тет.
Ыйхан вĕçсе пырать те:
— Ыйтас килсе кайрĕ тет.
Ырă çимĕç пĕçерме
Пĕлетĕр-ши эсир? — тет.

## ПĔЧЧЕН

Шӳтлев

Апат çисессĕн çупала
Тухса эп утрăм çулпала.
Малалла утаттăм чиперех —
Манпала тĕл пулчĕ Чĕмере.
— Эсĕ, — терĕ мана çак ăнман, —
Хуса яр Мĕлкӳне çумăнтан!
— Ку мĕнле вирелле калаçу —
Ни тăван, ни тăшман манăн çук.
— Сан çумра çум çакки мĕлке пур,
Ун çине эс халех сурса хур!
— Ах, Мĕлкеçĕм-Мĕлке, санпала
Уйрăлма тиветех пулмалла...
Хирĕçмерĕ Мĕлке манпала —
Тапса сикрĕ çулпа каялла.
Хуса ятăм çумри Мĕлкене,
Тăрса юлтăм хире пĕчченех.
Халь кампа калаçса йăпанас,
Халь кампа тунсăха пусарас?!.
Ах, Мĕлкеçĕм-Мĕлке, пит кичем
Пурăнма тĕнчере пĕр-пĕччен!!!

## ПИРĔН ЯЛĂН

Пирĕн ялăн ачисем
Пурте ахах пĕрчисем.
Пĕрре пăхма пăхăр пек,
Тепре пăхсан кĕмĕл пек.

Пирĕн ялăн ваттисем
Пурте вăхăт хуçисем.
Вăхăчĕпе ĕçлеççĕ,
Вăхăчĕпе канаççĕ.

Пирĕн ялăн каччисем
Пурте пурнăç ачисем.
Ĕçлеме те пĕлеççĕ,
Савăнма та пĕлеççĕ.

Пирĕн ялăн хĕрĕсем
Пурте яштак пӳллисем.
Çунатланса ӳсеççĕ —
Çын куçĕнчен ӳкмеççĕ.

Ял халăхĕ яла май.
Ятлă çынсем хăйне май.
Ял илемне пăсмаççĕ —
Ял йăлине упраççĕ.

# ПСЕВДОНИМ

Псевдоним — грек сăмахĕ, вăл вăрттăн е суя хушамат, ят тенине пĕлтерет. Унпа ытларах артистсемпе çыравçăсем усă кураççĕ. Сăмахран: Антоша Чехонте — А. П. Чехов псевдонимĕ.

Псевдоним тĕслĕхĕсем:

**Алакер** — Осипов Василий Осипович, писатель, драматург.
**Ăсахай** — Васильев Николай Васильевич, ачасемшĕн çыракан сăвăç.
**Борлен** — Тихонов Борис Леонтьевич, журналист, поэт.
**Вантер** — Комиссаров Гурий Иванович, литератор.
**Голпар** — Голицын Павел Арсентьевич, журналист.
**Добров** — Агаков Леонид Яковлевич, писатель.
**Евстах** — Евстафьев Николай Филиппович, писатель, поэт.
**Ёжиков** — Васильев Николай Васильевич, ачасемшĕн çыракан сăвăç.
**Ĕçехей** — Ĕçкĕпе туслă çыравçăсен псевдонимĕ, кулса панă ят.
**Желтов** — Михаил Саррин чăн-чăн хушамачĕ.
**Захрай** — Захарова (Петрова) Раиса Васильевна, журналист.
**Иакинф** — Бичурин Никита Яковлевич, литератор, синолог, тĕпчевçĕ.
**Йăптăх** — Терентьев Тимофей Терентьевич, сăвăç, ялкор.
**Кăлкан** — Антонов Александр Дмитриевич, писатель, драматург.
**Лашман** — Авксентьев Степан Митрофанович, прозаик.
**Малгай** — Григорьев Иван Григорьевич, паллă сăвăç.
**Нямань** — Юрьев Михаил Иванович, литератор, сăвăç.
**Осенин** — Падиаров Николай Осипович, журналист, ялкор.
**Пайраш** — Садиков Кузьма Ильич, врач, писатель.
**Раштав** — Перов Иван Николаевич, журналист.
**Савкай** — Кондратьев Вячеслав Николаевич, журналист.
**Çеçпĕл** — Кузьмин Михаил Кузьмич, чăвашсен паллă поэчĕ.
**Талвир** — Башкиров Алексей Филиппович, прозаик.
**Упамăс** — Медведев Алексей Фомич, писатель, прозаик.
**Ӳлĕмхи** — Пуласлăх çыравçин хушма ячĕ, ырласа панă ят.
**Фомина** — Димитриева Альбина Димитриевна, журналист.
**Хурнай** — Митрофанов Михаил Иванович, журналист, литератор.
**Цеппеш** — Енцов Юрий Петрович, журналистсен Союзĕн членĕ.
**Чалтун** — Данилов Максим Николаевич, писатель.
**Шелепи** — Полорусов Николай Иванович, чăваш халăх поэчĕ.
**Щипцов** — Павел Семенович Щипцов, çыравçă, ялкор.
**Ыдарай** — Васильев Николай Васильевич, писатель, поэт.
**Эсхель** — Александров Аркадий Александрович, писатель, поэт.
**Южанин** — Юшков Сергей Павлович, РФ писателĕсен Союзĕн членĕ, прозаик.
**Ястран** — Григорьев Максим Григорьевич, писатель, поэт.

## ПУКАНЕ

Ҫавра питлӗ Пукане
Ҫула тухнӑ ирхине.
— Ӑҫта каян, Пукане?
— Ӑҫтаппансен утарне.
— Унта мӗнле ҫитетӗн?
— Утса-чупса ҫитетӗп.
— Ҫитсен мӗскер тӑватӑн?
— Малтан салам калатӑп,
Кучченеҫсем паратӑп.
Кайран урай ҫӑвватӑп,
Касма салма тӑватӑп.
Каҫпа канма выртатӑп —
Ҫӗнӗ тӗлӗк куратӑп.

## ПУЛӖ-ШИ?

Сӑвӑ-юмах

Анчӑк каять вӑрмана
Антӑхтарма Упана.
  Ах, пулӗ-ши, пулмӗ-ши,
  Вӑйран вӑкӑр тухмӗ-ши?
Вӑкӑр каять вӑрмана
Вӑйхантарма Упана.
  Ах, пулӗ-ши, пулмӗ-ши,
  Вӑйран вӑкӑр тухмӗ-ши?
Ӗне каять вӑрмана
Ӗнселеме Упана.
  Ах, пулӗ-ши, пулмӗ-ши,
  Вӑйран вӑкӑр тухмӗ-ши?
Пӑру каять вӑрмана
Пӑркӑчлама Упана.
  Ах, пулӗ-ши, пулмӗ-ши,
  Вӑйран вӑкӑр тухмӗ-ши?
Тына каять вӑрмана
Тыткӑнлама Упана.
  Ах, пулӗ-ши, пулмӗ-ши,
  Вӑйран вӑкӑр тухмӗ-ши?
Чух-чух каять вӑрмана
Чышкӑлама Упана.
  Ах, пулӗ-ши, пулмӗ-ши,
  Вӑйран вӑкӑр тухмӗ-ши?
Янккас каять вӑрмана
Янахлама Упана.
  Ах, пулӗ-ши, пулмӗ-ши,
  Вӑйран вӑкӑр тухмӗ-ши?

# ПУЛМĂШ ПУХХИ

Пулмăш — пулма пултарайман пулăмсенчен йĕркеленĕ сăвă çаврăмĕ. Çаврăмри тĕрĕсмарлăхсене тупса тӳрлетĕр.

Атма çине лармалла — Атăл урлă каçмалла.
  Ăсан хăйĕн чĕппипе ăшă енне вĕçес пек.
Бук вуллине касрăм та Буратино турăм та!
  Вăкăр пырса тĕкрĕ те Вăрăмтуна вилчĕ те.
Глобус-глобус терĕм те — глобус патне çитрĕм те.
  Дон-дон-дон, Дон çинче ишет бизон.
Емелккепе иксĕмĕр ешĕл каврăç çирĕмĕр.
  Ĕнел ĕнин ĕнчĕ пур, ĕненмесен — кайса кур.
Ёлка — чăрăш хыçĕнче ёлки-палки пĕр тĕнче.
  Жир çинĕрен яланах Жираф теççĕ пуль ăна.
Зинук çĕре ларчĕ те завод умне çитрĕ те.
  Иккассинчен килтĕмĕр — ик сăмавар ĕçрĕмĕр.
Йăва туса çирĕмĕр — Йăвашкелне çитрĕмĕр.
  Кăвакала тĕллерĕм — кӳлĕ шывне лектертĕм.
Лавраç пичче киличчен ларса тăр-ха сак çинче.
  Мăкла така сиккелет — майракипе тĕккелет.
Нар пек хитре йăпарсен нарат çинче йăвисем.
  Огарь çӳрет хырлăхра, Огарь чĕппи шурлăхра.
Пак петĕм те Пакшана — Пакша лекрĕ вăлтана.
  Рак-Рак! тесе чĕнтĕм те — Рак вĕçтерсе çитрĕ те.
Сахалина каятăп — страус ферми уçатăп.
  Çав-çав çĕрте, çав çĕрте, çамрăк çуйăн çут çинче.
Тăри юрлать нăрлатса, тыр пуссине янратса.
  Улах çĕрте пĕр ача, унăн ури улача.
Ӳлепкене курчĕ те ӳпре йĕрсе ячĕ те.
  Феня ĕçне пĕтерет — формалинпа чӳхенет.
Хур кайăксем вĕçнĕ чух хура пусра тыр-пул çук.
  Циркач тесе калатпăр, цыркач тесе çыратпăр.
Чĕрĕ йĕплĕ Чĕрĕпе чĕрмелерĕм çĕрĕпе.
  Шăпчăк юрлать шăхăрса, шур хурăна ырласа.
Щавель уйра пуçтартăм — щеткăпала тасатрăм.
  Ывăс тулли чĕренче ыраш пусси хĕрринче.
Элес-мелес Эрешмен эрне çурă эрлешмен.
  Юхма шывĕ ĕлĕкрен юхса килет тинĕсрен.
Якку-Якку! терĕм те — Якур чупса çитрĕ те.

**Пулмăш тупсăмĕсем:**

1. Атма — пулă тытмалли хатĕр, лутка-кимĕ мар. 2. Ăсан ăшă енне вĕçсе каякан кайăк мар. 3. Бук хытă йывăç, ăна васкавлăн касма çук. 4. Вăкăр вăрăмтунана тĕкес чĕр чун мар. 5. Глобус кайăк мар, вĕçме пултараймасть. 6. Бизонсем Дон тăрăхĕнче пурăнмаççĕ. 7. Кавăрç — вăрманти йывăç, çимелли курăк мар. 8. Ĕнчĕ — хаклă йышши чул, ĕне çумĕнче ун пек япала çук. 9. «Ёлка» тенĕ сăмах хыçĕнче «чăрăш» тенĕ сăмах, урăх ним те çук. 10. Жираф жир-çу тавраш̆ çимест. 11. Завод умĕ çухалмалли вырăн мар. 12. Сăмавара ĕçмеççĕ, сăмаварти шĕвеке ĕçеççĕ. 13. Йăва вĕçмелли аппарат мар.

6. Заказ № К-3453.

14. Ку тӗл пени пулмасть. 15. Пӗр вӑхӑтрах ларма та, тӑма та май ҫук. 16. Мӑкла такан мӑйраки ҫук, вӑл мӑйракипе тӗкеймест. 17. Йӑпарсем наратхыр тӑрринче йӑва тумаҫҫӗ. 18. Огарь чӗпписем амӑшӗнчен уйрӑм ҫӳремеҫҫӗ. 19. Вӑлта пакша тытмалли хатӗр мар, вӑл пулӑ тытмалли. 20. Рак вӑр-вар ҫӳрекен чӗр чун мар. 21. Сахалинта страуссем пурӑнмаҫҫӗ. 22. Ҫуйӑн ҫут ҫинче (ту ҫинче) пурӑнмасть. 23. Тӑри нӑрӑ мар, нӑрлатмасть. 24. Ура мар, тум улача пулать. 25. Ӳпре йӗме пӗлмест. 26. Формалин — эмел, чӳхенмелли шӗвек мар. 27. Хура пус — акман ана, унта тыр-пул ҫитӗнмест. 28. «Циркач» сӑмах ик тӗрлӗ вуланмасть-ҫырӑнмасть. 29. Чӗрӗпе чӗрмелеме май ҫук. 30. Шӑпчӑк шур хурӑна ырласа мар, мӑшӑрне савӑнтарма юрлать. 31. Щавель — ҫимелли курӑк, ӑна щеткӑпа тасатмаҫҫӗ. 32. Чӗренче — чӗрсе тунӑ хӑма, ӑна ывӑс ҫине хумаҫҫӗ. 33. Эрешмен эрлешме пӗлмест. 34. Юхан шыв тинӗселле юхать. 35. Ҫын вырӑнне ҫын пырса тухма пултарать, анчах та вӑл чӗннӗ ҫын мар.

## ПУЛМӐШСЕМ

* * *

Автан кайнӑ вӑрмана,
Алсатулне ҫухатнӑ.
Алсатулӗ ҫав кунах
Пилӗк пепке ҫуратнӑ.

* * *

Ака тӑвас тур лаша
Тухса кайнӑ Канаша,
Тухса кайнӑ Канаша —
Унта курнӑ тамаша.

* * *

Ана ҫинчи Арлана
Ӑсан пырса пуҫ тайнӑ.
Вӑрӑмтуна Шӑнана
Качча вӑрласа кайнӑ.

* * *

Асар-писер Ҫӑпата
Ирех кайнӑ Йӗпреҫе.
Икӗ йӗпсе сутнӑ та
Илсе килнӗ кӗреҫе.

* * *

Вӑрӑмхана кайрӑм та
Куртӑм самӑр тунката,
Тепре кайса пӑхрӑм та —
Туса хунӑ ҫӑмарта.

* * *

Ах, мӗн тӑвас, мӗн тӑвас —
Мӑйӑр катса тӗш тӑвас,
Сӑмахлама чарӑнас —
Чӗлхе вӗҫне кантарас!

## ПУЛТĂР

Ёнерхи аван
Пултăрччĕ паян,
Паянхи аван
Пултăрччĕ ялан.

Ёнерхи тăван
Пултăрччĕ паян,
Ёнерхи тăшман
Ан пултăр нихçан.

Ёнерхи вăрман
Ķашлатăр паян,
Ёнерхи пăван
Ан сăхтăр нихçан.

Ёнерхи юрра
Юрласчĕ паян,
Паянхи юрра
Юрласчĕ ялан!

## ПУТЕНЕ

Пит савăнать Путене
Çурхи ăшă çитнипе,
Тĕлĕнтерет пурне те
Хăйĕн уçă сассипе.

## ПУСĂ ПАТĔНЧЕ

Пусă патне каятăп,
Пуçа тайса калатăп:
— Пусă, пул-ха пĕр кавар —
Пуç ухмалăх шывна пар.

Пус витрине тытатăп,
Пуçа тайса калатăп:
— Патйе, пул-ха васкавар —
Пуçă шывне ăсса пар.

Пусă мана ăнкарать,
Пус витри те ăнланать:
Пусă тăрă шыв парать —
Патйе ăсса кăларать.

Пуринпе те сирĕнпе
Пуплешетĕп пĕлĕш пек:
Пĕлнĕ пулăр, шывпала
Пирĕн туслă пулмалла!

6. Заказ № К-1453.



**Алфавитри** çирĕммĕш сасă палли — **Р**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: рă.

Вăл çапла çыранать: *(çырса кăтартмалла).*

**Р** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *радио, рак, ребус, роза, Роксана, руль, ручка, рабочи, район, ремонт...*

сăмах варринче: *ара, варан, варахпа, карта, лару, парăм, çарăк, хура, шурлăх...*

сăмах вĕçĕнче: *авăр, вăкăр, кăвар, кăкăр, çăвар, тымар, хунар, чапăр, чукмар, Шупашкар...*

**Шӳтлевсем:**

Ра-ра-ра, Райкка çӳрет улăхра.
Ри-ри-ри, Ритта чипер çав тери.
Ре-ре-ре, речĕпе ларать витре.
Ру-ру-ру, рубкăра шав кăшкăру.

**Ытарлăхсем:**

1. Рак чăвашла мĕн ятлă? *(Хĕскев.)*
2. Рак тени вăл мĕн тени? *(Икĕ тĕрлĕ хурав: пĕри — чĕр чун ячĕ, тепри — чир ячĕ.)*
3. Ррлатса калаçма камсем ăста? *(Анчăксемпе йытăсем.)*

**Ятарлăхсем:**

Рай пахчи пире тĕс мар, çăтмах та пире çитет.
Раман роман çыракан, Роман рама юсакан. *(Часкалу.)*
Рамзес — Египет фараонĕ.

## РИФМĂСЕМ

Акă вĕсем —
Рифмăсем,
Асра тытма кирлисем,
Мăшăрласа вĕсене
Çырса хутăм хут çине:
Вулăран — кулă,
Кулăран — пулă,
Пулăран — сулă,
Сулăран — тулă,
Тулăран — хулă.
Вуларăмăр вире май,
Халь вулăпăр тепĕр май:
Хулăран — тулă,
Тулăран — сулă,
Сулăран — пулă,
Пулăран — кулă,
Кулăран — вулă.
Такăнмасăр кам вулать —
Такмак ăсти çав пулать.

*(Малтан вулама хăнăхас пулать, унсăрăн такмакăн иккĕмĕш пайне такăнмасăр калама май çук. Çапла вара, такмак ăсти пуласси те çăмăлах мар.)*

## РИФМУК

Авăркасси ялĕнче, Ахманэсен килĕнче Амăшĕпе Ашшĕ пурăннă. Пурăннă та пурăннă — пуян пекех курăннă. Выльăх тесен выльăхĕ пур — йытăпа кушак, тумтир тесен тумтир пур — кĕрĕкпе сăхман, пурлăх тесен пурлăх пур — кутникпе пукан, тупра тесен тупра пур — калпакпа сурпан. Чаплă çынсем умне тăма чаппанпа чĕрес, туйиран туя çӳреме хушпупа тухья та пулнă. Анчах та чăн кирли пулман. Мĕн-ха вăл? Кил-çуртра, çемьере чăн кирли вăл йăх тăсма пултаракан ача пурри. Ача та ача тенĕрен ача ӳкмест тӳперен. Мĕн тумалла?.. Амăшĕпе Ашшĕ шухăшласа пăхаççĕ те Усрав ача пăхса ӳстерме калаçса татăлаççĕ. Çапла тăваççĕ те хайхисем. Кĕçех ватăсен килĕнче ача сасси илтĕнсе каять. Ахаль сасă кăна та мар — савăк сасă. Савăк сасă кăна та мар — сăваплă сăвăç сасси! Унăн ăсталăхĕ пулнах пулĕ çав. Вăл ахаллĕн сăмахламан — рифмăласа калаçнă. Ун çинчен пĕтĕм ял пĕлет. Акă çырса илнĕ тĕслĕхсем.

— Аннев, аса ил-ха иртнине. — Амăшĕ Усравккана пулни-иртнисем çинчен каласа парать е ытарлă сăмах-юмах вăрттăнлăхне вĕрентет.

— Аттев, мана кирлĕ теттев! — Ашшĕн ун пек тавар илме укçи-тенки çук, çавăнпа та вăл Усравккана ал айĕнчи ăçти-çукран теттесем тума хăнăхтарать. Çапла çитĕнет савăк чунлă

Савали, ун малтанхи ячĕ çавăн пек пулнă. Усал чĕлхесем ăна Куславккаран илнĕ Усравкка тесе йĕкĕлтенĕ.

Вĕренме тытăнсан, рифмăласа калаçма пĕлнĕрен, каярахпа ăна пурте хушма ятпа чĕнме тытăнаççĕ. Унăн кирĕк ларман çĕнĕ ячĕ (псевдонимĕ) хăйне майлă хитре — Рифмук. Кĕçех вăл çак ятпа шкул историне кăна мар — ял историне кĕрсе юлать. Алфавит кĕнеки пичетленсе тухсан унăн ячĕ Чăваш ен историне те кĕрсе юлĕ. Эхер те çак кĕнекене тĕрлĕ халăхсен чĕлхисем çине куçарас пулсан пĕтĕм тĕнче историне те кĕрсе кайма хăват илет. Çапла вăл пурнăçра: шухăшламан чухне шухăш çук, шухăшлама тытăнсан — вĕçĕ çук. Юлашкинчен те пулин ятарлă сăмах калам эппин:

Ялта ял пек пурăнсан,
Ял хавалне упрасан,
Ял хавалне хăпартсан —
Ял халăхĕ ятламан.

## РАМАНПА РОМАН

Реклама

Раманпа Роман
Пĕртăван пек пурăнман —
Пĕртăван пек пурăнма
Пĕрлĕх чĕлхи тупайман.
Пĕрлĕх чĕлхи тупсанах,
Пĕр чĕлхеллĕ пулсанах
Пурăнмалла пит аван
Раманпа Роман.

## РЕПОРТАЖ

Радио репортĕрĕ
Роман Романович Романов —
Райхаçатăн райпоэчĕ,
Больше не пишет романов,
Пишет только прозу
И любит Розу, —
Тесе рапортларĕ.
(Ăнланмасан тепĕр хут вула.
Апла та ăнланмасан
«Азбуки — ăс пуххи» тытса вула!)



**Алфавитри** çирĕм пĕрремĕш сасă палли — **С**.
Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.
Вăл çапла вуланать: сă.
Вăл çапла çыrăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**С** çак вырăнсенче тĕл пулать:
сăмах пуçламăшĕнче: *сава, сад, сак, салтак, самана, сивĕ, старик, сухал, сухан, сырăш...*
сăмах варринче: *асли, васка, касмак, пасар, сасă, тараса, таса, усси, хусах, хастар, шасси...*
сăмах вĕçĕнче: *ас, вулăс, карас, кăвас, парăс, турпас, фокус, хас, чурăс, чус, шăнчас...*

**Шӳтлевсем:**

Са-са-са, Савали ларать кулса.
Сă-сă-сă, сăвăрсан пулать сăвă.
Си-си-си, Симунăн хитре сасси.
Су-су-су, сурăх хакĕ вăтăр сум.

**Ытарлăхсем:**

1. Вырăс ялĕ çумне «м» хушсан мĕн пулать? *(Салам пулать. Сала + м = салам.)*
2. Сăвăс мĕнпе ытарлă? (*Кутăнла та, пуçăнла та пĕр пекех вуланать.)*
3. Сăвă çырма мĕн кирлĕ? *(Сăнарлă сăмах.)*

**Ятарлăхсем:**

Саван пулсан савса пар, савмасассăн ан та пар.
Саманине кура сăмахĕ, сăмахне кура çăмахĕ.
Стандартизацилесси — сăнарлă сăмах мар.

## САД ПАХЧИ

Юрă

Сад пахчинче мĕскер пур —
Савăнмалăх илем пур.
Сад илемне куратпăр —
Сапăр чунлă пулатпăр.

Сапăр чунлă, сапăр чунлă,
Сапăр чунлă пулатпăр.

Сад пахчинче мĕскер пур —
Сарă кайăк сасси пур.
Сар кайăка итлетпĕр —
Савăк чунлă ўсетпĕр.

Савăк чунлă, савăк чунлă,
Савăк чунлă ўсетпĕр.

Сад пахчинче мĕскер пур —
Сад пахчинче çырла пур.
Çырла çиçе ўсетпĕр —
Çын хисепне кĕретпĕр.

Çын хисепне, çын хисепне,
Çын хисепне кĕретпĕр.

## САЛАМ СĂМАХĔ

Йăласен хакне пĕлетпĕр —
Саламлатпăр пуç тайса,
Ырăпа кĕтсе илетпĕр,
Ăсататпăр ыр сунса.

Çăкăрпа тăвар сĕнетпĕр —
Сăра ĕçĕр асăнса.
Ырăпа кĕтсе илетпĕр,
Ăсататпăр ыр сунса.

Юрăпа вăй-хал çĕклентĕр,
Ташă ташлăр пуç ухса.
Ырăпа кĕтсе илетпĕр,
Ăсататпăр ыр сунса.

# СИНОНИМ

Синоним — пĕр сăмах тепĕр сăмахпа пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ пулни.

**Синоним тĕслĕхĕсем:**

Ампар — кĕлет.
Ăскăç — курка.
Бритва — хыркăç.
Васан — варак, тип вар.
Герой — паттăр.
Дикий — тискер, чурăс.
Ентеш — янташ.
Ёлккен — шукăль.
Ёлка — чăрăш.
Жетон — номер.
Звонок — шăнкăрав.
Имшер — начар, ырхан, япăх.
Йӳтĕм — сăлтав.
Куштан — усал, хаяр, чăркăш.
Лайăх — аван, чипер, хăтлă, яту.
Маттур — саттур.
Нумай — йышлă, пайтах.
Ответ — хурав, явап.
Пăрăс — кашта.
Ретсĕр — йӳнсĕр, латсăр, майсăр.
Самăр — мăнтăр.
Çӳлĕк — сентре.
Тутăр — явлăк.
Услам — пайта, тупăш, ытлăх.
Ӳркев — юлхав.
Фокус — покус.
Хăмăт — сӳсмен.
Цифра — хисеп.
Чухăн — кăйттă, юрлă.
Шалча — шерте.
Щетка — хыркăç, хыркăч, хырчăк.
Ывтăк — перкĕç, ывăткăç.
Эртел — йыш, ушкăн.
Юлхав — кахал, наян, услап.
Ялав — элем.

## СПОНСОР

Спонсор — организаци, уйрăм çын е фирма мĕнле те пулин пархатарлă ĕç тума финанс енĕпе (укçа парса) ирĕккĕн пулăшакан.

Çак кĕнеке спонсорĕ — Иванов Николай Иванович, Çĕнĕ Шупашкар хулин администраци пуçлăхĕ тата хула мэрĕ. Унăн çемьи пысăках мар: кил хуçи, унăн мăшăрĕ тата икĕ çамрăк пике — Анюкпа Танюк.

*Николай Иванова*

Çĕре çити тайма пуç,
Çынлăхушăн — тавтапуç!

## ПИКЕСЕМ

Шутлав

Ивановсен икĕ хĕр,
Иккĕшĕ те сарă хĕр:
Пĕри — Анюк,
Тепри — Танюк,
Пĕри — Анюк,
Тепри — Танюк,
Пĕри — Анюк,
Тепри — Танюк...
Акă вĕсен сăмаххи:
Пирĕн Анне,
Пирĕн Атте —
Пуринчен те лайăххи!

## СУФФИКС

Аванах астăватăп: пире вырăс чĕлхине пиллĕкмĕш класра Павел Григорьевич Григорьев вĕрентетчĕ. Суффикссем çинчен ăнлантарнă чух вăл чăваш чĕлхипе те тĕслĕх илсе кăтартма шутларĕ:

— Вырăс чĕлхинче суффикссем питĕ нумай. Вĕсем сăмахсене çĕнĕ витĕм, çĕнĕ сĕмлĕх параççĕ. Уйрăмах *-шк-* суффикс нумай тĕл пулать. Çавăн йышши суффикспа пулнă сăмах чăваш чĕлхинче те пур. Сăмахран: *çуна + шк = çунашка.* Кун пек тĕслĕхсем урăхран пĕлместĕп, — терĕ вăл.

Çак сăмахсем манăн пуçа çирĕп кĕрсе вырнаçрĕç. Эпĕ пĕрвĕçĕм *-шк-* суффикс пулăшнипе пулнă сăмахсем шыраттăм. Халь акă çитмĕлтен иртсен хама канăç паман тĕллеве пурнăçларăм пулас. Акă вĕсем, эпĕ асăрханă сăмах тĕслĕхĕсем:

Ама + шк = амашка.
Ăста + шк = ăсташка.
Брат + шк = братушка.
Валак + шк = валашка.
Ганна + шк = Ганнушка.
Дуня + шк = Дуняшка.
Епре + шк = епрешке.
Ёна + шк = Ёнушка (ятарлă ят).
Ёне + шк = ёнешке.
Жанна + шк = Жаннушка.
Зинук + шк = Зинушка.
Иван + шк = Ивашка.
Йăваш + шк = йăвашка.
Картлав + шк = картлашка.
Качака + шк = качашка.
Лăймака + шк = лăймашка.
Майра + шк = майрашка.
Майрук + шк = Майрушка.
Надюк + шк = Надюшка.
Олуш + шк = олушка (кайăк ячĕ).
Пăру + шк = пăрушка.
Тына + шк = тынашка.
Ракуш + шк = ракушка.
Сайра + шк = сайрашка.
Çуна + шк = çунашка.
Тына + шк = тынашка.
Упа + шк = упашка.
Ӳпре + шк = ӳпрешке.
Филя + шк = Филюшка.
Хура + шк = хурашка.
Цапа + шк = Цапушка.
Чармак + шк = чармашка.
Шурак + шк = шурашка.
Щиток + шк = щитушка.
Ыйту + шк = ыйтушка.
Эреш + шк = эрешке.
Юпа + шк = юпашка.
Яка + шк = якашка.

## УЙ ВАРРИНЧЕ

Уй варринче Укашка,
Укашка мар — Улашка,
Улашка мар — Упашка,
Упашка мар — Лупашка...



**Алфавитри** çирĕм иккĕмĕш сасă палли — **Ç**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: çă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Ç** çак самантсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: ***çава, çатма, çăка, çăлтăр, çăмха, çăра, çĕпре, çуна, çырла...***

сăмах варринче: ***ačам, вĕçев, каçпа, каçхине, кивçен, куçару, пуçару, хуçа, хуçалăх...***

сăмах вĕçĕнче: ***каç, лаç, караç, куç, пуç, сăвăç, тухăç, хутаç, чĕкеç, шăвăç, юрăç...***

**Шӳтлевсем:**

Ça-ça-ça, çапă лекрĕ ман пуçа.
Çĕ-çĕ-çĕ, çĕлесси çĕвĕç ĕçĕ.
Çи-çи-çи, çиме пур чух çи те çи.
Çу-çу-çу, çурт лартатăп çитес çул.

**Ытарлăхсем:**

1. «Ç» çумне вăхăт ячĕ хушсан мĕн пулать? ***(Юхан шыв ячĕ пулать. Ç + авал = Çавал.)***

2. Çын хушшинче мĕн пур? ***(«Çын» тенĕ сăмах хушшинче «ы» пур.)***

3. Ырлама хушнă сасă палли мĕн пулать? ***(Çимĕç пулать. Ç + ырла = çырла.)***

**Ятарлăхсем:**

Çавра сăмах пуçа та çавăрма пултарать.
Çăмăл сăмах — çăпала, çырăнмалла ç-пала.
Çичĕ сăмах каличчен çивчĕ кала пĕр хутчен.

## ÇАВРĂК

(Кивĕ сăмах — çĕнĕ юмах)

Авал тесен авал мар, паян тесен паян мар, Атăл хĕрринчи пĕр ялта Асаттепе Асанне пурăннă, çурхах пекех курăннă. Çук çын пурнăçĕ çурхах çав ĕнтĕ вăл.

Ватă çынсем çук-çук тенĕ çĕрте те мĕн те пулин пурах теççĕ.

Асаттепе Асанне килĕнче мĕн пур-ха? Ачасем пур-и? Пулнă та халь çук: арçын пуласси Арçурисемпе çапăçса пуçне çухатнă. Хĕрçын пулассине Аçтаха вăрласа кайнă та сас-хурасăр çухалнă. Ачасемсĕр ватлăхра питĕ кансĕр. Асаттепе Асанне вара пăрахнă хĕр пĕрчине усрава илнĕ. Ăна вĕсем чуна çывăх курса Мăнук тенĕ.

Апат-çимĕç пулнă-и ватăсен? Паллах, пулнă: кишĕр те çарăк, пашалу та шыв.

Вырьăх-чĕрлĕх пулнă-и? Паллах, пулнă: Йытăпа Кушак тата тĕпренчĕк пуçтаракан Шăши.

Кил-çурт пулнă-и? Паллах, пулнă: мунча пек çурт тата пуралана çăл.

Пĕррехинче, çурхи кунсем çĕре ăшăтсан, Асатте калать:

— Асламăшĕ, ÇАВРĂК акма вăхăт çитеймерĕ-ши?

— Çаврăк акма вăхăчĕ çитрĕ пулĕ те, анчах...

— Мĕн анчахĕ тата?

Çак калаçăва Мăнук ятлă хĕр пĕрчи хутшăнать:

— Асанне, — тет вăл, — эсир иксĕр те тĕрĕс мар калаçатăр: ÇАВРĂК темелле мар — çарăк темелле.

— Ах, мăнукăмăр, — теççĕ ватăсем, — кив йăлана пăсас мар, çĕнĕ йăла тăвас мар. Атте-анне мĕнле вĕрентнĕ, çаплах калаçăпăр, пире çылăха ан кĕртех.

— Юрĕ, урăхран тиркештермĕп, — тет хĕр пĕрчи.

— Ара ĕнтĕ, ăçта çитнĕччĕ-ха пирĕн сăмах? — ыйтать Асатте.

— Вăрлăх патне çитнĕччĕ, — астутарать хĕр пĕрчи.

— Аре çав, вăрлăхĕ çуккă-иç...

Çак вăхăтра çăмăл кайăк — Çерçи вĕçсе кĕрет. Вĕçсе кĕрет те çапла калать:

— Ан кулянăр, ватăсем, вăрлăхне хам тупса килетĕп, — тет вăл.

Çăвар уçса сăмах уçиччен Çерçи куçран та çухалать. Вăл кăна та мар, сăмах çĕнĕрен сыпăниччен çăмăлттай Çерçи вăрлăх тупса та таврăнать. Вăрлăх пур, вăхăт çитнĕ, тата мĕн тумалла? Акма тухмалла.

Пурте пĕрле сăмах пĕтерсе çаврăк акма тухаççĕ. Çаврăк акнă май карталанса тăраççĕ те кĕлĕ сăмахĕ каласа юрлаççĕ:

Ăшă кунсем çитнĕрен
Çаврăк вăрри акатпăр,
Çаврăк ÿссе çитĕнсен
Кăлармашкăн тухатпăр.

Çаврăк, ўс, çаврăк, ўс —
Алтăртан та пысăк ўс!
Çаврăк, ўс, çаврăк, ўс —
Каткаран та пысăк ўс.

Çаврăк, ўс, çаврăк, ўс —
Чамаран та пысăк ўс!
Çаврăк, ўс, çаврăк, ўс —
Шетникрен те пысăк ўс!

Асамлă сăмахсем каласа акнă çаврăк кунсерен мар, минутсерен ўсме тытăнать. Кĕрхи кунсем çитеспе Асатте пахчине тухса пăхать те тĕлĕннипе тăм юпа пек хытса каять. Аран-аран сывлăш çавăрса ярать.

— Чим-ха, — тет вара кил хуçи, — кăларса кĕрем те килтисене тĕлĕнтерем. — Асатте çаврăкран пырса çулăхать: туртать-туртать — туртса кăлараймасть, туртать-туртать — туртса кăлараймасть, туртать-туртать — туртса кăлараймасть. Ĕç тухман енне Асаннене йыхăрать.

Асанне Асаттерен çулăхать, Асатте çаврăкран çулăхать: туртаççĕ-туртаççĕ — туртса кăлараймаççĕ...

Ĕç тухман енне Асанне Мăнукне йыхравлать. Мăнукĕ Асаннерен çулăхать, Асанне Асаттерен çулăхать, Асатте çаврăкран çулăхать: туртаççĕ-туртаççĕ, туртса кăлараймаççĕ...

Ĕç тухман енне Мăнук Йыттине йыхравлать. Йытă Мăнукран çулăхать, Мăнук Асаннерен çулăхать, Асанне Асаттерен çулăхать, Асатте çаврăкран çулăхать: туртаççĕ-туртаççĕ, туртса кăлараймаççĕ...

Ĕç тухман енне Йытă Кушакне йыхравлать. Кушак Йытăран çулăхать, Йытă Мăнукран çулăхать, Мăнук Асаннерен çулăхать, Асанне Асаттерен çулăхать, Асатте çаврăкран çулăхать, туртаççĕ-туртаççĕ, туртса кăлараймаççĕ...

Апла та ĕç тухман енне Кушак Шăшие йыхравлать. Шăши Кушакран çулăхать, Кушак Йытăран çулăхать, Йытă Мăнукран çулăхать, Мăнук Асаннерен çулăхать, Асанне Асаттерен çулăхать, Асатте çаврăкран, туртаççĕ-туртаççĕ, туртаççĕ-туртаççĕ, туртаççĕ-туртаççĕ... аранах туртса кăлараççĕ!

Çаврăк юмахĕ вĕçленчĕ, анчах та ман ыйтса пĕлес кăмăл çуралчĕ. Çавра ыйту çавăн пек:

Çаврăк юмахĕн тĕшши пур-и? Унăн тĕшшине кам тĕшлесе пама пултарать?

**(Ыйтăвăн тĕслĕхшĕн çырнă хуравĕ:** Авалхи çынсем ар йăхĕ пĕчченшерĕн пурăнма пултарайманнине лайăх пĕлнĕ, йышпа анчах йывăр е пысăк ĕçсене тума вăй-хал çитет. Çак чăнлăха ачасем те çамрăклах ăнланччăр тесе ÇАВРĂК (çарăк) юмахне шухăшласа кăларнă. Тавах ăспа çырма пĕлекенсене!)

## ÇАПЛА-ШИ?

Пулмăш

Пĕр илемлĕ ир çинче
Вупăр аннă шыв хĕрне.
Кĕмĕл уйăх тăхрине
Йăтса кайнă йăвине.

Çапла-ши,
Çаплах та мар-ши?

Пĕррехинче-пĕринче
Çĕлен выртнă çĕр çинче.
Хӳри вĕçне курнă та
Хыпса-çăтса янă та!

Çапла-ши,
Çаплах та мар-ши?

Пĕррехинче-пĕринче,
Çырла пиçнĕ тĕлсенче,
Пурăш çумне юнашар
Пырса ларнă сăмавар.

Çапла-ши,
Çаплах та мар-ши?

## ÇĂКА

Çăка çулçи çавракa —
Мĕн каласа çырнă-ши?
Сарăлать пур тавранa
Çак йывăçран пыл шăрши.

## ÇЕРÇИ

Çерçи вĕçет çĕр çийĕн —
Çерçин вĕçес кăмăл пур,
Çӳлте вĕçен çерçийĕн
Сурт çумĕнче йăви пур.

Çав йăвара выртаççĕ
Çăвар карса чĕпĕшсем.
Çиме апат ыйтаççĕ
Çăпала пек çăварсем.

# ÇĂКĂР

Хаклав

Акă вăл, акă вăл —
Анне çăкри çакă вăл!
Акă вăл, акă вăл—
Атте çăкри çакă вăл!

Çăкăр çине пăхатăн —
Аслă хире куратăн.
Ака-суха тăвасси
Йывăррине чухлатăн.
Çăкăр çине пăхатăн —
Сар хěвеле куратăн.
Çавра çăкăр хěвелпе
Пиçěхнине чухлатăн.

Çăкăр çине пăхатăн —
Ылтăн тиněс куратăн.
Ылтăн тиněс пурлăхне
Кам пухнине чухлатăн.

Çăкăр çисе пăхатăн —
Çăкăр хакне чухлатăн.
Çавра çăкăр уměнче
Çамрăк пуçна таятăн.

Акă вăл, акă вăл —
Çавра çăкăр çакă вăл.
Апат-çиměç хушшинче
Аслисенчен асли вăл.



## ÇĂЛТĂР

Çавра çăлтăр — çут çăлтăр,
Çамрăк пуçа çав çăлтăр!
Çав çăлтăр!

Çавра çăлтăр — çут çăлтăр,
Çулçӳрене çав çăлтăр!
Çав çăлтăр!

Çавра çăлтăр — çут çăлтăр,
Çухаласран çав çăлтăр!
Çав çăлтăр!

Çавра çăлтăр — çут çăлтăр,
Çынсăрлăхран çав çăлтăр!
Çав çăлтăр!

## ÇУМĂР

Çумăр çăвать, çумăр çăвать,
Çумăр çăвать çуркунне,
Çумăр çăвать, çумăр çăвать,
Çумăр çăвать çĕр çине.

***(Кашни сăмах кунта Ç сасă паллипе пуçланать.)***

## ÇУТЛĂХ

Тупкав

Алли те пур, ури пур,
Куçĕ те пур, пуçĕ пур,
Сăмси те пур, хăлхи пур,
Тути те пур, кулли пур.
Çавăн ятне тупса пар —
Тупаймасан аван мар.

**Тупсăмĕ:** *хĕвел.*

## ÇУХАТУ

Шӳт

Айван ăслă пĕр яш
Çула тухнă вăш-ваш,
Утнă майăн вăш-ваш
Вăл сывланă хăш-хаш.

Айван ăслă пĕр яш
Сывласа хăш та хаш
Çур кило чĕрĕ аш
Çухатнă вăш-ваш.

7. Заказ № К-1653




**Алфавитри** çирĕм виççĕмĕш сасă палли — **Т**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: тă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Т** çак самантсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: ***тав, тавах, така, тамаша, тăван, тăрна, трактор, тумтир, тырă, тыр-пул, тяпкă...***

сăмах варринче: ***Атăл, атлас, ватă, кĕтес, кĕтӳ, лапатка, паттăр, сĕтел, тĕттĕм, шатра, шутра, шӳтлев...***

сăмах вĕçĕнче: ***апат, вăхăт, йĕкĕт, пĕлĕт, салат, çĕмĕрт, турат, ухват, хут, хаçат, чăкăт, шăрт...***

**Шӳтлевсем:**

Та-та-та, татах пултăм вăрманта.
Те-те-те, тетте кирлĕ пурне те.
Ти-ти-ти, Тимĕркке тăвать щитти.
Ту-ту-ту, турат çине йăва ту.

**Ытарлăхсем:**

1. Тараса тепĕр тĕрлĕ мĕн ятлă? ***(Виçе.)***
2. «Т» çумне пӳрт пайне хушсан мĕн пулать? ***(Вăхăт пулать. Т + алăк = талăк.)***
3. Турпас мĕнпе ытарлă? ***(«Турпас» сăмахра тепĕр сăмах — «урпа» пур.)***

**Ятарлăхсем:**

Тав туса ĕçтерсен таса шыв та тутлă.
Тарла-тарла ĕçлекен — ташла-ташла çиекен.
Тăманапа Путене туслă пулман ĕмĕрне.

## ТАКАМ

Тупкав

Тахҫан-авал ёлёк чух,
Такси тавраш пулман чух,
Тарӑн пусӑ тӗпӗнче
Такам ларнӑ пӗр-пӗччен.

Сантӑр пырса пӑхнӑ та —
Сантӑр тенӗ ҫав ҫынна,
Павӑл пырса пӑхнӑ та —
Палюк тенӗ ҫав ҫынна.

Макар пырса пӑхнӑ та —
Макар тенӗ ҫав ҫынна,
Марук пырса пӑхнӑ та —
Маруҫ тенӗ ҫав ҫынна.
Куҫма пырса пӑхнӑ та —
Курах кайнӑ Куҫмана,
Куҫҫа пырса пӑхнӑ та —
Курах кайнӑ Куҫҫана.

Калӑр-халӗ, ачасем,
Калӑр-халӗ, тусӑмсем,
Калӑр-ха, эп те илтем:
Кам пулнӑ-ши ҫав этем?

**Тупкав тупсӑмӗ**: Мӗлке.

## ТАКАШКА

Шӳт

Аса килчӗ пӗринче
Ҫулла курнӑ мыскара:
Ҫав мыскара хут ҫинче —
Шӑппӑн ларса вулӑрах.

Кӑтра ҫӑмлӑ Такашка
Утса пынӑ ҫулпала.
Ун умӗнче лупашка —
Урлӑ мӗнле каҫмалла?

Пат чарӑнать Такашка —
Пӑхса илет шыв ҫине,
Курать темле Мӑйрашка
Хирӗҫ пӑхса тӑнине.

Пӗрентерет Такашка
Тӗлӗннипе ҫамкине:
— Кунта мӗнле лапчашка
Кулса пӑхать ман ҫине?!.

Тарӑхнипе Такашка
Тапса илет шыв ҫине —
Лупашкари Мӑйрашка
Чалт! сирпӗнет пур енне.

Халь те пулин Такашка
Питӗ хытӑ тӗлӗнет:
— Эпӗ курнӑ Мӑйрашка
Ӑҫта кайса кӗчӗ? — тет.

## ТАРӐХУ

Пулмӑш

Так ахалех Такана
Тарӑхтартӑм ирхине.
Тӗпсӗр пушӑ такана
Тухса хутӑм ун умне.

Така тарӑх пуснӑран
Туя турӗ хулӑран,
Тӑр шыв пусне кайнӑран
Така сулӑнчӗ вӑйран.

Тӑпра ҫиме хал ҫукран
Тухтӑр чӗнчӗ хуларан,
Тунсӑхпала супнӑран
Тухаймасть халь картаран.

Така тусӑм, урӑхран
Тарӑх курмӑн эс манран,
Татах тарӑх тӑвасран
Тукмак ҫыхӑп ураран.

## ТӐВАНСЕМ

Шӳтлев

Эпӗр иккӗн пӗртӑван:
Эпӗ — автан, эс — арлан.

Эпӗр иккӗн пӗртӑван:
Эпӗ — ӑсан, эс — ҫӑхан.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — калта, эс — варан.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — ирçе, эс — чикан.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — пилеш, эс — палан.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — пăши, эс — пăлан.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — ыхра, эс — сухан.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — сăпса, эс — пăван.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — кахал, эс — наян.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — катка, эс — лаххан.

Эпир иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — Ваççук, эс — Иван.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — çĕмел, эс — капан.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — каврăç, эс — юман.

Эпĕр иккĕн пĕртăван:
Эпĕ — куян, эс — ялман.

## ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Тăван чĕлхе — ыр чĕлхе,
Тăван анне чĕлхи вăл.
Тăван анне сĕчĕпе
Пирĕн чуна кĕнĕ вăл.

Тăван чĕлхе — ыр чĕлхе,
Тăван атте чĕлхи вăл.
Тăван атте ăсĕпе
Пирĕн пуçа кĕнĕ вăл.

Тăван чĕлхе — ыр чĕлхе,
Тăвар каснă чĕлхе вăл.
Тăвансемпе пуплеме
Пылтан тутлă чĕлхе вăл.

## ТЕНЕШ

Тенешсем — илемлетсе, хитрелетсе каланӑ сӑмах ҫаврӑмӗсем, тепӗр тӗрлӗ — тетте сӑмахсем. Тенеш (тенӗ, тет сӑмахран) — такамран илтсе каланӑ сӑмах. *Тементейсен хыҫӗнче тем те пур тет. Хӗвел пек хӗрӳллӗ. Калашсем — вӑрлӑх чечекӗсем, тенешсем — пуш чечексем.*

**Тӗслӗхсем:**

Акӑлчансем акман ҫӗрте те вырма пӗлеҫҫӗ.
Ак ёнтӗ те мак ёнтӗ...
Ах, терӗ тет Ахпӳрт ҫынни.
Ӑс вырӑнне пӑс кӗнӗ. (Айвансене ҫапла йӗплеҫҫӗ.)
Байкалта паврани Игаркӑра илтӗнет.
Вӗрет-сурать, пусмӑрлать... (М. Федоров. «Арҫури», 1908.)
Геркулес пек вӑйлӑскер. (Грексен мифологи паттӑрӗ.)
Данко чӗри хӗвел пек вӗри.
Екки ярсан Еккӗмле. (В.Егоров. 1934.)
Ёне пекех ӗнӗрлет.
Ёлки-палки теҫҫӗ вырӑссем.
Журнал хуҫи пек шуйханать, (В.Желтухин. 1936.)
Задачӑсен задачи пулать ку. (В.Долгов. 1937.)
Иккӗн иккӗнех, лашине парсан та пушшине паман тет.
Йӗлме йӗлтӗр лайӑх шӑвать.
Лара-тӑра пӗлмен ҫын.
Мунча ӑшшипе! теҫҫӗ мунча кӗрсе тухакана.
Нар пек ҫутӑ сӑнлӑ пике.
Оратор пек калаҫать. (А.Розов. 1934.)
Паян валли пӑрӑҫ пур, ыран валли ыхра пур.
Пек сӑмах та пенӗ пекӗ пек касать терпӗр чух. (Хв.Уяр. 1955.)
Роза́чипер те, йӗпписем чикеҫҫӗ.
Сӑпса пекех сӑпайлӑ. (Ирони). Сӑпса пек сӗмсӗр.
Ҫитменнине ҫитерӗр, ытлашшине каҫарӑр. (Вӗҫлев тенешӗ.)
Туй тӑвать те ҫуй тӑвать.
Турра шӗкӗр! (Авалхи сӑмах.)
Ӳпкелешме хӑй тӗллӗнех вӗреннӗ вӑл.
Ӳпке ҫӗрсе пӗтиччен пурӑнасах пулать.
Уй варринчи юпа пек ан тӑр-ха.
Ула куракпа ухмахӑн яланах пӗр юрӑ.
Ухмахсене акмаҫҫӗ те, вырмаҫҫӗ те — хӑйсемех ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ.
Фокус-покус ӑсти вӑл. — Фу ты, ну ты ятлӑскер.
Хура пулнӑран хурлӑхан хурланмасть.
Хура пулсан та хурлӑхан вӑл!
Цивик-цивик сас парать чӗкеҫ чӗппи тӳпере.
Чӑваш хырӑмӗ яшка ыйтать. Чӑваш яшка юратать.
Чухӑн ҫын чӑххи кӑрккан курӑнать теҫҫӗ.
Ши! кайнӑ та шак! хытнӑ. (Вӑрӑм ҫынна йӗплесе калаҫҫӗ.)
Шик шӑхӑрса пурӑнаттӑм та — ирӗкӗ хамӑн мар.

Щедринсем те çуралаççĕ, анчах та кашни кун мар.
Ытлашши лайăх та лайăх мар теççĕ вырăссем.
Элекçей элекрен çуралнă пулĕ çав.
Элекçей — турă çынни теççĕ пупсем.
Юратман юрă юрланмасть тенĕ.
Юрламасăр лармашкăн юрлă çынсем мар эпир. (Юрăран.)
Ялан Явăша мар, Канаша кайма та тӳр килет.
Яшка çимесĕр чăваш хырăмĕ тăранмасть.
Яш-яш-яш чиксе кайрĕ.

## ТĔЛĔКРЕ

### Географи çӳревĕ

Тĕлĕрсе кайсан мана
Кайма тиврĕ Аччана,
Аччаран — Ăстарака,
Ăстаракран — Баскака,
Баскакран — Васана,
Васанран — Куснара,
Куснартан — Лапсара,
Лапсартан — Муркаша,
Муркашран — Нăрваша,
Нăрвашран — Пакăша,
Пакăшран — Явăша,
Явăш ятне каласан
Ял шутлавĕ пĕтрĕ ман.

**Асăрхав:** Кĕçĕннисене çак вăййа вĕрентнĕ чухне ял ячĕсене рифмăламасăр каламалла, вĕсем миçе ял ятне пĕлнине кăна шута илмелле.

## ТĔССЕМ

Алфавит йĕркипе çырса тухнă тĕссен ярăмĕ:

Аквамарин — тинĕс шывĕн тĕсĕ.
Бронза тĕсĕ — бронзовый цвет.
Вĕлтĕрен (вĕтрен) тĕсĕ — крапивный цвет.
Герань тĕсĕ — гераневый цвет.
Дыня тĕсĕ — дынный цвет.
Ешĕл (ешĕл сарă, ешĕл симĕс тĕс).
Ёлка тĕслĕ — ёлочный цвет.
Ёнечĕм тĕсĕ — цвет коровяка.
Жасмин тĕсĕ — жасминный цвет.
Зебра тĕсĕ — зебриный цвет.
Ирис тĕсĕ — лиловый цвет.
Йăм хĕрлĕ — ярко-красный цвет.
Йĕпкĕм (йĕпхĕм) — густой, сочный.
Кăвак — синий.
Кĕмĕл тĕс — серебристый цвет.
Кĕрен — бордовый цвет.

Лимон тĕсĕ — лимонный цвет.
Мăкăнь тĕсĕ — маковый цвет.
Нар тĕсĕ — светозарный цвет.
Оранжа тĕсĕ — оранжевый цвет.
Охра тĕсĕ — охристый цвет.
Пăвăрлă тĕс — буланый цвет.
Пăхăр тĕсĕ — медный цвет.
Пурлă (пăвăрлă) тĕс — буланый или чалый цвет.
Пурпур тĕсĕ — пурпуровый цвет.
Роза тĕсĕ — розовый цвет, розоватый цвет.
Сап-сарă — ярко-желтый.
Саркăм (сарăрах) тĕс — саврасый цвет.
Сăрă (сăркка) тĕс — серый цвет.
Сенкер — голубой.
Симĕс — зеленый.
Сип-симĕс — ярко-зеленый цвет.
Сирень тĕсĕ — сиреневый цвет.
Çутă тĕс — светлый тон.
Çырă тĕс — светло-коричневый цвет.
Çӳрен тĕс — рыжей масти лошадь.
Тĕксĕм — смуглый, темный.
Тĕрлĕ тĕслĕ — разноцветный.
Тур (турă) — гнедой, карий (масть лошади).
Тӳпе тĕсĕ — небесный цвет.
Ула — пестрый.
Улма-чăпар — серый в яблоках (масть лошади).
Ультрамарин тĕсĕ — ультрамариновый цвет.
Фиолет тĕсĕ — фиолетовый цвет.
Хакки тĕсĕ — цвет хаки.
Хăла — тĕксĕм хăмăр.
Хăмăр — бурый, коричневый.
Хăрăм тĕсĕ — цвет сажи.
Хĕмчĕк — огненный цвет.
Хĕп-хĕрлĕ тĕс — ярко-красный цвет.
Хура — черный: тĕм хура — густо-черный, хуп-хура — очень черный, шупка хура — слабо-черный.
Хӳтлев тĕс — защитный цвет.
Цинк тĕсĕ — цинковый цвет.
Чăпар — пестрый.
Шап-шурă — очень белый.
Шенкер (сенкер) — голубой, голубоватый, лазоревый цвет.
Шупка — бледный.
Шурă — белый. Шуркăм — беловатый.
Щавель тĕсĕ — щавелевый цвет.
Ылтăн тĕс — золотистый цвет.
Элмен тĕс — алый цвет.
Юнăх тĕс — кровавый цвет.
Яланхи тĕс — постоянный цвет.

## ТИЛӖПЕ МӖЛКИ

Юптару

Тилӗ аннӑ шыв хӗрне —
Унта курнӑ мӗлкине:
— Ах, тӑванӑм, эс, ара,
Мӗн туса ларан шывра?

Мӗлке хирӗҫ чӑр пӑхать,
Чӑр пӑхса ҫапла калать:
— Ҫӑвара шыв сыпнӑ чух
Калаҫма мехелӗм ҫук!

## ТИЛӖПЕ ХӲРИ

Шӳтлев

Тилӗ, Тилӗ, Тилешке,
Тилӗ хӳри милкешке.
Тилӗ юртать — ҫул тӑвать —
Хӳхӗм хӳри ҫук тӑвать.

## ТИСКЕР

Тупкав

Авӑркасси ҫӗрӗнче,
Аслӑ вӑрман варринче,
Вӑрӑм чӑрӑш айӗнче
Вырта парать темӗскер.
Вӑкӑр пекех вӑйлӑскер,
Купа пекех пысӑкскер,
Така пекех ҫӑмлӑскер,
Усал саспа мӗкӗрсе
Ушах ҫӗрте ҫӳренскер.
Калӑр-халӗ, ачасем,
Кам пулать-ши ҫав тискер?

**Тупкав хуравӗ**: Упа.

## ТУПКАВ

Авалхи ҫынсем суту-илӳпе пурӑннӑ. Апат-ҫимӗҫ хире-хирӗҫ тени те ҫавнах пӗлтерет. Пӗри — сутать, тепри — туянать. Мӗн питӗ кирлех мар — ӑна сутатӑн, мӗн питӗ кирлӗ — ӑна туянатӑн. Сутмалли е туянмалли япаласене тавар тенӗ. Апат-ҫимӗҫ кӑна мар, выльӑх-чӗрлӗх те, чӗрӗ ҫынсем те тавар шутне кӗнӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче арҫынпа хӗрҫынна та, ваттипе ҫамрӑккине те

чуралăха сутас йăла пулнă. Çав йăла-йĕрке паллисем калаçу чĕлхинче халь те пулин упранаççĕ. Мĕншĕн сутнă-ха çынсене, чĕрĕ чунсене? Тавара илеймесен, кивçен илнине парса татаймасан — хуçа хăйĕн «чĕрĕ таварне» укçалла сутса яма та пултарнă. Вăрçăра тыткăна лекнĕ çынсене те чуралăха сутнă. Халь сутмалли юмах çине куçăпăр. Юмахçă ытарлă сăмахсемпе усă курса юптарать те юмах ярать. Кам çав юмах тупсăмне пĕлеймест — юмах хуçи çав çынна сутать, сутнă ятне тăвать. Хуçасем те хăйсен çыннисене çапла хăратнă: — Сана чуралăха сутатăп тенĕ. Пурнăç малалла каять, анчах та чуралăхпа çыхăннă сăмах упранса юлнă. Чуралăх йăлтах сирĕлтĕр тесе СУТМАЛЛИ ЮМАХ вырăнне ТУПМАЛЛИ ЮМАХ тесе çырма пуçларăмăр. Пурнăç малаллах шăвать. Нумай сăмахпа каламалли ятсене кĕскен, терминласа калама вĕрентĕмĕр. Сутмалли е тупмалли юмах вырăнне мĕн темелле? Туптарусем теме пулать, анчах та вăл юптарусем тенĕ пек илтĕнет. ТУПКАВ тени мĕнлерех? Çырлахтарать. ТУПКАВ — тупмалли хайлав. Унтан кĕскенрех, унтан лайăхрах калама май çук. Ку вăл вырăс чĕлхинче те, ытти чĕлхесенче те çаплах пулса пынă, çапла пулса пырать те. Вырăс чĕлхинчен илнĕ тĕслĕх: Юмахçă юмахне калать те çапла ыйтать — какое слово загадано? Что загадано? Каярах çав сăмах пĕрлĕхĕнчен ЗАГАДКИ пулса каять.

Тупкавсем тĕрлĕрен пулаççĕ: прозăпа çырнисем тата сăвăласа çырнисем. Форма енчен: ыйту формипе тата ыйту формисĕр çырнисем. Тема енчен илсе пăхсан туптарусен вĕçĕ те, хĕрри те çук. Мĕн илтен, мĕн куран — пурне те ытарлă сăмахсемпе усă курса ТУПКАВ шайне çитерме пулать.

Тупкав ăса çивĕчлетме вĕрентет, сăмахсемпе выляма пулăшать, сăмах вăййисемсĕр, тупкавсемсĕр чĕлхене аталантарма май çук.

## ТУÇАРА

Туймак

Ака пĕтсенех мана
Анат касри пуçана
Хуса ячĕ Хусана.
Кайнă майăн Хусана
Пырса тухрăм Туçана.
Çитсессĕнех Туçана
Лартрĕç мана хуçана,
Халь те пулин Туçара
Эп ларатăп хуçара...
Ларатăп-ха хуçара...
Ларатăп-ха...

(*Юмахçă малалла йăлăхса çитиччен «Ларатăп-ха» тесе калать.)*

# ТУПСĂМНЕ ТУП

Авалтанпа пĕр хăта
Аван чухлать вăхăта.
Хĕл сиввинче кил тулли,
Хĕл иртсен — тĕнче тулли.
Бук-бук-бук пулĕ,
Бук хысĕнче вар пулĕ.
Кашни çыншăн килет вăл,
Килнĕ маях иртет вăл.
Çавралатса тунăскер,
Çĕр чăмăрĕ майлăскер.
Куллен кунах кирлĕскер,
«Кун кĕнеки» тенĕскер.
Вĕçĕм укса пуçтарать,
Вĕçĕм укса салатать.
Питĕ хўхĕм кайăк пур,
Пуç миминче йăви пур.
Вăрман пики хăнара,
Вăйă карти ун тавра.
Тăрна пекех çунатлă,
Тырă вырать хăватлă.
Урока та пуçтарать,
Урокран та салатать.
Çаврака та çўхескер,
Çиме питĕ тутлăскер.
Куллен кунах култарать,
Култарма пит пултарать.
Лавраç мучи пурăнать,
Лапра шывсем пуçтарать.
Çутă пур чух — çуралать,
Çутă пĕтсен — çухалать.
Хал пĕтерсе тунă çурт,
Хапи пур та — мĕлки çук.
Питĕ-питĕ анлăскер,
Питĕ-питĕ тарăнскер.
Пепкесене кирлĕскер,
Пирĕшти пек хитрескер.
Пирĕн килте пике пур,
Питрен савас йăли пур.
Хула çийĕн хум килет,
Хумпа пĕрле сас килет.
Куçма хĕрне куратăн —
Куçран куççуль тăкатăн.
Çавра кăна шурă çурт,
Çавра çуртăн алăк çук.
Тĕкĕр умне ларатăн —
Тĕлĕнтермĕш куратăн.

Унай кăна аслă çурт,
Унтан асли ним те çук.
Вакра шыва кĕренскер,
Вĕçкĕн çерçи майлăскер.
Пайлă-пайлă патак пур,
Патак çинче хутаç пур.
Каша хĕрĕ пурăнать,
Кашни çынна ал парать.
Цирк сăмахра пĕр сыпăк,
Цирк çумĕнче «уль» сыпăк.
Чĕмсĕр пике пурăнать —
Чĕрĕ йĕпсем çуратать.
Шулап вĕçне пăхатăп —
Шурă кишĕр куратăп.
Щ сас палли пĕр ахах,
Щ çумĕнче ят сăмах.
Çĕр айĕнче çĕр пукан,
Çĕрĕшĕ те шур пукан.
Таса çынна çулăхать —
Тикĕт пекех варалать.
Хĕл Мучипе хăнана
Хĕрпи килет яланах.
Уйра ешĕл енчĕк пур,
Унта икĕ нухрат* пур.

**Тупкав тупсăмĕсем:**

1. Автан. 2. Ăшă. 3. Букварь. Чăвашла çапла çырмалла. 4. Вăхăт. 5. Глобус. 6. Дневник. 7. Енчĕк. 8. Ĕмĕт. 9. Ёлка. 10. Жнейка. 11. Звонок. Шăнкăрав — звонок синонимĕ. 12. Икерчĕ. 13. Йĕтĕр. 14. Клоун. 15. Лаххан. 16. Мĕлке. 17. Нÿхреп. 18. Океан. 19. Пукане. 20. Питшăлли. 21. Радио. 22. Сухан. 23. Çăмарта. 24. Телик, телевизор. 25. Уçлăх. 26. Ÿлепке. 27. Фасоль. 28. Циркуль. 29. Чăрăш. 30. Шÿкĕр. 31. Щавель, щ+авель=щавель. 32. Ыхра. 33. Элек. 34. Юрпике. 35. Ясмăк.

## ТАПТАПУС

Ларса кайма инçене
Питĕ кирлĕ автобус.
Ĕлĕк авто вырăнне
Пулнă теççĕ ТАПТАПУС.

«Тап та пус» вăл ик ура,
Унтан лайăх авто çук:
Ик ура ялан çумра —
Такăр пултăр умри çул.

Аслă çулпа тап та пус,
Кĕçĕн çулпа тап та пус,
Сывă пултăр таптапус —
Çумри çăмал автобус!

* Нухрат — авалхи вак укçа.

## ТУХĂÇЛА

Аван-и, аван мар-и, анчах та çулталăк ячĕсене тухăç тĕслĕхĕпе тĕсетсе каласси йĕркене кĕрсе кайрĕ. Эппин, эпир те Тухăç календарĕнчи чĕр чун ячĕпе çыхăннă çулталăк ячĕсем çинчен калаçса пăхар. Хăй вăхăтĕнче, студент пулнă чухне, 1960 — 1961 çулсенче ЧНТИ ирттернĕ экспедицие хутшăннă май чăвашсем хушшинче палăрнă Тухăç календарĕн тĕслĕхĕсемпе икĕ хутчен те тĕл пулма тиврĕ. Ун чухнехи тата хальхи вариантсем хушшинче пĕр пеклĕхсем те, уйрăмлăхсем те пурри сисĕнет. Танлаштарса пăхар-ха çав тĕслĕхсене.

1. УПĂТЕ — ОБЕЗЬЯНА (хитрость, интеллектуальность).
   Çулсем: 1920. 1932. 1944. 1956. 1968. 1980. 1992. 2004.
2. АВТАН — ПЕТУХ (созерцательность, хвастовство).
   Çулсем: 1921. 1933. 1945. 1957. 1969. 1981. 1993. 2005.
3. АНЧĂК — СОБАКА (благородство, справедливость).
   Çулсем: 1922. 1934. 1946. 1958. 1970. 1982. 1994. 2006.
4. СЫСНА — СВИНЬЯ (рыцарство, самоотверженность).
   Çулсем: 1923. 1935. 1947. 1959. 1971. 1995. 2007.
5. ЙĔКЕХӲРЕ — КРЫСА (агрессивность, темперамент).
   Çулсем: 1924. 1936. 1948. 1960. 1972. 1984. 1996. 2008.
6. ВĂКĂР — БЫК (трудолюбие, уравновешенность).
   Çулсем: 1925. 1937. 1949. 1961. 1973. 1985. 1997. 2009.
7. ТИГР — ТИГР (воинственность, энергия).
   Çулсем: 1926. 1938. 1950. 1962. 1974. 1986. 1998. 2010.
8. КУШАК — КОШКА (доброжелательность, утонченность).
   Çулсем: 1927. 1939. 1951. 1963. 1975. 1987. 1999. 2011.
9. АÇТАХА — ДРАКОН (активность, жизненная сила).
   Çулсем: 1928. 1940. 1952. 1964. 1976. 1988. 2000. 2012.
10. ÇĔЛЕН — ЗМЕЯ (Изысканность, мудрость).
    Çулсем: 1929. 1941. 1953. 1965. 1977. 1989. 2001. 2013.
11. ЛАША — ЛОШАДЬ (независимость, честность).
    Çулсем: 1930. 1942. 1954. 1966. 1978. 1990. 2002. 2014.
12. СУРĂХ — ОВЦА (Исполнительность, спокойствие).
    Çулсем: 1931. 1943. 1955. 1967. 1979. 1991. 2003. 2015.

## ТУШКАЙ

Акă Тушкай çырнă йĕркесем:

Ирех Кушак вăранать —
Чĕлхипе питне çавать.

Çак сăвăра мĕнле биологилле йăнăш пур?

**Ыйту явапĕ:** Нимле чĕр чун та чĕлхипе питне çума пултараймасть. Кушак та питне чĕлхипе мар — тяппипе (урипе) çăвать.




**Алфавитри** çирĕм тăваттăмĕш сасă палли — **У**.

Ăна тăван çырулăха 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: уу.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**У** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: ***уй, ука, укçа, улăм, утар, уттар, ухмах, ушах, уяв, уяр...***

сăмах варринче: ***вулав, кулă, кулачă, кулăш, пулă, сулă, çулла, хунар, хурал, хурах, хут...***

сăмах вĕçĕнче: ***ау, вăрану, йăпату, калаçу, пашалу, пăру, çыру...***

**Шӳтлевсем:**

Уа-уа-уа, уласа йĕрет ача.
Уп-уп-уп, упаленсе хуллен чуп!
Ур-ур-ур, урнă шапа сасси пур.
Ух-ух-ух, ухăнса ут кирлĕ чух.

**Ытарлăхсем:**

1.«У» тени мĕне пĕлтерет? *(Елчĕк енчи калаçура «у» тени «вăл» тенине пĕлтерет: — Аçта кайрĕ у? — Улатăра кайрĕха у!*

2. «У» çумне хушу сăмахĕ çырсан мĕн пулать? *(Хыпар хучĕ пулать. Çыр + у = çыру.)*

3. Хупах хушшинче мĕскер пур? *(Упа пур: Х-упа-х.)*

**Ятарлăхсем:**

Уйăхпа Хĕвеле уяма хушнă ваттисем.
Улăпа та çĕнетĕп упа мучи пулăшсан. (Шӳтлев.)
Уяв кунĕ илемлĕ уяма пĕлсен кăна.

## УЙĂП

Сăнав

Уйăп килет сивĕтсен,
Уй-хир юрпа витĕнсен.
Уйăх çурă хушшинче
Уйламасть вăл кил çинчен.

## УЛАЙ

Канаш

Улай тусăм, ан ула,
Манса кай эс улама.
Пĕлнĕ пул — кунта хула,
Улани кунта тĕс мар.

## УЛТĂ ЯШ

Йăлхав

Улаттисен ултă яш,
Ултташĕ те çамрăк яш:
Пĕрремĕшĕ — Пĕлентей,
Иккĕмĕшĕ — Илентей,
Виççĕмĕшĕ — Виçентей,
Тваттăмĕшĕ — Тăвантай,
Пиллĕкмĕшĕ — Пилентей,
Улттăмĕшĕ — Улантай.
Улантай пит пĕчĕкрен
Юмахлам-ха çĕнĕрен.

*(Юмахçă хайĕн юмахне çĕнĕрен пуçласа ярать.)*

## УЛАТКА*

Усă тăвать ĕмĕрне
Ула тĕклĕ пĕр кайăк.
Усал-тĕсел хуртсене
Ухтарать вăл пит лайăх.

---

* Улатка — ула таккавçă, ула тĕклĕ таккавçă тата ытти те. Н.И. Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» çак вĕçен кайăк ятне 12 тĕрлĕ çырса кăтартнă. Вырăсла — дятел, долбан тесе калани те пур.

## УЛМУÇÇИ

Юрă

Пахча варрине
Лартсан улмуççи —
Хуллен çитĕнет
Садра улмуççи.

*Хушмав*:

Улмуççи — чун уççи,
Улми пиçсен тат та çи,
Тат та çи, тат та çи,
Улми пиçсен тат та çи.

Садне пăхмалла —
Тислĕк хывмалла.
Ун чух улмуççи
Чăн та чун уççи.

*Хушмав.*

Çу кунĕ иртет —
Кĕркунне çитет,
Ун чух улмуççи
Каллех чун уççи.

*Хушмав.*

## УПА СĂМАХĔ

Авалхи кунсенче,
Ака пĕтнĕ тĕлсенче,
Апшур Упа йыш пухать,
Йыш пухса çапла калать:
— Ах, хисеплĕ пылхăçсем,
Пыл тăвакан хуçасем,
Ан сăхсамăр сăмсаран —
Сăхсан сăхăр хырăмран.
Хырăм манăн усалскер,
Хуть хăçан та выçăскер,
Кун каçа мĕн çинине
Мансах каять ир енне.
Çавăнпа та хырăма
Кăмăл çук ман ырлама.
Вĕçĕм сăхăр хырăмран,
Ан сăхăр çеç сăмсаран!
Сăмах вĕçне тухнăран
Çапларах çырас хамран,
Пуçĕнче ăс пулнăран
Упа сывă çак таран.




**Алфавитри** çирĕм пиллĕкмĕш сасă палли — **Ӳ.**

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: ӳӳ.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

**Ӳ** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *ӳкев, ӳкерчĕк, ӳпле, ӳркенчĕк, ӳсĕм, ӳсĕркке, ӳтлĕ, ӳт-пӳ, ӳхĕ...*

сăмах варринче: *кӳл, кӳр, пӳл, пӳлĕм, пӳр, сӳретке, сӳс, сӳсмен, тӳс, тӳсĕм, шӳрпе, шӳт...*

сăмах вĕçĕнче: *вĕтӳ, кĕтӳ, кĕрӳ, ӳкĕнӳ, сӳ, çӳçӳ, çӳхӳ, тӳ, ӳт-пӳ, ӳхĕрӳ, ӳхлетӳ, шӳ...*

**Шӳтлевсем:**

Ӳп-ӳп-ӳп, ӳпре тусăн пĕчĕк пӳ.
Ӳс-ӳс-ӳс, ӳснĕçемĕн ӳс те ӳс!
Ӳт-ӳт-ӳт, ӳтре сартут пĕр кĕтӳ.
Ӳх-ӳх-ӳх, ӳхĕ, ăçта хӳтлĕхӳ?

**Ытарлăхсем:**

1. «Ӳ» çумне кантăр йăранĕ хушсан мĕн пулать? *(Кайăк ячĕ пулать. Ӳ+ лепке = ӳлепке.)*
2. «Ӳ» çумне мĕн хушсан вăхăт пулать? *(«Лĕм» сыпăк хушсан. Ӳ+ лĕм = ӳлĕм.)*
3. «Ӳ» çумне мĕн хушсан çитĕнӳ пулать? *(«Сĕм» сыпăк хушсан. Ӳ+ сĕм = ӳсĕм.)*

**Ятарлăхсем:**

Ӳкĕнмелле пулнă чух ӳкĕнни те питĕ чух.
Ӳхĕпе ӳхĕ ӳхĕрсе паллашаççĕ.
Ӳхĕ юррине Ӳлепке юрламасть.

## Ӳлепке

Халь анчах мар, ĕлĕкех
Шывпа туслă Ӳлепке.
Тĕрĕслесе шыв тĕпне
Тăрантать вăл хырăмне.

## Ӳпре

Ӳпре ӳрĕк пурăнать —
Ӳтсĕр пекех курăнать.
Ӳтсĕр чун пек пулин те
Ӳпки те пур, чĕри те.

## Ӳсетĕп

Аван мар та калама —
Питĕ вăрах ӳсетĕп,
Питĕ вăрах ӳснĕ май
Темĕн те пĕр тӳсетĕп:
Аваннине-кансĕрне,
Ăшшипеле сиввине,
Пуррипеле çуккине,
Çемçипеле хыттине,
Хурипеле шуррине,
Япăххипе ыррине...
Тӳсме йывăр — тӳсетĕп,
Ӳсме йывăр — сисетĕп,
Тем пек йывăр пулин те
Чарăнмасăр ӳсетĕп!

## Ӳхĕ

Ӳхĕрет сасартăк ӳхĕ,
Ӳхĕрет — сехре хăпать.
— Ӳхĕ, эс ун пек ан ӳхĕр,
Ӳхĕр çепĕç сасăпа.

Ӳлĕмрен те, халĕ те
Ӳхĕ кĕмест ӳкĕте:
Ӳхĕрет шав кивĕлле —
Ӳхĕреймест çĕнĕлле.




**Алфавитри** çирĕм улттăмĕш сасă палли — **Ф.**

Ăна хальхи чăваш çырулăхне 1938 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: фă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

**Ф** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *фабрика, фабула, фата, Феня, фигура, фото, фотограф, футбол, фужер...*

сăмах варринче: *Африка, офис, софа, суфлер, кофе, Уфа, шофёр, шифер, шифоньер, эфа...*

сăмах вĕçĕнче: *граф, жираф, телеграф, тиф, торф, Фарлаф, шкаф, эльф...*

**Шӳтлевсем**:

Фа-фа-фа, фанерсем тăвать Уфа.
Фе-фе-фе, Федян çĕнĕ галифе.
Фи-фи-фи, Филимон юсать софит.
Фу-фу-фу, фургон тĕпĕ миçе фут?

**Ытарлăхсем:**

1. Фагот мĕнпе ытарлă? *(Унăн ячĕ «фа» нотăпа пуçланать.)*
2. Филимон çумĕнче мĕскер пур? *(Лимон пур.)*
3. Фламинго варринче мĕскер пур? *(«Ми» нота пур.)*
4. Футбол мĕнле сăмах? *(Ултă сас паллирен тăракан сăмах.)*

**Ятарлăхсем:**

Филармони философи арманĕ мар.
Финанс проблеми финсене те канлĕх памасть.
Фи! тенипех фикус çитĕнмест.

## Ф ТАТА Ы

Юптару

Асра çук çĕртен Ы çыравçă патне пуçлăхсен пуçлăхĕ Ф. шăнкăравлать.

— Аван-и?

— Çак саманта çитиччен аванахчĕ-ха!

— Манăн Сирĕнпе куçа куçăн калаçмалли пур.

— Килĕшетĕп, анчах та ăçта тĕл пулатпăр?

— Паллах, Атăл хĕрринче.

— Атăл хĕрри вăрăм вăл, Аçтăрхантан пуçласа Валдай таранах тăсăлать.

— Эпир ăна кăштах кĕскетĕпĕр, шăп та лăп ГЭС кĕперĕ патĕнче тĕл пулăпăр.

— Хăçан?

— Халех тухатпăр та халех тĕл пулатпăр.

Халех тĕк халех. Ватă çыравçă тумланать те Атăл хĕрринелле утать. Пăхать, Атăл хĕрринче кимĕ, кимĕ çумĕнче Президент. Паллă çынсем куçа куçăн тĕл пулаççĕ.

— Ларăр кимĕ çине, Атăл варринче калаçăпăр, — тет Президент.

Ватă çыравçă кимĕ çине тепĕр хут пăхса илет те кимĕ шăтăк пулнине асăрхать.

— Ма лармастăр, хăратăр-им? — ыйтать Ф. Президент Ы. çыравçăран, — апла пулсан хам малтан ларатăп.

— Сирĕн мĕнрен хăрамалла — президентсем тĕнче тулли, Ы. хушаматлă çыравçă вара пĕрре кăна, çавăнпа та мана хăрани те вырăнлă.

Вара писательпе Президентăн çыран хĕрринче калаçнипех çырлахма тивет. Кунпах çырлахас çук-ха, вĕсен тепĕр тĕлпулу пулатех пулĕ.

## ФОКУС

Ачасен умне сцена çине фокусник тухать те ыйтать:

— Фокус туса кăтартас-и? Паллах, ачасем кăтарт теççĕ. Фокусник аллине малалла кăнтарать те пĕр ачаран ыйтать:

— Акă пилĕк пӳрне, пилĕк пӳрне пĕрлĕхне мĕн теççĕ?

Ача кирек мĕн каласан та фокусник пур пĕрех:

— Фу ты, ну ты, çавна та пĕлеймерĕн, пилĕк пӳрне пĕрлĕхĕ ЧĂМĂР (е ЧĂМĂРККА) пулать. Халь калană сăмах ан манăçтăр тесе çак фокуса тепĕр хут туса кăтартатăп.

Фокусник, малтанхи пекех, аллине кăнтарса калать:

— Акă пилĕк пӳрне, пилĕк пӳрне пĕрлĕхне мĕн теççĕ?

Хуравлакан «чăмăр» тесе çирĕплетет.

Фокусник каллех: — Фу ты, ну ты, — тет, — çавна та пĕлеймерĕн, пилĕк пӳрне пĕрлĕхĕ «чышкă» пулать. Пĕр сăмахпа каласан, фокусник кашнинчех хирĕçлеме май тупать. Фокусник ыйтнине тивĕçтерес тесен мĕн тумалла?

**Ыйту явапĕ:** Фокусник ыйтнине тивĕçтерес тесен икĕ тĕрлĕ ответне те пĕр харăс калас пулать.




**Алфавитри** çирĕм çиччĕмĕш сасă палли — **Х**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: хă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Х** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *хал, халат, халăх, хапха, хаçат, хăйра, хăлха, хуран, хырăм, хысна...*

сăмах варринче: *аха, ахах, паха, сахал, тиха, ухват, ухмах, ухтару, ыхра, юхăм...*

сăмах вĕçĕнче: *ах, анчах, хăях, хĕлĕх, хĕрĕх, хупах, хурах, хурхух, хух, хӳтлĕх...*

**Шӳтлевсем:**

Ха-ха-ха, хавха çĕклет халăха.

Хе-хе-хе, хевте çитмест халлĕхе.

Хи-хи-хи, хирте нумай хурхуххи.

Ху-ху-ху, хуçа пек тыт хăвна ху.

**Ытарлăхсем:**

1. Хам-хам! — тесе кам калать? *(Хăйне кăна хисеплекен.)*
2. Хĕлĕх варринче мĕн пур? *(«Хĕлĕх» сăмах варринче «Л» пур.)*
3. Хĕлле мĕнле вĕçленет? (*Юр пĕтнипе.)*
4. «Ху» камăнне пĕлсен хула пулать. *(Ху + сан = Хусан.)*

**Ятарлăхсем:**

Хавхаланмасăр хаваслăх çĕкленмест.

Хаклă иккен хамăр тăвансем хака хума пĕлсессĕн.

Халăх-халăх тенĕрен хал çĕкленет вĕçĕмрен.

Хушмасăр ĕçлекен хуçа пулнă, хушнипе ĕçлекен тарçă пулнă.

## ХУРАК

Авалхи вăхăтсенче Хура курака вырăссенчен тĕсетсе ХУРАК тесе каланă пулнă, анчах та Куракпа Хурак пĕр пек илтĕннĕрен икĕ сăмах хушшинчи уйрăмлăх пĕтсе ларнă. (А. Розов, 1936.)

## ХУРА КУРАК

Хура тĕслĕ пулнăран
Хура тесе ан хурла.
Хура курак хуп-хура
Хура çĕрпе туслăран.

## ХĔМХӲРЕ

Хĕвел патне ĕлĕкрех
Хĕрĕх кайăк вĕçнĕ тет,
Хĕвел парни, пĕлĕрех,
Хĕмхӳрене лекнĕ тет.

**Хĕрӳллĕ ыйту:** Хĕмхӳрене тепĕр тĕрлĕ мĕн теççĕ?
**Ыйту явапĕ:** Хĕмхӳрене тепĕр тĕрлĕ вутхӳре теççĕ.

## ХĔВЕЛĔМĔР

Хĕвелĕмĕр хĕрӳллĕ çиçтĕр —
Хĕвел çути пурне те çиттĕр!

## ХĔЛ МУЧИ

Халех çитет Хĕл Мучи —
Хыпарçăсем пĕлтереç,
Хĕрлĕ питлĕ хĕл хуçин
Хутаç тулли кучченеç.

Анна валли — ананас,
Кашук валли — катăркас,
Кулай валли — кулачă,
Улай валли — уначă,

Павăл валли — панулми,
Çеруш валли — çĕрулми,
Ыттисене пурне те —
Ытарма çук ыр тетте.

## ХЁЛЛЕХИ ХЁЛХЕМ

Алхасма вĕреннĕ Çил ачи
Ахăрса чупать ав катаччи.
Вăйханмалăх унăн вăйĕ пур,
Вирхĕнмелĕх унăн хĕмĕ пур.

Вăл паян çанталăк уççинче
Вуçех манса кайнă ĕç çинчен.
Çил ачин тĕп ĕçĕ халь пĕрре —
Çирĕп тытса пыр çеç чĕлпĕре.

Савăнăçлă кулă куçĕнче,
Сар укаллă çĕлĕк пуçĕнче.
Ун лаши — çунатлă урхамах —
Уçлăхра чарусăр уйрăмах.

Тулхăрса тапать те çĕр çине —
Туххăмра çитет ту тăррине,
Васкаса ухать те пуçĕпе —
Вĕçтерет хур кайăк çулĕпе.

Уйсем урлă, хирсем урлă вĕçтерет —
Урлă-пирлĕ чĕрĕ кĕмĕл сирпĕтет.
Чĕрĕ кĕмĕл вĕçĕмсĕр вĕçет,
Чĕрĕ кĕмĕл çиçĕм пек çиçет.

Çав таса та сумлă пурлăха
Çупкăмпа сапать тавралăха,
Çĕр çине çав пурлăх тăкăнать —
Çĕр-анне çĕн шупăр тăхăнать.

## ХĔНЛĔХ

Ёнене нихăçан та ан хĕне,
Хĕнес пулсан
Ёне каять хĕне,
Хĕне каяс пулсан Ёне —
Хĕрхенсе кăна...
парать сĕтне!

## ХӰХЛЕВ

Хӳхĕм хĕрсен те хӳхлесси пулкалать.



**Алфавитри** çирĕм саккăрмĕш сасă палли — **Ц**.

Ăна чăваш çырулăхне 1933 çулта кĕртнĕ, унпа урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсенче усă кураççĕ.

Вăл çапла вуланать: цă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Ц** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: ***цемент, центнер, центр, цензура, цех, цикл, циклон, цинк, цирк, циркуль, цитата, цифра...***

сăмах варринче: ***ацетон, доцент, моцион, специ, Цицерон, Флоренци, функци, эмоци...***

сăмах вĕçĕнче: ***кореец, матрац, песец, тунец, форзац, эрзац...***

**Шÿтлевсем:**

Ца-ца-ца, Цаца калать ца-ца-ца.
Це-це-це, цехсенче вĕçмест цеце.
Ци-ци-ци, циркра ĕçлет Айпици.
Цы-цы-цы, цыганран хăрать Янцы.

**Ытарлăхсем:**

1. Цирк мĕнле пуçланать? *(Музыка сассипе.)*
2. Цирк умĕнче мĕн пур? *(Алăк.)*
3. Цирк мĕнле вĕçленет? ***(Программа пĕтнипе.)***

**Ятарлăхсем:**

Цирк вăл тĕлĕнтермĕшсен керменĕ.
Циркра ĕçлекенсене мĕн теççĕ? *(Циркач теççĕ.)*
Циркуль мĕнпе ытарлă? *(«Цирк» тенĕ сыпăк пуррипе.)*

## ЦИРКАЧ

Пире ҫакӑн пек тупкав парнелерӗ.

Цирка курма кайнӑ чух,
Циркран киле килнӗ чух:
Мӗне малтан куратӑн,
Тӳрех алӑ паратӑн?

**Тупкав хуравӗ:** алӑк хӑлӑпне.

## ЦЕЗАРЬ

Тӗпчев

Ц мана тӗлӗнтерет —
Цезарь тени мӗн пулать?
Цезарь тени латинла,
Царь пулать вӑл вырӑсла.

## ЦЕНЗОР

Шӳтлев

Цензор ятне илнӗскер,
Чух-чухланма пӗленскер,
Ӗҫе пырса кӗрет —
Кун каҫа ӗҫре хӗрет:
Умне «ДОКЛАД» хурать —
Кӗскетлетме тытӑнать:
Д кӗскетет — оклад пулать,
О кӗскетет — клад пулать,
К кӗскетет — лад пулать,
Л кӗскетет — ад пулать,
Д кӗскетет — д пулать,
Ӑна та кӗскетет —
мӗн юлать?

**Ыйту явапӗ:** Пӑнчӑ (.) юлать, мӗншӗн тесен ӑна кӗскетме май ҫук. Пӑнчӑ ҫук пулсан — пшик юлать.

## ЦЕНТУРИОН

Ытарлӑх

Центурион Центурионович Центурионов мӗнпе паллӑ?

**Ыйту явапӗ:** Ӑна паянтан пуҫласа эпӗ те, эсӗ те пӗлетпӗр. Вӑл, чӑвашла куҫарсан, Салтакей Салтакеевич Салтакеев пулать.




**Алфавитри** çирĕм тăххăрмĕш сасă палли — **Ч.**
Ăна чăваш çырулăхне 1938 çулта кĕртнĕ.
Вăл çапла вуланать: чă.
Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

**Ч** çак вырăнсенче тĕл пулать:
сăмах пуçламăшĕнче: ***чавка, чакак, чакан, чан, чап, чашăк, чăкăт, чăлах, чăнах, чăрмав, чукмар, чухлав.***
сăмах варринче: ***ача, вăчăра, качака, пăчăр, сăнчăр, тачкă, улача, шалча...***
сăмах вĕçĕнче: ***басмач, кулач, мулкач, пач, шăнкăрч, шăхлич, Эйпеч, Юденич...***

**Шӳтлевсем:**

Ча-ча-ча, чакак тĕкĕ улача.
Чă-чă-чă, чăваш çиет кулачă.
Че-че-че, чей ĕçетĕп ир çинче.
Чĕ-чĕ-чĕ, чĕкеç вĕçме пикенчĕ.

**Ытарлăхсем:**

1. Чан варринче мĕн пур? *(«Чан» сăмах варринче «а» пур.)*
2. Чăрăш тăрринче мĕнсем пур? *(«Чăрăш» сăмахра «а» тăррисем пур.)*
3. Чул варринче мĕн пур? *(«Чул» сăмах варринче «у» пур.)*

**Ятарлăхсем:**

Чăваш чĕлхи — чĕкеç чĕлхи, чĕкеç чĕлхи — чĕвĕлти чĕлхе.
Чĕрĕ чĕлхе — чĕрĕ хĕлхем.
Чуна парса чутласан чула та чун кĕрет.
Чура пулма намăс! — тенĕ Çеçпĕл Мишши.

# ЧАСКАЛУ

**Часкалу** — васкаса, питĕ хăвăрт-хăвăрт каламалли пуплевсем. Акă вĕсем, алфавит йĕркипе хатĕрленĕ часкалу тĕслĕхĕсем.

Апашпа ан аташ, аташпа ан арпаш. (Апаш — ял ячĕ, аташ — пĕр пек ятлă çын.)

Ăркайпа — Ăрсай, Ăскайпа Ăстай. Вариант: Ăркайпа Ăстай, Ăрсайпа Ăстай.

(Ăркай, Ăстай, Ăскай, Ăстай — авалхи чăваш ячĕсем.)

Бом-бом — альбом, альбомра — Бим, Бом. (Бим, Бом — клоун ячĕсем.)

Вассапа Ваçça васкаççĕ ваçка. (Васса — хĕрçын ячĕ, Ваçça — арçын ячĕ).

Гера герой мар, герой Гера мар. (Гера — арçын ячĕ.)

Дон-дон Андон мар, тон-тон Антон. (Антон — арçын ячĕ.)

Елимепе Емиле, Емилепе Елиме. (Елиме, Емиле — хĕрçын ячĕсем.)

Ёнчĕ-пĕнчĕ пĕр енчĕк, ёнчĕ марри çур енчĕк.

Ёлки-палки вырăсла, Елюк ёлкки чăвашла.

Жу-жу-жу, жук пулать, жулатмасан — çук пулать. (Жук — нăрă.)

Зав та пур, зам та пур, замзав теме май та пур.

Ивишĕм-кивишĕм, кивве юлнă пĕлĕшĕм.

Йĕкрен йĕп тухмасть, йĕпрен йĕк тухать. (Йĕк — кĕтмен инкек, сарăмсăр сиксе тухнă пăтăрмах.)

Кĕске ăслă кĕсмен кĕсел çиме пĕлмен.

Куçма куçлать, Куççа кулать. (Куçма, Куççа — арçын ячĕсем.)

Ламран лама, малтан мала: кайри мала, малти кая.

Мачча Миччара мар, Мичча маччара. (Мичча — Димитрий, Митя.)

Нимĕр тимĕр мар, тимĕр нимĕр мар.

Ох-ох, Оймякон, хо-хо, Хохлома. (Оймякон, Хохлома — географилле вырăн ячĕсем.)

Пат-пат Паттаман патшапала тупăшман.

Рак мар ку, ку — Курак.

Сумкăра — вак сум, хутаçра — хут укçа.

Çумкка çумра, Хумкка хыçра. (Çумкка, Хумкка — арçын ячĕсем).

Туркăшпала Турткăша турă хушнă туртăшма. (Туркăш, Турткăш — вĕçен кайăк ячĕсем.)

Укçа Уçкашăн мар, Уçка укçашăн. (Уçка — арçын ячĕ, вырăсла — Осип.)

Вариант: Укаçра мар уçкă, уçкă Уçкара.

Ӳпре ӳсĕр пулас çук, ӳпре ӳтрен пуяс çук.

Фу ты, ну ты вырăсла, ножки гнуты чурăсла.

Хылчăкпа ан хыр, хырчăкпа хыр.

Вариант: Хылчăкланнă хырчăкпа хырчăкла-ха анчăка.
Цехри мар, циркри мар, цирк цехĕнчи циркуляр. (Циркуляр — приказ хучĕ.)
Чап пултăр та чыс пултăр, чыс пултăр та час пултăр.
Чикен чикет — чуна витет, чĕре патне пырса тивет.
Шăмă хăмăшсăр, хăмăш шăмăсăр.
Шăпăрпа шăрпăк, шăпчăкпа шăрчăк.
Шывсăр шетник шултăркать, шывлă шетник шăршăнать.
Щитти айĕнче щитти, щитти çинче щитти, щитти çумĕнче щитти, щитти хыçĕнче тепĕр щитти — мĕн пурĕ миçе щитти? (Пилĕк щитти тетĕр пуль, Çук, йăнăшатăр. «Щитти» сăмах сакăр хутчен каланать.)
Ыран ыра ырар. (Букварь, 1906.)
Ыраш ларать шăркана, шăрка лармасть ыраша.
Ыр аш çиес пулсан — ыраш вырма аван.
Эп те эстет, эс те эстет, эппин эпир пурте эстет, — эрленсе калать эстет.
Эрлен, Эрнюк, сан эрнӳ. (Н.П.Зайцев, 1958.)
Юрлин юрми — юршыв хăйми.
Яшка яшка пĕçерет, Яшка яшка çитерет. (Вуламалла: Яшкă яшка пĕçерет, Яшкă яшка çитерет.)
Я — вăл эпĕ, эсĕ мар — я пирки ма тавлашар.

## ЧĂМĂР ТА ЧЫШКĂ

Чухлав

Чăмăр чăмăртатпăр —
Чышкă вăл пулать,
Чышкă кăнтаратпăр —
Чăмăркка пулать.

**Ыйту**: Мĕнле ăнланмалла çак йĕркери сăмахсене?

**Хурав:** Чăмăр, чăмăркка, чышкă — пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем.

## ЧЕБУРАШКА

Шӳт

Чебурашка чей ĕçет,
Чей вĕри пулсан — вĕрет.
Чей ĕçсессĕн мĕн тăвать?
Чей хуçине тав тăвать!
Чей хуçи хăй мĕн тăвать? —

**Ыйту явапĕ:** Хăйĕн ĕçне малалла тăсать.




**Чăваш çĕршывĕ — Чăваш ен,**
**Чечеклен те хитрелен!**

## ЧĂВАШ ЕН

Чăваш çĕршывĕн тĕп Хули — Шупашкар (Чебоксары).

Чăваш çĕрĕн çĕнĕ историне 1920 çулта Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа шутлаççĕ. 1925 çулта вăл автономиллĕ республика пулса тăнă. 1991 çултанпа — Чăваш Республики.

Чăваш Республикин лаптăкĕ — 18,3 пин кв.км.

Халăх йышĕ — 1360 пин çын.

Администраци пайĕсем:
районсем — 21;
хуласем — 9;
поселоксем — 5;
ял администрацийĕсем — 317.

Шупашкартан Мускава çитме — 768 çухрăм (км).

# ЧЕПЧЕН

Юмах

Аслӑ улӑхри лапамра пурӑнакан Чепчен кайӑк пӗр кӗтмен ҫӗртен хӑмӑшлӑха пырса тухать. Чепчен тени текерлӗкӗн тепӗр тӗрлӗ ячӗ вӑл.

Ирхи вӑхӑт. Хӑш-пӗр юлхаврах кайӑксем куҫӗсене те йӗркеллӗ уҫайман-ха. Хӑмӑшчи вара хӑйӗн хаваслӑ юррисене пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне шӑрантарать. Чӑтаймасть Чепчен — сӑмах хушать:

— Питӗ ир пуҫланӑ-ҫке хӑвӑн юррусене юрлама — макӑрмалла ан пултӑрччӗ. Ир юрлакан каҫчен макӑрать теҫҫӗ вӗт.

Хӑмӑшчи сасӑ илтӗннӗ еннелле ҫаврӑнса пӑхать те улӑхра пурӑнакан ҫывӑх тусне — Чепчене курах каять.

— Эсӗ пултӑн-им-ха ку, Чепчен тусӑм? — тет савӑнса.

— Эпӗ пултӑм-ха та, ытла та ир юрлама пуҫланӑ тетӗп-ҫке.

— Эпӗ хӑнӑхса ҫитнӗ ӗнтӗ кун пеккине: ирхине те, кӑнтӑрла та, каҫхине те, ҫӗрле те юрлакалатӑп. Шавах юрлас килет! Макӑру тенӗрен манӑн макӑрса ларма вӑхӑтӑм та, кӑмӑлӑм та ҫук. Пурнӑҫа ӑна пурӑнма панӑ — пурӑнас та пулать, тарласа ӗҫлес те пулать, хушӑран юрлас та пулать.

— Ҫаплине ҫапла та, яланах юрлама май ҫук вӗт-ха?

— Эпӗ хама майлӑ вӗҫен кайӑк: манӑн пӗр вӗҫӗм юрлас килет, юрламасӑр нимле ӗҫе те пикенес килмест темелле. Ҫӑвара хупсанах темӗскер ҫитмен пек туйӑнса тӑрать. Паллах, юрӑ ҫитмест. Юрласанах чун уҫӑлса каять.

— Эсӗ, мӗн, тара тытнӑ юрӑҫӑ-им?

— Юрӑҫне юрӑҫах мар та, пӗр юрлама тытӑнсан — юрӑҫсенчен те каях мар. Юрлама хӑнӑхса кайрӑм та — юрлатӑп та юрлатӑп. Манӑн юрӑсем те хама май — юратупа юрласси ҫинчен. Итлеме кӑмӑлу пулсан пӗрер ҫаврӑм юрласа та пама пултаратӑп. Вӑхӑту пулсан итле эппин:

Юрласа юл мехел ҫитнӗ чух,
Юрласси вӑл ялан пулас ҫук!

# ЧЕЧЕКСЕМ

Юрӑ

Ах, илемлӗ-ҫке вӗсем —
Аслати чечекӗсем.
Асамат тӗс панисем,
Анюк ятне илнисем.

*Хушмав:*

Чечексем, чечексем —
Чӗрӗ куҫ илемӗсем,
Чечексем, чечексем —
Чун-чӗре хӗвелӗсем.

Кӑвак тӗслӗ чечексем —
Кӑвакарчӑн куҫӗсем,
Кӑвак тӳпе шевлисем —
Камшӑн ӳснӗ-ши вӗсем?

*Хушмав.*

Кӗрен тӗслӗ чечексем —
Кӗвӗҫтерме ӳснисем,
Кӗрхи кунсем ҫитиччен
Курса юлма кирлисем.

*Хушмав.*

Хӗрлӗ тӗслӗ чечексем —
Хӗвел тӗсне илнисем,
Хӗм сапакан чечексем —
Хӗрпе каччӑ чунӗсем.

*Хушмав.*

Юр пек шурӑ чечексем —
Юмлӑхшӑн ҫуралнисем.
Юратать-и, юратмасть-и —
Ҫавна пӗлме кирлисем.

## ЧӖР ЧУНСЕМ

### Вӑйӑ

Ака ҫинче,
Аслӑ улӑх варринче,
Асамлӑ вӑй хушнипе
Арлан пулса тӑтӑм пек,
Арланран — Ӑман,
Ӑманран — Бизон,
Бизонран — Вӑкӑр,
Вӑкӑртан — Гиббон,
Гиббонран — Дельфин,
Дельфинран — Енот,
Енотран — Ӗне,
Ӗнерен — Жираф,
Жирафран — Зебра,
Зебрӑран — Ирбис,
Ирбисран — Йӑпар,
Йӑпартан — Кашкӑр,
Кашкӑртан — Лаша,
Лашаран — Марал,
Маралтан — Нарвал,
Нарвалтан — Омар,

Омартан — Пакша,
Пакшаран — Рысак,
Рысакран — Сайгак,
Сайгакран — Çăрха,
Çăрхаран — Тулпар,
Тулпартан — Упа,
Упаран — Ӳтĕлхе,
Ӳтĕлхерен — Фенĕк,
Фенĕкрен — Харза,
Харзаран — Циклоп,
Циклопран — Чĕрĕп,
Чĕрĕпрен — Шакал,
Шакалтан — Щитпуç,
Щитпуçран — Ыравçă,
Ыравçăран — Эфа,
Эфаран — Юс,
Юсран — Ягуар,
Ягуарпа чаранар.

Ачасем! Вăййа-юмах вуласа тухнипех вĕçленмест, малалла тăсăлать: çĕнтерӳçĕ пулас текенсен çак юмахри чĕр чунсем çинчен характеристика парса тухмалла. Кам тĕрĕсрех ответлесе тухать — çав çĕнтерӳçĕ пулать.

Çак вăййа тепĕр хут выляс пулсан чĕр чун ячĕсене çĕнетме те юрать.

## ЧĔР ЧУНСЕМ

Ответ тĕслĕхĕ

Арлан — ана-çаран çинче пурăнакан кăшлакан чĕр чун.
Ăман — çĕр айĕнче пурăнакан хĕрлĕ хурт.
Бизон — Америкăри прерисенче пурăннă чĕр чун.
Вăкăр — килти măйракаллă выльăх.
Гиббон — упăтесен пĕр тĕсĕ.
Дельфин — китсен йăхне кĕрекен тинĕсри чĕр чун.
Енот — Америкăра пурăнакан чĕр чун.
Ĕне — килти шултра măйракаллă выльăх.
Жираф — Африкăра пурăнакан чи çӳллĕ чĕр чун.
Зебра — йăрăм тирлĕ чурăс лаша.
Ирбис — юрлăхри барсăн тепĕр тĕрлĕ ячĕ.
Йăпар — пĕчĕк кăна çăткăн чĕр чун.
Кашкăр — выльăхсене сăтăр тăвакан чĕр чун.
Лаша — килте усракан ĕç выльăхĕ.
Марал — пăлансен пĕр тĕсĕ.
Нарвал — асав шăллă кит, тинĕсри чĕр чун.
Омар — тинĕсре пурăнакан пысăк раксен пĕр тĕсĕ.
Пакша — вăрманти мăрка хăлхаллă чĕр чун.
Рысак — чупакан лашасен пĕр тĕсĕ.
Сайгак — çеçен хирте пурăнакан курпун сăмсаллă чĕр чун.
Çăрха — лашасен пĕр тĕсĕ.

Тулпар — юмахра тӗл пулакан ҫунатлӑ лаша.

Упа — шӑтӑкра хӗл каҫакан пысӑк чӗр чун.

Ӳтӗлхе — тинӗсре пурӑнакан ҫиме юрӑхлӑ моллюск (устрица).

Фенёк — пушхирсенче пурӑнакан пысӑк хӑлхаллӑ пӗчӗк тилӗ.

Харза — сӑсарсен пӗр тӗсӗ.

Циклоп — шывсенче пурӑнакан хӑрах куҫлӑ пӗчӗкҫӗ чӗр чун.

Чӗрӗп — вӑрманта пурӑнакан йӗплӗ чӗр чун.

Шакал — Кӑнтӑр енчи ҫӗршывсенче пурӑнакан ҫӑткӑн чӗр чун.

Щитпуҫ — наркӑмӑшлӑ ҫӗленсен пӗр тӗсӗ, вырӑсла — щитомордник.

Ыравҫӑ — юлхав упате, вырӑсла — ленивец.

Эфа — Вӑтам Азире тӗл пулакан наркӑмӑшлӑ ҫӗлен.

Юс — шӑшисем тата вӗт кайӑксем тытакан чӗр чун.

Ягуар — Америкӑра пурӑнакан чурӑс чӗр чун.

## ЧЕЙ МЫСКАРИ

Ака пӗтсен пӗринче,
Пӗр илемлӗ ир ҫинче,
Кӗрсе лартӑм чей ӗҫме —
Чей пуҫларӗ хирӗҫме:
— Мана савмастӑн,
Савма та шутламастӑн,
Сахӑр та памастӑн,
Пыл та хыптармастӑн,
Юп курмастӑн,
Юратмастӑн!..
Хайхискер,
Шухӑскер,
Ҫӑмӑл пӗлӗт пулчӗ те,
Ман ҫине ал сулчӗ те
Вӗҫсе кайрӗ инҫене—
Ҫичӗ тинӗс леш енне...
Кайрӗ те ҫухалчӗ.
Чунӑм хурланчӗ:
— Чей килессе леш енчен
Кӗтмелле ман хӑҫанччен?..

**Ыйту явапӗ:** Кӗтӗк пуличчен кӗтмелле, кӗтӗк пулсан кӗтмелле мар. Ҫапла каланӑ чӑвашсем.

## ЫТАРЛӐХ

«Чӗр чун» тени тӗрӗсех-и?

**Ыйту явапӗ:** «Чӗрӗ чун» тесен тӗрӗсрех. Кӗскен «чӗр чун» темелле.

# Ш

**Алфавитри** вăтăрмĕш сасă палли — **Ш**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: шă.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Ш** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *шав, шакă, шапа, шар, шалча, шăна, шăпăр, шупăр, шурă, шырлăх...*

сăмах варринче: *ашăк, вашмăк, кашкăр, пушар, пушкăрт, раштав, ташă, ушах, хушăк, чашăк, чышкă...*

сăмах вĕçĕнче: *акăш, варкăш, калуш, лантăш, тантăш, шухăш, эреш, эрлеш, юлташ, янташ...*

**Шӳтлевсем:**

Ша-ша-ша, Шахрун кайнă Канаша.
Ше-ше-ше, шеллес килет лĕпĕше.
Ши-ши-ши, шитлеме пĕлмест Пăши.
Шу-шу-шу, шут пĕлет-и юлташу?

**Ытарлăхсем:**

1. Шăвăç варринче мĕн пур? *(«Шăвăç» сăмах варринче «ăвă» пур.)*
2. Шăл хушшинче мĕн пур? *(«Шăл» сăмах хушшинче «ă» пур.)*
3. Шămă варринче мĕн пур? *(Шămă варринче миме пур.)*

**Ятарлăхсем:**

1. Шав-шав шавлать сĕм вăрман, шавласа халь мĕн тăван?
2. Шăвăç чуман çиҫе шăпăрлансене çех лартаççĕ.
3. Шутлама пĕлни шутсăр кирлĕ япала.

## ШӐПАҪӐ

Аса килет Ёмпичче,
Аса килет Тӑрнаккай.
Эсӗ вӑйӑ картинчен
Ятлаҫмасӑр тухса кай.

Юлашки сӑмах кам ҫине тивет — унӑн вӑйӑ картинчен тухмалла. Кая юлни — хуралҫӑ пулать. Вӑйӑ малалла тӑсӑлать.

Вариантсем:

1. Пӗрре, иккӗ — Елизар,
Иккӗ, виҫҫӗ — типӗ вар,
Типӗ варта ылтӑн шар...
Шут вӗҫленчӗ —
тух та тар!

Кам ҫине юлашки сӑмах лекет — ҫав вӑйӑран тухать.

2. Кахал этем каялла,
Маттур этем малалла,
Пакшан мӑйӑр пухмалла,
Сан хуралҫӑ пулмалла.

3. Хурлантӑм та хуралтӑм,
Шухӑшларӑм — шуралтӑм.
Ытла шурса кайиччен
Тух-ха вӑйӑ картинчен.

## ШӐШИ ЮРРИ

Шӑпав

Ай-ши-ши, ай-ши-ши,
Ма эп шӑши пултӑм-ши?
Курак та мана курать,
Кушак та мана куҫлать,
Хурчӑка та хур тӑвать.

Ай-ши-ши, ай-ши-ши,
Ма эп шӑши пултӑм-ши?
Тилӗ те мана тимлет,
Чӗрӗп те чуна илет.

Ай-ши-ши, ай-ши-ши,
Ма эп шӑши пултӑм-ши?
Йӗксӗк те йӗплет мана,
Пилсӗр те питлет мана —
Пур пӗрех пурнас килет!

## ШАПАКА

Шӳт

Ан тавлашӑр манпала,
Ма тесен эп — Шапака*.
Эпӗ хамӑн саспала
Ята сарнӑ аякка.



Кӳлӗре те тинӗсре
Манӑн ятӑм хисепре —
Мухтанма сӑлтавӑм пур:
— Ур-ур-ур!.. Ур-ур-ур!..

Урас килсен — урмалла,
Урса ырлӑх курмалла.
Курман пулсан — килсе кур:
— Ур-ур-ур!.. Ур-ур-ур!..

## ШИКЛӖХ

Юмах

Пурӑннӑ пулнӑ пӗр Куян. Вӑл нимрен ытла шиклӗхпе пуян пулнӑ. Шиклӗхӗ ун ытлашшипех пулнӑ пулас. Куян ҫав пуянлӑхран хӑтӑлма кӑмӑл тӑвать. Мӗнле хӑтӑлмалла? Кама та пулин ҫав шиклӗхе сутса ямалла. Кама сутас? Куян малтанах Шӑши патне пырать. Шӑши вӑл шӑтӑкра пурӑнать. Шӑтӑкра вара шикпе те, шиксӗр те пурӑнма пулать. Куян Шӑши патне ҫитет те алӑкран шаккать: шак! шак-шак!

— Кам унта?

— Эпӗ-ха ку.

— Кам вара эсӗ?

— Кам пултӑр — Куян тус.

— Мӗн кирлӗ?

— Шӑши тус, туян манӑн шиклӗхе, — тет Куян кӑмӑллӑн.

— Шиклӗх мана кирлӗ мар, — тет лешӗ. — Чӗрӗп патне кайса сут.

Ним тума та ҫук, Куян Чӗрӗп патне ҫул тытать. Утсан-утсан Чӗрӗп патне ҫитсе тӑрать. Алӑкран шаккать. Калаҫу пуҫланать.

— Чӗрӗп тус, туян манӑн шиклӗхе, — тет Куян сӑпайллӑн.

— Мана шиклӗх кирлӗ мар, — тет лешӗ, — эсӗ ӑна Пӑлана кайса сут.

Ним тума та ҫук, сутӑҫ Куян Пӑлан патне ҫул тытать. Утсан-утсан Пӑлан умне ҫитсе тӑрать. Куян каллех хӑйӗн сӑмахне хускатать.

— Пӑлан тус, туян манӑн шиклӗхе, — тет ҫепӗҫҫӗн Куян.

---

* Шапака — шыв шапи (лягушка), шапа — ҫӗр шапи (жаба).

— Мана шиклĕх кирлĕ мар, — тет лешĕ, — эсĕ ăна Пăшие кайса сут.

Ним тума та çук, Куян Пăши патне çул тытать. Утсан-утсан Пăши умнех çитсе тăрать. Ырлăх-сывлăх суннă хыççăн тĕп каласу çине куçаççĕ.

— Пăши тус, туян манăн шиклĕхе, — тет Куян ытарлăн.

— Мана шиклĕх кирлĕ мар, — тет лешĕ, — эсĕ ăна Ăсана кайса сут.

— Ăсана та кирлĕ мар пулĕ çав ман шиклĕх, — тет макăрас патне çитнĕ Куян.

— Пуçна ан ус-ха, Чармак куç, — тет Пăши, — эсĕ малтан Ăсанпа калаçса пăх.

— Калаçса пăхсан та усси пулас çук, — тет Куян.

— Апла ан кала, — тет Вăрман Улăпĕ, — Ăсан вăл ăслă пулаканччĕ, ăна-кăна туянмасан та ăс памашкăн пултарать.

Куян çакна илтсен çĕнĕрен çуралнă пекех çăмăлланса каять, сиккелесе-ташласа Ăсан патне çул тытать. Ăвăслăха çитсенех ватăлса шупкаланнă Ăсана курах каять ăвăс тăрринче.

Сăмахне катаран пуçлать хальхинче Куян тус:

— Ăсан тус, пĕлекенсем сана ăслă кайăк тесе мухтаççĕ.

— Ăсĕ вăл, — тет Ăсан, — хама пурăнмалăх çук та, çынна памалăх яланах пур. Мĕнле ăс кирлĕ сана?

— Эпĕ, Куян, шиклĕхпе пуян, — тет Вăрăм Хăлха, — шиклĕх мана йăлăхтарсах çитерчĕ, мĕнле хăтăлас çав шиклĕхрен?

— Ай-хай çамрăк пуç, — тет ăвăс тăрринчи Ăсан. — Кирек камăн та мĕнле те пулин хӳтлĕх пулмалла, унсăрăн çут тĕнчере пурăнма май çук. Сан хӳтлĕхӳ — шиклĕх; шиклĕх сана инкекрен хăтарать, шиклĕх сана пурăнма пулăшать. Шиклĕх пулмасан куянсен йăхĕ ыранах пĕтсе ларать. Çавăн çинчен тĕплĕн шухăшласа пăхсамччĕ, — тет те Ăсан чăтлăхалла вĕçсе каять.

Мĕн тăвать Куян тус? Пирĕн тус, Вăрăм хăлха, Кĕске хӳре, Куян, Мулкачă, Сайкка, Хавшак чĕре, Чалăш куç, Шиклĕ чун тесе ят панăскер, тĕплĕн шухăшласа пăхать. Ăвăс çинче ларакан Ăсан ăслă сăмахсем каланине чухласа илет. Ăслă сăмахсем пулăшнипе паян кун та пурăнать Куянсен йăхĕ. Пĕр кулянмасăр пурăнать.

Ачасем, салам сире Куян тусăмран!

## ШКУЛ

Ак мăнаçлă пысăк çурт,
Ун пекки ялта тек çук.
Çак мăн çурта Шкул теççĕ.
Унта ăс-хал туптаççĕ.

Ача-пăча çитĕнет —
Ăслăх çуртне иленет.
Вĕренмесĕр ĕмĕрте
Йăваймастăн вĕрен те.

Ман ăс-хал пухас килет,
Ман нумай пĕлес килет.
Вуламасăр кĕнеке
Пулаймастăн пĕлекен.

Эпĕ шкула çӳретĕп —
Ăслăх пĕрчи тĕшлетĕп.
Пуçа ăс-хал хывман чух
Пурнăç хуçи пулма çук.




## ШУХĂШ

Шӳт

Пĕр сăмахпа каласан,
Пуҫра шухăш ҫуралать:
Пурлăх хуҫи пулмасан
Пур пĕрех вăл ҫухалать.

## ШУТЛАВ

Шӳт

Пĕрререн пĕрре —
Пĕрре ҫеҫ чĕре,
Пĕрререн иккĕ —
Пĕр мăшăр иккĕн,
Пĕрререн виҫҫĕ —
Пилеш хулли пиҫĕ,
Пĕрререн тăваттă —
Урара хитре атă,
Пĕрререн улттă —
Тип курăк — утă,
Пĕрререн ҫиччĕ, —
Пул ялан ҫивчĕ,
Пĕрререн саккăр, —
Ҫын сана савтăр,
Пĕрререн тăххăр —
Кĕмĕлтен кая пăхăр,
Пĕрререн вуннă —
Теҫетке тулнă.

## ШӲТСЕМ

Шутласа пăхсассăн вирлĕ — шӳт туни те питĕ кирлĕ!!!

## КАРУК

— Кутăн Карук тесе кама калаҫҫĕ?

— Пĕлместĕп.

— Ҫавна та пĕлейместĕн: Кутăн Карук тесе Курака калаҫҫĕ. (Курак ячĕ кутăнла вуласан шăп та шай КАРУК пулса тухать.)




**Алфавитри** вӑтӑр пӗрремӗш сасӑ палли — **Щ**.

Ӑна хальхи ҫырулӑха 1936 ҫулта кӗртнӗ.

Вӑл ҫапла вуланать: щӑ.

Вӑл ҫапларах ҫырӑнать: *(ҫырса кӑтартмалла)*.

**Щ** ҫак вырӑнсенче тӗл пулать:

сӑмах пуҫламӑшӗнче: *Щапов, Щедрин, Щипцов, щит, щиток, Щукин, щур, Щусев...*

сӑмах варринче: *Ащуров, ещӗк, Кащей (Кощей), Плещеев, Пущин, Рощин, ящур...*

сӑмах вӗҫӗнче: *плащ...*

**Шӳтлевсем:**

Ща-ща-ща, щавель ятлӑ курӑк пур.
Щё-щё-щё, щётка кирлӗ крем сӗрме.
Щи-щи-щи, щитти кирлӗ юр тытма.
Щу-щу-щу, щурок мӗнле кайӑк-ши?

**Ытарлӑхсем:**

Щавель умӗнче мӗн пур? *(«Щавель» сӑмах умӗнче «щ» пур.)*

Щавель хыҫӗнче мӗн пур? *(Щавель хыҫӗнче ытти курӑксем пур.)*

Щавель хыҫӗнче мӗн пур? *(«Щавель» сӑмах хыҫӗнче «ь» пур.)*

Щи мӗнпе ытарлӑ? *(Щ-па пуҫланакан унтан кӗске сӑмах урӑх ҫук.)*

**Ятарлӑхсем:**

«Щи» сӑмаха вырӑссем «шти» теҫҫӗ. Мана ҫапла калани питӗ килӗшет. Сире мӗнле пек?

Щ-па пуҫланакан сӑмахсен конкурсӗ туса пӑхӑр-ха.

## ЩЁТКА

Щётка кирлĕ пулнăран
Щётка илтĕм лавккаран.
Щётка пире мĕн тума? —
Щётка шăла тасатма.

## Щ СЛОВАРĔ

**Щавель** — вырăс сăмахĕ, йӳçенкĕ курăк ячĕ, чăвашла — йӳçĕ курăк, кăвасак тутăллă курăк, кăшкар ути. Хальхаççăн чăвашсем те çак курăка щавель, щавель курăкĕ, щавель ути теççĕ.
**Щеголёнок В.П.** — вырăссен юмахçи.
**Щёголь** — шукăль, шухăль.
**Щедрин М.Е.** — вырăс писателĕ, сатирик.
**Щедрин Р.К.** — вырăс совет композиторĕ.
**Щекино** — Раççейри (Тула обл.) хула ячĕ.
**Щелкун** — нăрăсен пĕр тĕсĕ.
**Щелкунчик** — Э.Т.А. Гофман юмахĕ.
**Шукин А.Н.** — вырăс совет радиотехникĕ.
**Щепкин Б.В.** — вырăссен паллă актерĕ.
**Щепкин М.С.** — вырăссен актерĕ.
**Щукин И.С.** — вырăс совет географĕ.
**Щур** — вăрккасен йышне кĕрекен вĕçен кайăк.

## ЩИПЦОВ

Ытарлăх

Щипцов курăнкалатчĕ,
Пичетре пулкалатчĕ,
Прозăпа çыркалатчĕ,
Çулĕпе вată марччĕ,
Сухал та шăтманччĕ —
Ма часах шăпланчĕ?

**Ытарлăх явапĕ:** Хĕвелĕ анчĕ теççĕ ун пек чухне.

## ЩУППАК

Шӳтлев

Щ. катине кайрăм,
Щавель татса пуçтартăм,
Щавеле Щаппука патăм,
Щаппук мана питĕ тĕлĕнтерчĕ —
Щи пĕçерчĕ те... çитерчĕ!

# Ъ

**Алфавитри** вăтăр иккĕмĕш вырăнта тăракан грамматика палли — **Ъ**. Ăна вырăс чĕлхеçисем «твердый знак» теççĕ, чăваш чĕлхеçисем «хытăлăх палли» тесе çырма хушаççĕ. Вăл сасă палли мар, вуланма та пултараймасть. Унăн тивĕçлĕ вырăнĕ грамматика паллисем хушшинче. Çапла тунипе пичет тата çырулăх ĕçĕ самаях çăмăлланать.

## ХЫТКАЙ

Юмах

Авăркасси ялĕнче пĕр çын пурăннă. Ăна питĕ хытă кăмăллă пулнăран Хыткай тесе ят панă.

Вăл кăмăлĕпе те, чун-чĕрипе те питĕ хытă çын пулнă. Мĕн те пулин пырса ыйт — никама та нимĕн те паман. Пĕр-пĕр япалапа çынна тивĕçтерес пулсан — çĕр çывăраймасăр тертленнĕ. Унăн килĕнчи йăла-йĕрке те çирĕп те хытă пулнă. Ăна пăхăнакансем çемçе çăкăр çисе курайман, типсе кайни перекетлĕ тесе Хыткай вĕсене хытнă çăкăр кăна çитернĕ. Хытлăх пиркиех пĕр шăрпăкран икĕ шăрпăк туса усă курнă.

Питĕ хытă пулнă Хыткай. Пĕрисем ăна — Тимĕр пăрçа тенĕ, теприсем — Хыт кукар тенĕ. Хуть те мĕн кала — Хыткай вĕсене итлемен. Унăн пусĕнче пĕртен-пĕр ĕмĕт кăна пулнă — епле те пулин тата ытларах хытасси. Çак шухăшпа вăл киремет катине çитсе кĕлтума шутлать.

Çул çинче Хыткай кăптăрт! кăна такăнать. Ури айне пăхать те — чул муклашки курах каять. Хыткай ăна хыпашласа пăхать. Чул питĕ хытă иккен. Вара вăл муклашка çине пăхса кĕлтума тытăнать:

— Çӳлти турă, мехел пар, чул пек хытма хăват пар! — тесе кĕлтăвать хайхискер.

Чарăнмасăр кĕлтăвать, хыттăн кĕлтăвать. Хайхискер кĕлтунă майăн хытса пыма тытăнать.

Юлашкинчен хытса-хытса пырать те хытсах каять — чул юпа пулса тăрать. Чул юпа пулсан та пăшăлтатса кĕлтума чарăнмасть. Тен, çапла кăна туйăнать пулĕ?.. Кам пĕлет çав...

Ял çыннисем каланă тăрăх, çав чул юпа халь те пулин кĕлтунă вырăнта хытсах ларать. Ĕненместĕр пулсан Аварккасси кати патне кайса курма та пултаратăр.

## ХАКЛАВ

Хыттăн вуламалли хайлав

Аван пулсассăн çĕр çинче,
Илĕрттет пулсан умри илем
Эп те калаçăп сан çинчен:
— Ку тĕрĕс çын — ЭТЕМ!

Йыш пек пулсассăн йыш çинче,
Пуласлăха туртсан илем
Эп те пуплешĕп сан çинчен:
— Ку тĕрĕс çын — ЭТЕМ!

Хастар пулсан вăй-хал енчен,
Хĕвре пулсан сӳнми хĕлхем
Эп те çыркалăп сан çинчен:
— Ку тĕрĕс çын — ЭТЕМ!

Чăна тытсан чун варринче,
Ĕçпе кĕрлет пулсан йĕтем
Эп те чĕм сарăп сан çинчен:
— Ку тĕрĕс çын — ЭТЕМ!

Ыр ят пулсан ял-йыш çинче,
Ют мар пулсан тăван чĕлхем
Эп те юмахлăп сан çинчен:
— Ку тĕрĕс çын — ЭТЕМ!



**Алфавитри** вăтăр виççĕмĕш саса палли — **Ы**.

Ăна чăваш çырулăхне 1871 çулта кĕртнĕ.

Вăл çапла вуланать: ыы.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Ы** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *ывăл, ывăс, ывăç, ыйту, ылтăн, ырă, ырлав, ытарлăх, ыхра, ыхралăх, ышша...*

сăмах варринче: *Выл, вырăс, выçă, пыл, пысăк, сывă, сыхă, çыр, çыру, çын, çых, хырлăх, чыс, шыв, шырлан...*

сăмах вĕçĕнче: *Шавлы, Щамалы, Ятарлы (ятарласа тунă ы-па вĕçленекен сăмахсем).*

**Шӳтлевсем:**

Ый-ый-ый, ыйту панă хан Батый.
Ыл-ыл-ыл, ылтăн парса илтĕм пыл.
Ыр-ыр-ыр, ыр çын çинчен сăвă çыр.
Ых-ых-ых, ыхра çиет пирĕн Пых.

**Ытарлăхсем:**

1. Ыранпа паян хушшинче мĕн пур? *(Икĕ тĕрлĕ хурав: «па» сыпăк пур, çĕр каçасси пур.)*
2. Ыхра çумĕнче мĕн йывăр? *(Ыхра шăрши йывăр.)*
3. Ышша тени мĕнле сăмах пулать-ши? *(«Сивĕ» тени пулать.)*

**Ятарлăхсем:**

Ылтăн тени вăл тĕпренчĕкре те ылтăн.
Ырă сăмах хысĕнчен ырă ĕç пулса пытăр.
Ы-ы-ы... тесе йĕрет ачаш ача.

## ЫВĂНСАН...

Алă пур ман, ăс та пур,
Вылямашкăн вăй та пур,
Мĕскер кирлĕ — пурте пур,
Ман пулас килет маттур.
Ирхине ирех тăратăп,
Е вулатăп, е çыратăп,
Хам ĕçе хамах тăватăп,
Ывăнса çитсен —
канатăп.

## ЫЙТУÇĂ

Ачаранах ман ыйтусемпе вылякан ăста çын пулас килетчĕ, анчах мĕнле пулмалла — ун çинчен нимĕн те пĕлейместĕмччĕ. Мĕн тумалла?

Пĕррехинче пичче умне пырса тăтăм.

— Кала-ха, пичче, ыйтуçă мĕнле пулмалла? — тетĕп.

Пичче мана:

— Эпĕ пичче кăна, тетӳ патне кайса ыйт, — терĕ.

— Эсĕ пичче кăна мар — пĕртен-пĕр тете, çавăнпа та санранах ыйтма тивет.

— Апла пулсан итле, — терĕ пĕртен-пĕр пичче, — ыйтас пулсан ыйт уççăн — вара пулан ыйтуçă!

— Уççине ăçтан тупмалла? — татах ыйтатăп пиччепе тетерен.

Пиччепе тете канашласа илчĕç те çапла каларĕç:

— Ăна вара, ыйтусен уççине, никам та: пакша та, патша та, турă та, турхан та тупса параймасть — хăвăнах шырамалла. Хăв айланă, хăв ăсталанă, хăв тăрăшса тунă япала кăна ăша кантарать, ята çĕклет.

Çавăн хыççăн вăхăт самаях иртрĕ, эпĕ пурнăç лаççинче самаях туптантăм. Çавăн хыççăн хам сисмесĕрех çитмĕл çула çитрĕм — тинех ыйтусем çине яваплама, çĕнĕрен те çĕнĕ ыйтусем янтăлама вĕренсе çитрĕм.

Халь вара эпĕ те ыйтуçă пултăм тесе калама та пултаратăп пек.

Ытах çакăнпа килĕшместĕр пулсан ман пата çырусем çырса ярăр. Саламлă çырусем кăна мар, ыйтуллă çырусем те яма пултаратăр. Эпĕ май килнĕ таран тĕплĕнрех сирĕн ыйтусем çине ответ пама, хурав пама тата яваплама тăрăшăп.

Манăн адрес: 428900, Çĕнĕ Шупашкар, Энергетиксен урамĕ, 15-43.

Ырă сунса — Ник. ЫДАРАЙ (Васильев Николай Васильевич).

## ЫЙТУСЕМ

— Автан мӗншӗн аватать? — Аватма хӑвачӗ пулнӑран.

— Ӑсанӑн ӑс пур-и? — Пур, анчах та пуҫӗнче мар — ятӗнче.

— Бак варринче мӗскер пур? — «Бак» тенӗ сӑмахра а сасӑ палли пур.

— Велосипед мӗскер вӑл? — Кӗскен каласан ВЕЛИК вӑл.

— Геркулес чӑннипе мӗн ятлӑ? — Геракл ятлӑ. (Грексем маларах ят хунӑ.)

— Пилӗк хӑҫан нумайланать? — Икӗ Л ҫырсан: пилӗк — пиллӗк.

## ЫЙХӐРА

Тӗлӗкре эп хытӑ култӑм,
Култӑм питӗ ахӑрса.
Вӑрансассӑн сусӑр пултӑм,
Кун иртсертӗм макӑрса.

Тӗлӗкре текех кулмастӑп,
Шӳт тумастӑп ыйхӑра.
Урӑхран эп хӗн курмастӑп,
Пурнӑҫ иртӗ ырлӑхра.

## ЫЛТӐН

Ырлав

Пурнӑҫӑн пур тӗп йӗрки:
Нихӑҫан ан пул ӳркенчӗк,
Вара калӗҫ сан пирки:
— Ылтӑн евӗр ҫак тӗпренчӗк!

## ЫТАРУК

Ырлав

Авалхи кунсемпе паянхи кунсем хушшинче пӗр пӗчӗк ҫемьере пӗр пӗчӗк хӗрача ҫуралать. Ӑна пӗчӗкрех пулнӑран хӗр пӗрчи тесе чӗнме пуҫланӑ.

Аталанса пынӑ май, ӑс кӗнӗҫем вӑл часах вӑлтса ытарлӑн калаҫма вӗренсе ҫитет. Мӗн-ха вӑл вӑлтса калаҫни? Мӗн-ха вӑл ытарлӑн калаҫни? Авалхи чӑвашсем вӑлтса тата ытарлӑн калаҫма юратнӑ. Ку вӑл пат калас сӑмаха ҫавӑрттарса, тавҫӑрса илмелле каланӑ сӑмах. Ахальтен мар ӗнтӗ: пат калакан патшана юрайман, тӳррӗн калакан тӳрене юрайман тенӗ чӑвашсем. Хитрелетсе, хӑвӑн ӑсу пуррине туйтарса илмелле калаҫни такам кӑмӑлне те ҫавӑрма пултарнӑ. Малтанлӑха хӑнӑхса ҫитиччен ытарлӑ сӑмахӑн тупсӑмне пӗлме питӗ йывӑр. Сӑмахран, авӑн

кайӑкӗ мӗн тени пулать? Тӳрех ним калама та пӗлмелле мар, мӗншӗн тесен кайӑк тесен эпир тӳрех вӗҫекен кайӑксене аса илетпӗр. Тепӗр енчен, кайӑк тени нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмах. Кашни чӗрӗ чуна кайӑк теме май пур, ҫав шутрах этеме те. Тӗслӗхсем: вӗтӗ кайӑксем — тӗрлӗрен кӑпшанкӑсем, тискер кайӑк е чурӑс кайӑксем — алла иленмен чӗр чунсем, кайӑк пек этемсем — малтанхи тискер кайӑк евӗр пурӑнакан ҫынсем. Ҫапла вара, кайӑк — чӗр чун. Авӑн илнӗ чухне (авӑн ҫапнӑ чухне) капан айӗнче темле пӗчӗк чӗр чуна куратпӑр. Ӑна тепӗр тӗрлӗ кушак кайӑкӗ теҫҫӗ. Чим-ха, шӑши вӗт ку! Ҫапла, шӑши вӑл, анчах та авалхи тӗшмӗшлӗ йӑласем тӑрӑх ун пек калама хушман. Кушак умӗнче шӑши ятне тӳррӗн каласан вӑл ӑна тытайми пулать тенӗ. Ҫавӑнпа шӑши ятне калама чарнӑ, калаҫура вара хушма ятпа усӑ курнӑ. Ҫакӑн пек йӑлана наукӑра табу теҫҫӗ. Халь табу хушнӑ пек пурӑнмастпӑр, кушак умӗнчех шӑши тата йӗкехӳре тесе калатпӑр. Йӗкехӳре тени каллех табу сӑмахӗ. Йӗкехӳре шӑши мар, самаях хӑрушӑ чӗр чун, вӗсем ытларах ӗрчесе кайсан выҫлӑх ҫулӗ пулма пултарать. Ун ятне уҫҫӑн калама та хӑранӑ — ҫапла майпа унӑн тӗп ячӗ асран тухса ӳкнӗ. «Йӗке пек хӳреллӗ чӗр чун» тени ҫеҫ асра юлнӑ. Ытарук ҫакнашкал калаҫма питӗ хӑвӑрт хӑнӑхса ҫитнӗ. Вӑл ялан пурне те хӑйӗн ӑсӗпе, тавҫӑрулӑхӗпе тӗлӗнтернӗ.

Эпир мӗнрен кая Ытарукран? Сӑмах вӑлтса ытарлӑн калаҫма вӗренейместпӗр-и? Этем тума пӗлмен ӗҫ ҫук тенӗ авалхи грексем. Аслисем пулӑшсан, ӑслисем ӑс парсан тата хамӑр тӑрӑшсан пулас пекки пулатех, ырлӑх ума тухатех. Пурнӑҫ та ҫапла хушать:

Анаталла-тӑвалла,
Ҫапса ҫумӑр ҫумалла, —
Ку чухнехи пурнӑҫра
Пултаруллӑ пулмалла.

## ЫТЛАШШИ

Ыйту

Акӑ вӗсем —
Чӗр чунсем: Архарсем,
Тӗрлӗ тискер кайӑксем —
Туххӑм аса килнисем:
Пӗрремӗш —
Мӑн ҫилхеллӗ Арӑслан,
Ак Пӑши тата Пӑлан,
Хӑрӑм пек хура ҫӑхан,
Шур Упа, Бизон, Шӑши...
Хӑшӗ кунта ытлашши?

**Явапӗ**: Ҫӑхан ытлашши, вӑл вӗҫен кайӑк, тискер кайӑк мар.

## ЫЙТУКСЕМ

1. Ыйту паран — мĕн илен? *(Ответ, хурав, явап.)*
2. Ыранлăха кĕтсе мĕн тăван? *(Ыран, ырса çитен.)*
3. Ырлăх варринче мĕн пур? *(Л сасă палли.)*
4. Ыхралы мĕнпе ытарлă? *(Ы-па пуçланать те, вĕçленет те.)*

## ЫТАРЛĂ ЫЙТУСЕНЧЕН ПУХНĂ АЛФАВИТ

1. Аса килет пĕрех май:
   А-сем ăçта пит нумай?
2. Ăнлантарса памăр-ши:
   Ăмăрт мĕнле вĕçет-ши?
3. Баклан сахал вĕçкелет,
   Баклан мĕнпе вĕçленет?
4. Валак ларать çула май, валак мĕскер тепĕр май?
5. Герань садра çитĕнет, герань мĕнпе вĕçленет?
6. Драма пирки сăмах пур: драма çырма кам маттур?
7. Еккĕм çапла юптарать: енлĕк çынран ма тарать?
8. Ĕçлемешкĕн ĕç кирлĕ, ĕçне тума мĕн кирлĕ?
9. Ёлка ларать — кил те кур, ёлка çинче мĕскер пур?
10. Журнал сăмах пытарлă, журнал мĕнпе ытарлă?
11. Зала кĕме алăк пур, зал варринче мĕскер пур?
12. Вĕл-вĕл вĕçет, вĕл вĕçет, вĕçкĕн ача ма вĕçет?
13. Йывăçлăхра йывăç пур, йывăçĕнче мĕскер пур?
14. Калаçаççĕ Çинуксем, кам пулаççĕ çав çынсем?
15. Лĕпĕш вĕçет çиле май, лĕпĕш мĕн-ши тепĕр май?
16. Майрук утать малалла, ма пăхать вăл каялла?
17. Нарат шăтнă улăхра, нарат мĕн-ши урăхла?
18. Ответ тени вырăсла, ответ мĕскер чăвашла?
19. Пĕр çын утать — йĕр пулать, пин çын утать — мĕн пулать?
20. Ретĕн-ретĕн çын утать, рет пуçĕнче мĕн пулать?
21. Сăвă пулать сăнарлă, сăвă мĕнпе ытарлă?
22. Çитар тенĕ япала çӳрет миçе ятпала?
23. Таканара така пур, тата унта мĕскер пур?
24. Утлансассăн ут çине, утланатăн мĕн çине?
25. Ӳхĕ хыттăн ӳхĕрет, ӳхĕ мĕнле ӳхĕрет?
26. Флаг тесессĕн — вырăсла, флаг мĕскер-ши чăвашла?
27. Хура тĕслĕ сас палли хуçалăхра мĕн валли?
28. Цирка кайма кăмăл пур, цирк варринче мĕскер пур?
29. Чакак ялан чаклатать, чакак хăçан шăпланать?
30. Шухăш килсен ирпеле шухăшлатăн мĕнпеле?
31. Щукарь ятлă çын пулать, Щукарь ăçта тĕл пулать?
32. Ыхра пирки юм тытăр: ыхрасенче мĕн йывăр?
33. Эп ыйтатăп сăпайлă: этем кам пек сăнарлă?
34. Юмахлаççĕ каç-ирлĕ: юмах яма мĕн кирлĕ?
35. Явлăкра, ямра, ялта — ялан пулать мĕн малта?

## ЫТАРЛĂ ЫЙТУСЕН ЯВАПĔСЕМ:

1. Алăкра нумай: А + лăк = алăк.
2. Ăмăрт (ăмăрткайăк) ăмăрĕпе малалла вĕçет.
3. «Баклан» сăмах «клан» (несĕл) сăмахпа тата «н» сас паллипе вĕçленет.
4. Валак — калав.
5. «Герань» сăмах çемçетӳ паллипе вĕçленет.
6. Драматург.
7. Хăранăран.
8. Ĕçлеме пуçăнни кирлĕ. Пуçăнман ĕç вĕçленмест.
9. «Ёлка» çинче сас палли тăррисем пур.
10. «Журнал» сăмах варринче «урна» тени пур. Урна — сасăламалли ещĕк.
11. «Зал» сăмах варринче «а» сас палли пур.
12. Мухтанас килнĕрен.
13. «Йывăç» сăмахра «ывăç» тени пур.
14. Çинук — хĕрçын ячĕ, çавăнпа та Çинуксем — хĕрçынсем.
15. Лĕпĕш-шĕпĕл. Шĕпĕлĕн тепĕр тĕрлĕ ячĕсем: Ёшпĕл, ĕçлеçи, сĕлĕ кайăкĕ (овсянка).
16. Хыçалта куçĕ çуккипе.
17. Нарат урăхла хырă (хыр йывăççи).
18. Ответ — хурав, явап.
19. Çул пулать.
20. «Рет» сăмах пуçĕнче «ре» нота е «р» сас палли пулать.
21. «Сăвă» тени тепĕр майлă вуласан йывăç ячĕ (ăвăс) пулать.
22. «Çитар» сăмах икĕ ятпа çӳрет: çитар, минтер.
23. «Такаңа» сăмахри сасă паллисемпе усă курса çакăн пек сăмахсем тума пулать: акка, ака, ана, анат, ант, кан, канат, катан, кат, такан.
24. Лаша çине утланан. Ут — лаша.
25. Сасăпа ӳхĕрет. Сас тумасăр ӳхĕрсен эпир ăна илтеймен пулăттăмăр.
26. Флаг — элем. Авалхи чăвашсем вăрçă ялавне те элем тенĕ.
27. Хуран (Хура + н) — апат пĕçермелли савăт-сапа.
28. Цирк варрине АРЕНА теççĕ.
29. «К» сасă вырăнне «н» сасă вуласан.
30. Пуçпа шухăшлатăн.
31. Щукарь М. А. Шолохов çырнă «Уçнă çерем» романта тĕл пулать.
32. Ыхрасенче шăрши йывăр.
33. Этем çынпа пĕр сăнарлă.
34. Юмах яма юм кирлĕ. Юм тесе имлеме, майлама, майлаштарса калаçма, сиплеме пĕлнине калаççĕ.
35. Явлăк, ялта, ямра сăмахсенче «я» сасă палли малта.



**Алфавитри** вăтăр тăваттăмĕш вырăнта тăракан грамматика палли — **Ь.** Ăна вырăсла — «мягкий знак», чăвашла «çемçелĕх палли» теççĕ. Вăл та, хытăлăх палли пекех, сасă палли мар, вуланмасть. Унăн та тивĕçлĕ вырăнĕ грамматика паллисен хушшинче пулмалла. Çапла туни пур енчен те усăллă.

## ÇЕМÇЕЙ

Юмах

Авалхи кунсенче пĕр пĕчĕкçĕ ялта карчăкпа старик пурăннă. Вĕсен килĕнче ача пулман, çакă вара ватăсене куллен кунах кулянтарнă.

— Ах, ача чунĕ пулинччĕ! — тенĕ карчăк кунсерен.

— Ача пултăр тенипех пулăнмасть вĕт-ха вăл! — сăмахланă старик. — Усламçăран та сутăн илейместĕн ăна...

— Услам çуран ача пулмĕ-ши? — пӳлсех ыйтать карчăк.

— Уйран уçласа пăхар эппин, — тет старик.

Çак ватăсен пĕртен-пĕр выльăх чунĕ — качака пулнă. Вĕсем качака сĕтне кĕвĕлтерсе хăйма пуçтараççĕ те уйран уçлама тытăнаççĕ. Уçласан-уçласан самаях пысăк чăмăркка çу ӳкет. Ватăсем шап-шурă çу кӳмерккинчен ача кĕлетки чăмăртаççĕ. Усламçуран чăмăртаса тунă ача кĕлеткине Çемçей тесе ят параççĕ.

Савăнаççĕ ватăсем: ирхине те, каçхине те ача çине пăхса йăпанаççĕ. Калаçса та пăхаççĕ вĕсем Çемçейпе, анчах та лешĕ хурав параймасть — чĕлхи çук. Чĕлхи пулма чунĕ çук.

Çуркунне çитет. Ачасем урамра хĕвĕшеççĕ. Вĕсен хаваслă кулли ир пуçласа каçченех урамра янăрать.

— Ха! — тет карчăк, — пирĕн ачана чун пама май çук-ши?..

— Чим-ха, — тет старик, — ача кĕлеткине урама кăларса лартас та, тен, ачасене кура пирĕн Çемçей те чунлă пулса кайĕ. Чун кĕрĕ...

Карчăкпа старик Çемçей кĕлеткине урама кăларса ешĕл курăк çине лартса хăвараççĕ.

Çуллахи хĕвел ытларах та ытларах ăшă сапма тытăнать. Çемçей, çемçе ўтлĕскер, нумаях та лараймасть — ирĕлме тытăнать. Карчăкпа старик чупса тухнă çĕре Çемçей кĕлеткинчен нўрлĕ вырăн кăна тăрса юлать. Ах, мĕн тумалла ĕнтĕ халь?!.

Эхчĕ те çав, ним тума та çук. Карчăкпа старик Çемçей çухалнă пирки кунĕн-çĕрĕн кулянма тытăнаççĕ. Кулянса пĕтерменскерсем халĕ те кулянаççĕ пулĕ-ха.

## ÇУРХАВ

Çемçе шўтлев

1. Ака пĕтнĕ кунсенче,
Çимĕк çитнĕ тĕлсенче
Çут çанталăк питĕ шух,
Эс те, тусăм, курма тух!

2. Кĕсле сасси илтĕнсен
Кĕсресемпе Тихасем
Кĕптĕртетсе килеççĕ —
Кĕвĕçтерсе çўреççĕ.

3. Курай сасси илтĕнсен
Кураксемпе Куянсем
Куйкăрланса килеççĕ —
Кутăн тăрса кулаççĕ.

4. Сăрнай сасси илтĕнсен
Саркайăкпа Сульхасем
Савăнтарма килеççĕ —
Савăш юрри юрлаççĕ.

5. Тăмра сасси илтĕнсен
Тăрнасемпе тăрисем
Тăрăлтатса килеççĕ —
Тапăр ташши сўтеççĕ.

6. Шăпăр сасси илтĕнсен
Шăпăрлансем килеççĕ —
Шăпчăк юрри итлесе
Шутсăр лайăх канаççĕ.




**Алфавитри** вăтăр пиллĕкмĕш сасă палли — Э.

Ăна чăваш çырулăхне 1938 çулта кĕртнĕ, унччен ун вырăнне Е паллăпа усă курнă.

Вăл çапла вуланать: ээ.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла).*

Э çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *эй, эйпет, эккей, элем, эмел, Энтепе, эпĕ, эрне, эсĕ, этем, эхер...*

сăмах варринче: *коэффициент, поэзи, поэт, ТЭЦ (кĕскетсе тунă сăмах)...*

сăмах вĕçĕнче: *ТЭЖЭ (фабрика ячĕ), э-э-э... (сасă тăсăмĕ).*

**Шӳтлевсем:**

Эй-эй-эй, элек ан сар, Элекçей.
Эк-эк-эк, экологилле инкек.
Эр-эр-эр, эртелпе хывас кĕпер.
Эх-эх-эх, эххĕмлет-ха хулленрех.

**Ытарлăхсем:**

1. Эй хыçĕнче мĕскер пур? *(«Эй» сăмах хыçĕнче «й» пур.)*
2. Эпĕ хăçан эсĕ пулатăп? *(«П» вырăнне «с» çырсан.)*
3. Эрне мĕнпе пуçланать? *(Икĕ тĕрлĕ хурав: — тунтикунпа, 2 — «Э» сас паллипе.)*

**Ятарлăхсем:**

Эй! — теççĕ пĕлмен çынна чĕнес пулсан.

Этем вăл çеçке пек çепĕç, хурçă пек хытă, чечек пек чечен, çирĕк пек çирĕп чун.

— Э-э-э... тесе эрленеççĕ ним калайман енне.

10. Заказ № К-1453.

## ЭПӖ КАМ?

(Арҫын ячӗсем)

**Алапит** — авалхи чӑвашлӑхран юлнӑ ят: ала + пит = Алапит. С. Эльгер поэминчи арҫын сӑнарӗ.

**Ӑсахай** — авалхи чӑвашлӑхран юлнӑ ят, ӑсласа калаҫакан тенине пӗлтерет: ӑс + хайла = Ӑсахай.

**Богдан** — вырӑсларан кӗнӗ ят. Бог (турӑ) + дан (панӑ) = Богдан. Чӑвашла тӗслӗх: турӑ + кайӑк = Туркай (турӑ ачи).

**Варсун** — Варсонофий сӑмаха кӗскетсе чӑвашлатнӑ ят. Варсонофий Михайлов писателе ялта ҫапла чӗннӗ.

**Геркуш** — Геркулес тенине чӑвашлатса куҫарни. Геркулес — авалхи грек тата рим мифӗсенчи герой.

**Данила** (Даниил) — авалхи еврей сӑмахӗнчен. Турӑ — ман тӳре тени пулать. Чӑвашла икӗ тӗрлӗ те калаҫҫӗ: Танле, Таниле.

**Евгени, Евгень** — грек сӑмахӗ, «ырӑ йӑхран» тенине пӗлтерет. Чӑваш чӗлхинче ытларах ачашлӑх формипе усӑ кураҫҫӗ: Женя — арҫын ячӗ, Женя — хӗрҫын ячӗ. Эп те, эс те пӗр иккен: эс те — Евгень, эп те Евгень.

**Ёжикан** — автор асапланса тупнӑ ят, псевдоним пек усӑ курма та пит аван. Кама та пулин йӗплеме те пулать: — Ёжикан вӗт эс! Ёжинка.

**Ёреҫук** — авалхи чӑвашлӑхран юлнӑ ят. Ҫак ят Резюков хушаматра упранса пурӑнать. Н. Резюков — Ашмарин словарьне йӗркелесе кӑларакан тӗпчевҫӗ.

**Жухрай** — Н. Островский романӗнчи арҫын сӑнарӗ.

**Закхей** — авалхи еврей сӑмахӗ. Библири персонаж, «айӑпсӑр» тенине пӗлтерет. Тепӗр версипе «Мытарь» тени пулать имӗш.

**Илепер** — илемлӗ илтӗнекен чӑваш ачин ячӗ. Илепер — курӑк ячӗ. Григорий Илепер (Михайлов) — писатель.

**Йӑкнат** (Йӑкӑнат) — грек сӑмахӗ. Игнат, Игнатий сӑмахсенчен чӑваш чӗлхине кӗнӗ, «пӗлмӗш» тенине пӗлтерет. Игнатий Молодов — драмтеатр артисчӗ пулнӑ.

**Кӗркуҫ** — Григорий тенине чӑвашлатса калани, грек чӗлхинче «тимлӗ» тенине пӗлтерет. В.И. Краснов-Асли повеҫӗнчи арҫын сӑнарӗ.

**Лавраҫ** — Лаврентий тенине чӑвашлатса калани, ҫырни. Пӗлтерӗшӗ — лавр йывӑҫҫи. Лаврентий Таллеров — писатель. Лавраҫ пичче лава кайнӑ. (М. Федоров усӑ курнӑ ят.)

**Макҫӑм** — Максим тенине чӑвашлатса калани, ҫырни. Грек сӑмахӗ — асли е пысӑкки, чӑн хисепли тенине пӗлтерет. Йӳҫӗ Макҫӑм — М.Горький.

**Неҫтӗр** — Нестор ятӑн чӑвашлӑхӗ. Вырӑс литературинче Нестор — ҫул кӗнеки ҫыракан манах. Неҫтӗр Янкас — писатель, поэт.

**Опамса** — вӑрманта пытанса пурӑнакансене тата Медведев хушаматлисене панӑ хушма ят. Пупсем ҫав ята чӑвашсенчен кулса ҫырнӑ.

**Пайраш** — авалхи чӑвашлӑхран юлнӑ ят, ӑна К.Садиков хӑйӗн псевдонимӗ тунӑ, вӗсен несӗлӗнче ҫав ятлӑ ҫын пулнӑ.

**Ртиван** — Родион тенине чӑвашлатса тунӑ ят. Родион — грек сӑмахӗ, «Родос ҫынни» тенине пӗлтерет. Родион Щедрин — композитор.

**Сетнер** — авалхи сӑпайлӑ ят, пӗлтерӗшӗ паллӑ мар. К. В. Иванов поэминчи арҫын сӑнарӗ.

**Ҫӗпрук** — Спиридон тенине чӑвашлатса куҫарни. Спиридон — грек сӑмахӗ, шанчӑклӑ тенине пӗлтерет. Ҫӗпруксем Ҫӗпӗрте те пур. (К.Турхан.)

**Тимрук** — авалхи ят. Тимӗр пек ҫирӗп пул, тимлӗ пул тесе панӑ ят. Хальхи вӑхӑтра питех илтӗнмест.

**Униҫӗм** — Анисим тенине чӑвашлатса калани. Тепӗр тӗрлӗ — Онисим — грек сӑмахӗ, «пурнӑҫлать, пурнӑҫланать» тенине пӗлтерет.

**Ӳлехей** — авалхи чӑвашлӑхран юлнӑ ят. Илӗхсе е ӳлӗхсе ӳстӗр, пурӑнтӑр тесе панӑ ят.

**Фанфан** — Францире ҫуралнӑ ят. «Фанфан-тюльпан» ятлӑ кинофильм хыҫҫӑн ку ята пурте пӗлеҫҫӗ. Иван Иванчсене те Фанфан теҫҫӗ тепӗр чух.

**Хуначи** — Геннадий тенине чӑвашлатса куҫарни. Геннадий — грек сӑмахӗ, «ыр йӑхлӑ» тенине пӗлтерет. Хунади Кашкӑр — Г. Волковӑн псевдонимӗ.

**Цветан** — пӑлхарсем хушшинче анлӑ сарӑлнӑ ят. Славян сӑмахӗ — чечеклӗ тенине пӗлтерет, «чечек» сӑмахран тунӑ ят. Чӑвашла — Ҫеҫкей.

**Чулкаҫ** — аваллӑхран юлнӑ арҫын ячӗ. Чулкаҫ чулпа ҫыхӑннӑ ят: чул кас е чул хурса каҫ тенине пӗлтерет. Малтан вӑл ҫын ячӗ, каярахпа ял ячӗ пулса паянхи куна ҫити пурӑнать. Куҫма Чулкаҫ — чӑваш ҫыравҫи. Чулкаҫ — А. Галкин ҫуралнӑ ял ячӗ.

**Шахрун** — аваллӑхран юлнӑ арҫын ячӗ, ҫак ятра тутар сӗмлӗхӗ те пур. Н.Илпек ҫырнӑ «Хура ҫӑкӑр» романти арҫын сӑнарӗ.

**Щукарь** — Михаил Шолохов ҫырнӑ «Уҫнӑ ҫерем» романти арҫын сӑнарӗ, кулса панӑ ят. Автор ку ята Щ сасӑ паллипе нимле ят та ҫук пирки вырнаҫтарнӑ. Вӑйӑра темле ят та килӗшӳллӗ, мӗнщӗн тесен выляса вӗренетпӗр вӗт.

**Ыванка** — авалхи чӑвашлӑхра пулнӑ-и кун пек ят, пулман-и — пӗлме ҫук. Ҫырулӑхра усӑ курма юрать.

**Эрккей** — авалхи чӑвашсен арҫын ячӗ.

**Юлахай** — юлхавлӑрах пулнине курa панӑ ят. Йӗплесе, йӗкӗлтесе панӑ ят та пулма пултарать. Ӗлӗк ҫыннӑн йӑли-йӗркине кура тӗрлӗ хушма ятсем те пулма пултарнӑ.

**Ялухха** — авалхи ят, пӗлтерӗшӗ ялпа ҫыхӑннӑ. Тен, ялтан тухса курман ҫынна мӑшкӑлласа тенӗ пек ҫапла чӗнкеленӗ. Ял ухмахӗ тесе калас вырӑнне те Ялухха тесе йӗкӗлтеме пултарнӑ.

**Яшухха** — автор ӑсласа тупнӑ ят тесен те юрать. Ҫак ята шухӑшласа тупни яшлӑха хисепленипе ҫыхӑннӑ. Автор ахальтен

мар ăна «Азбуки — ăс пуххи» ятлă кĕнекине кĕртнĕ. Уйласа пăхсассăн урлă-пирлĕ ун пек ят та питĕ кирлĕ! Кирлĕ пулсан — пултăр!

**Ĕçлĕх.** Ачасем, хăвăра кирлĕ ятсене çырса словарьсем тăвăр.

## ЭСĔ КАМ?

### Хĕрçын ячĕсем

**Айпике** — авалхи чăвашлăхран юлнă ят. Вăл — «Уйăх хĕрĕ» тенине пĕлтерет. Ай (уйăх) + пике (хĕр) = Уйăхпи. Н.Ыдарай «Айпике» ятлă пьеса-юмахра ку сăмах пулăмне урăхларах ăнлантарать: Ватăсем ачаллă пулсан «Ай, пике» (Ай, хĕрĕм!) тесе каланăран çавăн пек ят пулса кайнă тет.

**Ăсахви** — аваллăхран юлнă хĕрçын ячĕ. Юмахсенче халь те тĕл пулать. Ăслă та илемлĕ хĕр пике тенине пĕлтерет.

**Божена** — славянсем хушшинче анлă сарăлнă ят. «Турă пиллĕхĕпе çуралнă хĕрçын» тенине пĕлтерет. Чăвашла ăна Пўлĕхпи теме пулать. Божена Немцова — чехсен паллă çыравçи.

**Велиме** — авалхи чăвашлăхран упранса юлнă ят. Пĕлтерĕшĕ паллах мар. И. Саламбек çырнă çав ятлă драмăри хĕрçын сăнарĕ.

**Галина** — грек чĕлхинчен кĕнĕ ят, «лăпкă» тенине пĕлтерет. Кĕскетсе Галка (чавка) теççĕ, хура куçлă пикесене питĕ килĕшет.

**Далила** — араб чĕлхинчен кĕнĕ ят. «Астаракан», «илĕртекен» тенине пĕлтерет. Авалхи еврей чĕлхинче Далила «ачаш», «савăк» тенине пĕлтерет. Далила — Библири персонаж.

**Елиска** — Елизавета ятăн чăвашла куçарăвĕ. Елизавета — авалхи еврейсен сăмахĕ, «ант туни», «тупа» тенине пĕлтерет. Елиска — Хусанти пĕлĕш. (*Е.Сидорова.*)

**Ёлочка** — Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе хунă ят. Çармăс çĕрĕнчи пĕр лесник хăйĕн хĕрне Ёлочка тесе чĕнетчĕ. Юмахсенче усă курма вырăнлă.

**Ёлочка** — Чăрăшпи. Чиперех илтĕнеççĕ.

**Ёмпике** — авалхи чăвашлăхран юлнă ят. Ёмпў, патша е турхан арăмĕсене, мăшăрĕсене панă ят. Ятарлă ят пулма та пултарать. Ёмпў + пике = Ёмпике.

**Жизель** — авалхи француз чĕлхинче — газель. Надежда Павлова «Жизель» рольне лайăх ташларĕ. *(Хаçатран.)*

**Зинуля** — вырăсла сĕмлĕхпе Зинаидăна савса каланă ят. Зинаида грек чĕлхинчен кĕнĕ ят. Унта вăл «Зевс хĕрĕ» тенине пĕлтерет.

**Илемпи** — авалхи илемлĕ ятсенчен пĕри. Илемпи — илемлĕ ят. *(С.Павлов.)* Илемписем сывă чух илемлĕх те пĕтес çук.

**Йăскар** — авалхи чăвашлăхран юлнă ят. Ф.П. Павлов çырнă «Ялта» драмăри хĕрçын сăнарĕ. Йăскар — вĕçен кайăк ячĕ.

**Кулине** — Акулина ятăн чăвашла куçарăвĕ, вăл ĕнтĕ тахçанах чăвашла ят пулса кайнă. Акулина — латин чĕлхинчи сăмах, пĕлтерĕшĕ — Орлица, чăвашла — Ăмăртпи. Юри çапла çыратăп, мĕншĕн тесен ятсемпе выляма та пĕлмелле.

**Лариса** — латин чĕлхинчен кĕнĕ сăмах, пĕлтерĕшĕ — чайка (чарлак). Лариса юлашки вăхăтсенче чăваш чĕлхине кĕнĕ ят. Лариса лайăх ят, такамăн кăмăлне те çырлахтармалла.

**Марине** — авалхи чăваш сăмахĕ пекех илтĕнет, анчах та вăл вырăс чĕлхи урлă чăваш чĕлхине килсе кĕнĕ. Пĕлтерĕшĕ — тинĕспе çыхăннă. Апла пулсан вăл — Тинĕспи. Эп пĕлетĕп, Марине, эсĕ мĕскĕн маррине.

**Нарспи** — авалтан чăваш чĕлхинче пулнă ят. Нарс + пи = Нарспи. Нар — çутă пайăрки. Нарспи — нар сăнлă хĕрача. Нарспи — К. В. Иванов поэминчи хĕр (пике) сăнарĕ.

**Оксана** — украина чĕлхинчен кĕнĕ ят, вырăсла — Ксения, чăвашла — Кĕçени. Чăвашсем çак ята питĕ кăмăллаççĕ, чăвашла куçармасăрах усă кураççĕ.

**Пикепи** — авалхи чăваш ячĕ. Кунта икĕ хут «пи» илтĕнет, ку ĕнтĕ «пике пулас хĕр пĕрчи» тенине пĕлтерет пулĕ. Пике — невеста, барыня, сударыня, дева пĕлтерĕшĕсемпе те çӳрет.

**Райкка** — Раиса ятăн чăвашла номиналĕ. Раиса — грек сăмахĕ, пĕлтерĕшĕ — «çăмăл». Райкка лайăх пулнăран райри пекех пурăнан терĕм пĕррехинче пуçанана.

**Салампи** — хĕрçын ячĕ. «Салампи» — А. С. Артемьев çырнă повесть ячĕ. Салампи çинчен опера та пур.

**Сарине** — авалтан паянччен пурăнакан савăк ят. Сарине — Лидия Иванован псевдонимĕ. Эп пĕлетĕп, Сарине, эс те мана савнине.

**Тилĕпи** — тилĕ пек чее пулма панă ят. Чăвашсен авалтанпах кайăк, чечек, чĕр чун ячĕсемпе усă курса ят тăвасси йăлара пулнă. Кун пек ятсем юмахсенче, хайлавсенче усă курма питĕ аван.

**Ӳкемпи** — Неваляшка пуканен чăвашла номиналĕ. — Ӳкем-ши, ӳкем те мар-ши, — тесе юрлать çак пукане. Эсир пĕлетĕр-и çапла юрлама?

**Фанита** — француз чĕлхинче çуралнă хитре ят.

**Фелица** — Латин чĕлхинчен сарăлнă ят, пĕлтерĕшĕ — «телейлĕ». Г. Державин Кĕтерне патша патне ода çырнă чухне çак ятпа усă курать. Çывăх ятсем: Фелицата, Фелициата, Фелиция.

**Хвекле** (Хвекла) — грек чĕлхинчен сарăлнă ят, — пĕлтерĕшĕ — славная (чипер). Цветкова Фекла Филипповна — аннен хĕр чухнехи ячĕ. Ĕлĕкрех Фекла вырăнне Текла тесе каласси те пулнă.

**Цветана** — Пăлхарта анлă сарăлнă хĕрçын ячĕ. Вăл арçын ячĕпе — Цветанпа мăшăрлă ят. Пĕлтерĕшĕ — цветная, цветочная. Чăвашла: Çеçкепи, Чечекпи.

**Чĕкеç** — авалтан килекен хĕрçын ячĕ, ăна «пи» сыпăк хушмасăрах тунă, кайăк ячĕпе усă курса тунă чĕмлĕхсенчен пĕри. Ку ят Чĕкеçпи тесен те чипер илтĕнет.

**Шелепи** — авалхи хĕрçын ячĕ, тĕне кĕмен чăвашсем хушшинче анлă сарăлнă. Шелепи — Николай Иванович Полорусовăн псевдонимĕ.

**Ырахви** — ырă пулма халалласа панă ят. Ы сасă паллипе чăваш чĕлхинче ятсем питĕ сахал.

**Эрнепи** — авалхи эреветлĕ ят, эрнекун çуралнă хĕр пĕрчисене çавăн пек ятсем панă. Кун пек ятсем тĕне кĕмен чăвашсем хушшинче пур çĕрте те пур. Эрлен, Эрнепи, сан эрнӳ. *(Н.Зайцев.)*

**Юмахпи** — юмахпа çыхăнтарса тунă ят. Ун пек ят юмах яракансене килĕшет. Фролова Марина Шупашкарти телестудинче Юмахпи рольне савăнсах вылять, вăл 6 çулта.

**Юрпике** — Çĕнĕ çул уявне иртттерме хатĕрленĕ ят, ăна Снегурочка ятне чăвашлатса тунă. Юрпике — юри тунă ятарлă ят. Питĕ аван! Ачасене савăнтарма та пĕлес пулать çав.

**Якамай** — Баба Яга тенине чăвашла калама майлаштарса тунă ят. Чăваш юмахĕсенче ватă та усал карчăкăн сăнарне Карчамас аванах уçса парать.

**Ялампи** — Евлампия тенине чăвашлатса куçарни. Ялампи чăваш ялĕсенче яланах пулнă, хальхаççăн вырăсла ятсем ытларах.

Ялампи ман чĕрере
Ялан пулĕ хисепре.

## ЭСКИМО*

Эп те кино курма,
Эс те кино курма
Кайсаттăмăр пĕринче.
Эп те çирĕм эскимо,
Эс те çирĕн эскимо
Кино курма кĕриччен.
Эп те тытăп асăмра,
Эс те упрăн асăмра.
Манма çук çав кун çинчен.
Эх, пулинччĕ эскимо,
Эх, çиесчĕ эскимо
Кашни кино умĕнче.

## ЭТЕМ

Этем тени вăл этемех —
Этем хисеплĕ ĕмĕрех.
Этем çеçкерен çепĕçрех.
Этем гранитран çирĕпрех.

---

* Эскимо — мороженăйсен пĕр тĕсĕ.




**Алфавитри** вăтăр улттăмĕш сасă палли — **Ю**.

Ăна чăваш çырулăхне 1938 çулта кĕртнĕ, унччен «ю» вырăнне «йу» икĕ сас паллипе усă курнă.

Вăл çапла вуланать: йу.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Ю** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *юбка, юланут, юман, юмах, юн, Юнтапа, юптару, юрату, юрă, юс, юсав, ют, юх, юшкăн...*

сăмах варринче: *аюк, бюро, бюст, июль, Люля, Надюк, Палюк, паюшки, салют, Санюк, Танюк, трюм, Челюскин, Эрнюк...*

сăмах вĕçĕнче: *айхайлю е ай-хай-лю (юрă хушмавĕ), аю, каю, паю, лю-лю-лю...*

**Шӳтлевсем:**

Юл-юл-юл, юлташран ан юл.
Юм-юм-юм, юмлама пĕлет Каюм.
Юр-юр-юр, юрма пекех çĕнĕ юр.
Юх-юх-юх, Юхманалла юх та юх!

**Ытарлăхсем**:

1. «Ю» камăнне пĕлсен йывăç ячĕ пулать. *(Ю + ман = юман.)*

2. «Юр» тата «юрма» хушшинче мĕнле пĕрпеклĕх? *(Иккĕшĕ те шурă.)*

**Ятарлăхсем:**

«Юлашки» теме хушмаççĕ чăвашсем.

Юрласа юл, юлташ, юрруна.

Юхма — Чăваш çĕршывĕнчи вырăн, пасар тата çырма ячĕсем.

## ЮБИЛЕЙ

Юля çиччĕ тултарать —
Юбилей теме юрать.
Юля — çамрăк юбиляр,
Юльăна парне парар.

## ЮМАН

Юмана эп кăмăллатăп,
Юмана ырлатăп ĕмĕрне,
Юманра ялан куратăп
Юман паттăр сăнарне.

## ЮМАНА

Юп курса çырнă эпитафи

Авал кунта пулнă
Вĕçĕмсĕр вăрман.
Кунта-çке кун курнă
Мăнаçлă Юман.

Вăрман кĕç хир пулнă,
Хир пулнă вăрман.
Ят çех асра юлнă,
Тек ним те юлман.

Халĕ çук çăкалăх,
Халь çук юмансар.
Кунта халь çăвалăх,
Кунта халь масар.

Ларать мĕскĕн палăк —
Çыруллă хăма:
Куçпа йăпанмалăх,
Чунпа хурланма.

Вăрман кунта пулнă,
Чап сарнă юман.
Юмах кăна юлнă —
Тек ним те юлман!

# ЮПТАРУСЕМ

## Амăшĕпе Чĕппи

Амăшне кура ав Чĕпĕ те
Ал хушшилĕх чĕпĕтет.

## Арланпа Хыр

Арлана каланă Хыр:
— Акман çĕрте ан выр!

## Ăсан

Ăсан калать ăс парса:
— Ăс пухаймăн ăмсанса.

## Баклан

Баклан хут янă Мускава:
— Баклан çеç тивĕç мухтава!

## Вăрăмтуна

Юн ĕçекен Вăрăмтуна:
— Юн ĕçмен! — тесе тунать.

## Икĕ Хурт

Пакăлтатнă икĕ Хурт:
— Пире кирлĕ тутлă çурт!

## Йăмра

— Вăй çукрах, — тет Ват Йăмра, —
Вăйханмашкăн ватлăхра.

## Кавăнпа Пĕрчĕк

Калама çук пĕчĕкрен
Кавăн кулнă Пĕрчĕкрен.

## Кушакпа Юс

Кушак Юса кум тунă —
Курсассăнах ам тунă.

## Лашапа Ут

Лашана тиркенĕ Ут:
— Лаша — чĕр аш, эп — çулăм вут!

## Паланпа Çу

— Эп те тутлă çупалан! —
Эрленсе кулать Палан.

## Рак

Рак кĕрленĕ пĕр-пĕччен:
— Ракета пулнă раксенчен!

## Сăпса

Сăвап тупĕ-ши Сăпса
Сĕмсĕрле çынна сăхса?!.

## Сăхаян

Епренĕ вĕçĕм Сăхаян:
— Епле пурнас ман сăхмасан?

## Çăхан

Çăвар карса юмлать Çăхан:
— Çăва çинче пулатăп Хан!

## Тыркас

Тыркас янрашнă: — Куртăр-и,
Тыр-пул тăшманĕ вăл — Тăри!

## Упăте

Услови ыйтнă Упăте:
— Уçлăха çĕкленĕп эпĕ те.

## Фасоль

— Фа тени анчах сахал —
Фасоль пулма та кирлĕ хал.

## Хапкăн

Хапкăн чунлă Мĕкĕте
Хыснаран мул чĕпĕтет.

## Чакакпа Чепчен

Чакак калану Чепчене:
— Чарма пĕлесчĕ чĕлхене!

## Шăрчăкпа Юс

Шăрчăкпа шўтленĕ Юс:
— Шăши йăхĕ манăн тус!

## Ыхра

— Ыр ĕçпе çеç, — тет Ыхра, —
Ыр ят тупатăн халăхра.

## Эрешмен

Эрленет шав Эрешмен:
— Эп ыр тумашкăн кĕрĕшмен!

## Юман

Юптарса юрланă Ват Юман:
— Юрама пĕлни те пит аван.

## Ягуар

Ягуар янрашнă пит хаяр:
— Ягуар яксен юлташĕ мар!

## ЮР ПĔРЧИ

Сăнав

Шур чечек пек куранса
Юр пĕрчисем ўкеççĕ —
Алă çине хурсанах
Питĕ хăвăрт сўнеççĕ.

Ма ун пек те, ма кун пек —
Хамран хам ыйтатăп:
— Алăри юн вĕрипе
Çавăн пек тесе шутлатăп.



## ЮРĂÇ

Вăл — çунатлă чун,
Вăл — çунса тăран чĕре,
Çавăнпа та ячĕ ун
Ялан пулĕ хисепре.

## ЮТ ЧĔЛХЕ

Юмахлама мĕн кирлине
Ют чĕлхе унайлă мар, —
Юп курсан ют чĕлхене
Ют чĕлхе те япăх мар.




**Алфавитри** вăтăр çиччĕмĕш сасă палли — **Я**.

Ăна чăваш çырулăхне 1938 çулта кĕртнĕ, унччен «я» вырăнне «йа» икĕ сасă паллипе усă курнă.

Вăл çапла вуланать: йа.

Вăл çапла çырăнать: *(çырса кăтартмалла)*.

**Я** çак вырăнсенче тĕл пулать:

сăмах пуçламăшĕнче: *явала, Явăш, яка, ял, ялав, ялан, ям, янрав, япала, ярапа, ят, ятлаçу, яштак...*

сăмах варринче: *аяк, аякра, каян, мăян, паян, пăяв, пуян, ряса, тяпка, уяв, фигляр, шлямбур, Шуляков...*

сăмах вĕçĕнче: *аллея, Боря, Валя, Галя, дыня, Еля, Женя, ия, Коля, Ляля, мая, мăя, Надя, Оля, суя, тухья, Юля...*

**Шӳтлевсем:**

Яв-яв-яв, яван пулсан лайăх яв.
Ял-ял-ял, ялав илчĕ пирĕн ял.
Ян-ян-ян, янратать клуба баян.
Яш-яш-яш, яшкана ан яр каяш.

**Ыталăхсем:**

1. Якут сăмаха уйăрса çырсан мĕн пулать? *(Як тата ут пулать.)*

2. Ялав хăçан çын ячĕ пулать? *(Арабла вуласан: Ялав — Валя.)*

3. Ялав хыçĕнче мĕн пур? *(Икĕ тĕрлĕ хурав: 1. — «в» пур, 2. — «лав» пур.)*

**Ятарлăхсем:**

Явăшсем явлăк çыхмаççĕ, пуç тутăрĕ çыхаççĕ.
Явăш тени явăшса пурăнма хушни пулать.
Ялан ятлаçни япăхтарсах ярать.

## ЯКАМАЙ

Йăлхав

Авалхи тĕнчере,
Вăрăмхари вĕтлĕхре,
Пурăннă тет Якамай —
Чарăнам-ха пĕрех май.

Юмах ăсти чарăнать, юмах вĕçленет.

## ЯШУХХА

Сăнав

Яшуххана пăхăр-ха,
Ялан яш пек Яшухха.
Явап туса калăр-ха,
Мĕншĕн яш пек Яшухха?

Ирхи сывлăш пит паха —
Çавна туять Яшухха,
Çавăнпа ун ыйхине
Хĕвел курман ĕмĕрне.

Ĕç этемшĕн пит паха —
Çавна пĕлет Яшухха,
Ĕçлемесĕр ларнине
Ял-йыш курман ĕмĕрне.

Хырлăх упрать сывлăха —
Çавна чухлать Яшухха,
Вăл хырлăхпа туслине
Курма пулать çулленех.

Чăнлăх упрать çынлăха —
Çавна туять Яшухха,
Вăл калаçать йыш çинче
Хуть хăçан та Мир çинчен.

Çавра кулă пит паха —
Çавна ырлать Яшухха,
Вăл кулăшпа кулленех
Сиплет халăх кăмăлне.

# ЯВĂШ ÇЫННИ — НИКОЛАЙ ЫДАРАЙ

Автор — Васильев Николай Васильевич (Николай Ыдарай) 1925 çулхи кăрлачăн (январĕн) 10-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Комсомольски районне кĕрекен Хирти Явăш (Полевые Яуши) ятлă ялта хресчен кил-йышĕнче çуралнă.

Амăшĕ — Леонтьева Фекла (Розова, Цветкова) Кĕрекаç пики пулнă, мăшăрĕ пĕрремĕш тĕнче вăрçинче хыпарсăр çухалсан çамрăк хĕрарăм Хирти Явăша ачипе пырса кĕрет.

Ашшĕ — Леонтьев Василий Леонтьевич вăтам пурăнакан, çăм машини тытакан хресчен пулнă, ывăлĕ çуралсан икĕ çултанах çĕре кĕнĕ, вара амăшĕпе ачин тĕп çуртран тухса килтен киле куçса çÿреме тивет. Колхоза кĕрсен тин вĕсем вырăнлă тата çуртлă пулаççĕ.

Николай Васильевич, ачаранах нуша кукли çисе ÿснĕскер, кĕçĕннисен хÿтлевçи пулма тĕв тăвать. Паянхи кунччченех вăл ачасемшĕн, çамрăксемшĕн вăй хурса ĕçлет.

Пирвайхи сăвви ун 1941 çулхи ака уйăхĕнче «Сунтал» журналăн (халĕ вăл «Ялав» ятпа тухать) 4-мĕш номерĕнче кун çути курнă, сăвăласа çырнă юптару ячĕ «Çăмламас упа» («Мохнатый медведь»).

Çав çулах çамрăк авторăн иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланнипе вĕренес ĕмĕтне пăрахса колхозра учетчик пулса ĕçлеме тивет. Вăтам шкулсенче укçалла вĕренмелле пулин те пулас писатель Аслă Чурачăкри вăтам шкула вĕренме кĕрет, анчах та вĕренсе пĕтерейместь, 1943 çулхи нарс уйăхĕнче вăрçă çулĕ çине тăрать. Вăрçă хыççăн детдом воспитателĕ, клуб пуçлăхĕ, райсобес инспекторĕ тата учитель пулса ĕçлет, каярах комсомол путевкипе Хусана вĕренме каять, çав çулсенче литература ĕçне иккĕмĕш хут пуçăнать.

Хаçат-журналсенче кăна пичетленни çырлахтараймасть Николай Васильевича, вăл кĕнекесем çапса кăларас енне туртăнать. Пĕрремĕш кĕнеки 1958 çулта Шупашкарта пичетленсе тухать. Унтанпа автор çирĕме яхăн кĕнеке парнелеме пултарчĕ вулакансене. Акă вĕсем:

«Юптарусем» («Басни»), 1958.
«Вуласа тух — тупсăмне туп» («Прочитай и отгадай»), 1960.
«Юптарусем» («Басни»), 1960.
«Тусăмсене — ачасене» («Друзьям — малышам»), 1964.
«Чăн сăмахăн суйи çук» («Что правда — то правда»), 1972.
«Авлхи туссем» («Старинные знакомые»), 1974.
«Чĕрĕлĕх» («Живинка»), 1982.
«Ытарлăх» («Скрытки»), 1985.
«Айпике» («Айбиге»), 1987.
«Сăпка юррисем» («Колыбельные песни»), 1989.
«Кĕçĕннисен кĕнеки» («Книга для маленьких»), 1991.
«Ачасен азбуки» («Детская азбука»), 1992.
«Савăк вăхăт» («Беззаботные годы»), 1993.
«Кайăксем» («Птицы»), 1996.
«Азбуки — ăс пухи» («Азбука — начало знаний»), 1997.
«Чĕр чунсем» («Животные»), 1998.
«Алфавит — асăма вит», 1998.

# ТУПМАЛИ

Алфавит тата унпа усӑ курасси . . . . . . . . . . . . . 3

**Сасӑ паллисем:**

А . . . . . . . . . . . . 6
Ӑ . . . . . . . . . . . . 18
Б . . . . . . . . . . . . 22
В . . . . . . . . . . . . 24
Г . . . . . . . . . . . . 28
Д . . . . . . . . . . . . 31
Е . . . . . . . . . . . . 34
Ё . . . . . . . . . . . . 36
Ӗ . . . . . . . . . . . . 38
Ж . . . . . . . . . . . . 41
З . . . . . . . . . . . . 43
И . . . . . . . . . . . . 48
Й . . . . . . . . . . . . 51
К . . . . . . . . . . . . 53
Л . . . . . . . . . . . . 63
М . . . . . . . . . . . . 65
Н . . . . . . . . . . . . 70
О . . . . . . . . . . . . 72
П . . . . . . . . . . . . 74
Р . . . . . . . . . . . . 82
С . . . . . . . . . . . . 85
Ç . . . . . . . . . . . . 90
Т . . . . . . . . . . . . 96
У . . . . . . . . . . . . 108
Ӳ . . . . . . . . . . . . 111
Ф . . . . . . . . . . . . 113
Х . . . . . . . . . . . . 115
Ц . . . . . . . . . . . . 118
Ч . . . . . . . . . . . . 120
Ш . . . . . . . . . . . . 128
Щ . . . . . . . . . . . . 133
Ъ . . . . . . . . . . . . 135
Ы . . . . . . . . . . . . 137
Ь . . . . . . . . . . . . 143
Э . . . . . . . . . . . . 145
Ю . . . . . . . . . . . . 151
Я . . . . . . . . . . . . 156

Явӑш çынни — Николай Ыдарай . . . . . . . . . 158

*Для старшего*
*школьного возраста*

**Николай Ыдарай**
**(Николай Васильевич Васильев)**

# АЛФАВИТ — АСĂМА ВИТ
# АЛФАВИТ — ЗАБАВНЫЙ ВИД

**Стихи, поговорки, рассказы, загадки, сказки**

На чувашском языке

Иллюстрации выполнены
по эскизам автора

Редакторы
*Н.К.Кушманов и П.Е. Димитриев*
Художественный редактор *Г.А.Игнатьев*
Технический редактор *Л.Н.Кондрашкина*
Корректор *Н.П.Печникова*
Компьютерная верстка *М.В.Филипповой*
Компьютерный набор *З.Н.Ивановой*

ИБ 3055
ОКДП 2211202

Сдано в набор 24.06.98. Подписано к печати 04.12.98. Формат 70x108 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л.14,0. Усл. кр.-отт. 60,2. Учетно-изд. л. 10,1. Тираж 2000. Заказ № К-1453. Изд. №33. Цена «С» 35. Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Отпечатано в типографии издательства «Чувашия».
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

25=52

КĔНЕКЕ СПОНСОРĔ —
Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕ



Администраци пуçлăхĕ —
Иванов Николай Иванович

